С С(4Ч8)
Т 33

**Иван Тенюшев**

Ч-36710

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК



Национальная библиотека ЧР
4-036710

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

**Иван Тенюшев**

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК

***"Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романăн иккĕмĕш кĕнекинчен***

**Шупашкар 2000**

к 84.09(=Чув)6-999

ББК 84 Чув 7-4
Т 33

**Тенюшев И.Я.**
Т 33 Юратусăр телей çук. Шупашкар, 2000. - 76 с.

Чăваш кĕнеке издательстви çак ятпа 1994 çулта И.Я.Тенюшевăн романне пичетлесе кăларчĕ. Унăн пысăк мар тиражĕ кĕске вăхăтра сутăнса пĕтрĕ. Халĕ автор романăн иккĕмĕш кĕнекине пичете хатĕрлет. Унта штрафниксен батальонĕн Тăван çĕршыв аслă вăрçинчи çул-йĕрне çутатать. Ку кĕнеке те малтанхи пекех кăсăкланса вуламалла пулассăн туйăнать. Сире унăн виçĕ сыпăкне сĕнетпĕр.

13 СЕН 2017

4-36410

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

© **Тенюшев И.Я., 2000**

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК

## (“Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç” романăн иккĕмĕш кĕнекинчен)

### *1. Вăрçăпа хуйхă - çывăх кўршĕсем*

Легкоступов урине Дмитров хулинчи эвакогоспитальте ампутаци турĕç. Касса татмасан пысăкрах инкек кĕтетчĕ - ури хуралса çĕрме тытăннăччĕ, урăхла каласан, гангрена тапраннăччĕ. Халĕ акă тăрса ларакан, палата тăрăх çўрекен пулчĕ.

- Гриша, кала мана тўррипе, - шўтлерехчĕн ыйтрĕ унран юнашар койка çинче сипленекен Сергей Сунцов сержант, - эсĕ кама та пулин чун-чĕререн юратса курнă-и?

Сержант еннелле пуçне пăрасса пăрчĕ Легкоступов, анчах тăруках нимĕн те калаймарĕ, шухăша кайса куçне кăна мăчлаттарчĕ.

- Ийя, юратнă. Темиçе хут та... - пулчĕ хурав пĕр-ик минутран.

- Темиçе хутчен пулсан, пĕрре те чăнласах юратман... - ахăлтатсах кулса ячĕ сержант.

Аманнă çар çыннисене шăпа Мускав облаçĕнчи Дмитров хулине илсе килнĕ. Мĕнлерех хула ку - Легкоступов лайăххăн пушкараймасть. Вăн Сунцовăн ĕç-пуç пачах урăхла. Гипсланă алли таçта çитсе килме те чăрмантармасть. Хăрах урапа вара пит аякках сикеймĕн. Сунцов каласа панă тăрăх, Дмитров - пысăках мар авалхи хула. Унта Успени соборĕ, Бориспа Глеб мăнастирĕ пур. Вунпилĕк метр çўллĕш хула ту тата ун тавра алтса çавăрнă ур сыхланса юлнă. Мускав-Атăл канал хĕрринчи çак хулан пристанĕ самаях пысăк.

Çук, тухса çўреймест хулана Легкоступов, сержант ка-

ласа кăтартнипех çырлахма тивет. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç тенĕ пек, салтак сержанта виççĕмĕш взвод, унăн паттăр командирĕ Пожеданов чăваш çинчен тем те, тем те ăшшăн каласа кăтартать. Сержант салтака тутине пăрарах итлет. Ĕненмелле-ши е ĕненмелле мар-ши тесе шутлать, ахăр. Салтак çакна асăрхаманçи тăвать.

Легкоступов госпиталь коридорĕ тăрăх икĕ костыльпе çăмăлраххăн çӳреме хăнăхрĕ. Халĕ ав хăйне юравлă йывăç протез хатĕрлесе парасса кĕтет. Пысăк мар мастерскойне унашкал заказсем пайтах параççĕ пулмалла та, клиентсене вăрах кĕтме тивет.

Фронтра, малти линире, салтакăн пушă вăхăт тĕлĕрсе вăй илмелĕх кăна. Госпитальте сипленекен çар çынни вара ку енĕпе самаях пуян. Сунцов вăн пĕр кĕнеке вуласа пĕтерет те тепĕрне тытать. Пĕр çĕре кайса килет те тепĕр вырăна çул тытать. Çӳлти пуçлăхсем алă пусса, пичет хурса çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх, сипленекенсене - госпитальти пек каласан, ранбольнойсене - хула тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреме юрамасть. Вĕсенчен ытларахăшĕ шавлă урамсене мар, хула тулашĕнчи ращана çул тытаççĕ те, госпиталь картишĕнчен чылай аякка тухса çӳрекенсем çине пуçлăхсем алă кăна сулчĕç: çӳреччĕрех - ращари уçă сывлăш темле эмелрен те пахарах. Кунсăр пуçне, çӳрени алă усса, ура хуçса ларни мар. Кирек мĕнле куçăм та - пурнăç хускалăвĕ-çке-ха. Куçăм чĕрĕлĕхĕн чи витĕмлĕ палли тесе ахаль каламан ĕнтĕ. Пурнăç унпа тытăнса тăрать. Чунăн хавалне те вăл хускатать.

...Дмитров хулинчи госпитальтен кăларсан, Григорий Легкостунов пĕр палатăра сипленнĕ юлташĕсемпе сывпуллашрĕ те тăван ялне - Владимир облаçĕнчи Çирĕклĕхе (Ольховкăна) мар, Атăл тăрăхĕнчи Юманайне (Дубровкăна) çул тытрĕ. Ăристансен взвочĕ полк валли утă çулнă чухне çак ялта тăнăччĕ. Тĕрĕс-тĕкел алă-ураллă салтак унта Лукерья Таракановăпа çывăхланнăччĕ. Тен, кăмăла килекен çак хĕрарăм хăрах урапа юлнăскере те тиркемĕ. Çапла, Григорий ытам тулли кăпăшка Лукерья патне васкарĕ.

Лукерйăн карниз çинчи киккирик автанлă çурчĕ хăй вы-

рăнĕнче чиперех ларать. Пӳртум пахчин карти, Легкоступов хыр хăмаран ăсталани, çирĕп-ха. Шел, сăрлама ĕлкĕреймерĕ ун чухне. Хапха юпи самаях чалăшнă, крыльца алăкĕ хирĕнсе уçăлакан пулса кайнă. Арçын алли тĕкĕнменрен ĕнтĕ. Ку çуртра Легкоступов пĕр уйăх ытла пурăннă, Лукерйăн упăшки вырăннех пулнă. Кунта хăйне халĕ те тарават йышăнасса шанса килчĕ. Çурт хуçи вара ăна тĕлĕнереххĕн кĕтсе илчĕ.

- Эпĕ госпитальтен тӳрех Юманайне... сан патна килтĕм. Кала, Луша, тӳррипе: тĕрĕс турăм-ши? - тӳсĕмсĕррĕн ыйтрĕ Григорий.

Лукерья салтак çине çаплах тĕлĕнсе пăхрĕ-ха. Григорий сăрă шинельпе, ăна пилĕк тĕлĕнчен брезент пиçиххипе туртса çыхнă. Симĕс шăлаварĕн пĕр пĕççине салтак ботинки çине усса янă, тепĕр пĕççин вĕçне тавăрса хунă - протезĕ уринчен кĕскерех иккен. Салтак пĕвĕ-кĕлетки килĕшмерĕ пулас кил хуçине, пит-куçне йĕрĕнчĕклĕн пĕркелентерсе илчĕ. Килнĕ çынна темшĕн ăшă сăмах калама васкамарĕ, тĕпеле иртсе ларма та сĕнмерĕ. Чĕлхи çыхланса ларчĕ темелле.

Вăрăм çул килсе ĕшеннĕ салтак, кил хуçи сĕнессе кĕтсе илеймесĕрех, алăк патĕнчи урлă сак çине вырнаçса ларчĕ, шинельне йӳле ячĕ те пĕр курка шыв пама ыйтрĕ. Шыв ĕçнĕ чухне курка тытнă алли сивчир ернĕн тăр та тăр чĕтрерĕ. Пăлханмаллипех пăлханнăран, ахăр. Пытармасăр каласан, атакăна каяс умĕн те вăл çакнашкал пăлханман. Кунта ав, хăй кăмăлланă хĕрарăм умĕнче, чĕтрене ерчĕ, тарласа чăм шыва ӳкрĕ. Пăртакран хăйне алла илчĕ-илчех, лăпланчĕ, лăпкăн каласма пуçларĕ.

- Ман ыйтăва момент татса пама май килмест пулĕ çав. Çапах юнашар ларăр-ха, Лукерья Порфирьевна, каламалли сăмахсем пур...

Туртăнкаласа тăнă хыççăн хĕрарăм ирĕксĕртереххĕн арçын çумне пырса ларчĕ.

- Ним калама та пĕлместĕп. Çырăвусенче уруна татни çинчен пĕр сăмах та шарламанччĕ те... - куçне тартса аранах сăмах хушрĕ хайхи хĕрарăм.

- Хăрах ури çуккишĕнех салтака саççим ан тирке-ха. Эпĕ хуçалăхри кирек мĕнле ĕçе те тума пултаратăп. Килĕмĕрте тĕтĕм сÿнме памăпăр.

Григорий савнă хĕрарăмăн аллине асăрхануллăн тытрĕ, ăна çепĕççĕн сăтăркаларĕ. Унăн алли ÿчĕ хĕп-хĕрлĕ, шăрт-лă-вĕчĕрхенÿллĕ хĕрарăмăнни пек. Çакна Григорий халиччен епле асăрхаман-ха... Пултăрах, ку нимех те мар.

- Луша, кала-ха тархасшăн, сан шутпа епле: юрату чăнчăнах пур-ши çут тĕнчере е ăна пĕри-пĕри ерçÿллĕ вăхăтра ытахальтен шухăшласа кăларнă-ши?

- Юрату - çÿллĕ ту. Ун çине хăрах урапа хăпараймăн... - йĕрĕнчĕклĕн кулançи турĕ Лукерья.

- Икĕ çул каялла иксĕмĕр ăшшăн-ăшшăн калаçни, хăв Мăк сăртне запас полка пырса çÿрени ман чуна кĕрсе юлнă. Сассу çав тери кăмăллăччĕ. Эсĕ балалайка каланине итлесе тăранаймастăм. Манăн çак туйăма халĕ те çухатас килмест. Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ чухне сана та асрах тытнă пулĕ...

Ку сăмахсене илтсен, Лукерья нимĕн те шарламарĕ, хулăн çивĕтлĕ пуçне кăна аялала пĕкрĕ. Григорий хăй килĕштернĕ хĕрарăма куçран тилмĕрсе пăхрĕ, ун куçĕнче шанчăк çути палăрасса кĕтрĕ.

- Ман шутпа, юратура чи хакли - ăна упраса хăварни. Ну, пирĕн юрату пулман тейĕпĕр. Килĕштерÿ те пулин пулнах. Иксĕмĕр шăкăл-шăкăл пурăннине мантăн-им? Халĕ пырса та ан перĕн - тиркемеллипех тиркетĕн. Ма ун пек хăтланатăн? - тÿсеймерĕ ыйтмасăр Григорий. Ыйтасса ыйтрĕ те - ÿкĕнмелле пулса тухрĕ. Эй, кăшкăрашма та çухăрашма пуçларĕ мăнтарăн хĕрарăм, тем те пĕр каласа пĕтерчĕ. Юрать-ха салтак бомбăсем ÿкнĕ чухнехи пек ик хăлхине ик алăпа хуплама ăс çитерчĕ.

- Эпĕ нимĕнле юратăва та ĕненместĕп, - кăштахран сиввĕн калаçăва малалла тăсрĕ Лукерья. - Шăпана ĕненетĕп вăт. Санпа ĕмĕр пурăнма пÿрмен мана. Пÿрнĕ пулсан урасăр юлмастăнах!

- Ик çул каялла пач юратмасăрах пĕр-пĕрин çумне кĕрсе выртнă-ши?

- Мĕн тĕлĕнмелле унран? Кĕсрене ăйăр, ăйăра кĕсре кирлĕ пулнă ĕнтĕ. Кулач çукран хăпарту...

Лукерья татăклăн ура çине тăчĕ.

- Эпир пустуй лăркаса ларатпăр. Сенĕкпе çил хăвала-нинчен усси пулас çук. Ман валли пĕри-пĕри ураллиех таврăнĕ-ха. Екатерина йышăнать пулинех. Хăвăр уçса кĕтĕр, хăвăрах хупса хăварăр, - алăк тĕлне кăтартрĕ Лукерья уксах салтака.

Григорий те ура çине тăчĕ. Кил хуçи çине пĕр вăхăт шанк хытса кайса пăхрĕ.

- Хăвалатăн эппин?! - хăйне хăй ĕненмен сасăпа кăшкăрса ячĕ вăл. - Апла-тăк кĕсрене ăйăр кирлĕ пулнă?

Салтак урăх калаçса тăмарĕ, пӳртрен çунса тăран чунпа васкаса тухрĕ.

Ыр шухăшлă çын йăпшăнса çӳремест. Хăй пек ырă шухăшлине тупас ĕмĕтпе Григорий аслă урам тăрăх ялăн тепĕр вĕçнелле Екатерина Петровна патне çул тытрĕ. Унăн тăпăлтăпăл пӳрчĕ питĕрĕнсе тăрать. Нивушлĕ килте çук? Пахчаран хĕрарăмăн ятлаçуллă сасси илтĕнчĕ. Григорий пӳрт çумĕпе пахчаналла уксахласа утрĕ. Унта хĕрарăм-сухаçă унталла-кунталла туртăнма пăхакан хăлăхсăр вăкăра ятлать иккен. Сап-сарă сăнлă ку хĕрарăм никам та мар, Екатерина пулчĕ. Пахча вĕçне тухсанах сухаçă вăкăра чарса тăратрĕ.

- Эккей! Кама куратăп! - тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ вăл. - Лукерья Порфирьевна курман чухне ыталам та чуп тăвам! - ыткăнчĕ хĕрарăм хăй кăмăллакан çын еннелле.

- Лукерья Порфирьевнăпа ман хушăран хура кушак каçса кайрĕ. Ампă, паянтан унпа çыхăну татăлчĕ.

- Епле апла?

- Мĕн епли... Урасăра йышăнмасть тунката хĕрарăм. Лукерья маншăн ĕнерхи кун, пĕлтĕрхи юр пулса тăчĕ.

- Вăн епле! - тĕлĕннипе çăварне курак вĕçсе кĕмеллех карчĕ Екатерина. - Вăт сана юрату! Вăт сана тĕнкĕл-тĕнкĕл балалайка! Унталла та сулăнкă, кунталла та тайлăк. Ăçталла çул тытмаллине пĕр турă кăна пĕлет. Çынна тăруках ăнланма йывăр çав...

- Çын чунне пĕлесси мăйăр катса шĕкĕлчесси мар, - килĕшрĕ унпа Григорий.

Хăрахураллă салтакпа чипер хĕрарăм пахчаран пӳрте

кĕчĕç. Екатерина сĕтел çине çĕрулми кукли, кăкшăмпа квас лартрĕ. Николай Пожедановпа унăн взвочĕ çинчен тĕплĕн ыйта-ыйта пĕлчĕ.

- Ялта çакăн пек хыпар çӳрет: лешĕнпе, Кураков баянистпа, пирĕн Маргарита госпитальте тĕл пулнă теççĕ. Чăнахах-ши?

Григорий çакна çирĕплетнине илтсен, хĕрарăм кусĕ кăмăллăн йăлкăшса илчĕ. "Вăт ăçта телей!" - хушса хучĕ вăл.

Иккĕшĕ сĕтел хушшине вырнаçса ларсан, тунсăхлăн пуплесси малалла тăсăлчĕ.

- Кала тӳррипе, Гриша, эсĕ çирĕм тăххăра çитсе, миçе хĕрарăм юратса куртăн ĕнтĕ? Теçеткене çитермерĕн-и?

- Катя, эс ан кул-ха манран. Сана пĕрре курсах килĕштернĕччĕ, анчах тĕрĕс çултан Лукерья пуçтахланни пăрса ячĕ...

- Пытармастăп, "Туслăх оркестрĕ" сцена çине тухсан, никам çине те мар, сан çине куç илмесĕр пăхаттăм. Ку çуртра çаплах аннепе иксĕмĕр çеç пурăнатпăр. Хама пăхма пĕр ывăл та пулин çуратмалла та, пĕр-пĕр салтак аманса таврăнасса кĕтетĕп.

- Çав салтак эпĕ пулам-и? - ыйтуллăн пăхса илет Григорий тăпăл-тăпăл хĕрарăм çине. Ыйту çине тӳрем хурав пама васкамасть Екатерина.

- Çыннăн турă пӳрни пĕрре çеç пулать. Çавă çеç чăн-чăн телей кӳме пултарать, - сăмаха сĕтĕререх, лăпкăн калать шухăшне Екатерина. Хăй Григорий çине тĕсесе пăхать, хăнана çĕрулми кукли тутанма сĕнет. - Чунăм таса манăн, манпа пĕрлешекен те таса чунлă пултăрччĕ.

- Яснă, таса чун çумĕнче теприн те таса пулмалла ĕнтĕ. Анчах уçăмлă каламарăн-ха: сан телейне таврăннă салтак эпĕ пулаймăп-и? - тепре тархасласах ыйтрĕ Григорий.

- Мĕн тархасласа тăмалли... Айта пахча сухалама. Унта çĕрулми лартăпăр. Çурт-йĕре юсама тытăнăпăр.

Ырă сăмах калакан хĕрарăмăн çăл пек тарăн куçĕнчен Григорий тинкерсе пăхрĕ, тăруках ним те каламарĕ. Мĕнех, пахча сухалама та, çĕрулми лартма та хатĕр вăл. Çакăн хыççăн Екатеринăпа пĕрле тăван ялне Çирĕклĕхе каясчĕ. Унăн та çурчĕ юхăнса ларать. Тăван ял пур чухне мĕншĕн ютра

пурӑнас-ха! Ҫуралса ӳснӗ ял чуна ҫывӑх, урӑххипе ылмаштармалла мар хаклӑ. Асаттесем лартса хӑварнӑ ҫирӗксем мӗне тӑраҫҫӗ! Аттепе анне вил тӑприсем те кунтах.

- Екатерина Петровна, каҫарӑр та, тӳрех калам: эпӗ качча тухаймастӑпах, авланма шутлатӑп. Ҫавӑнпа Юманайӗнчен Ҫирӗклӗхе куҫса кайӑпӑр...

Салтак капла каласса кӗтменччӗ Екатерина. Вӑл фронтра ӑна-кӑна сахал мар курнӑ ӗнтӗ, пурпӗр пуҫпа шутлама пӗлмест. Григорий сӗннӗ пек качча тухса урӑх ҫӗре куҫса кайсан, тӑван аннене кампа хӑвармалла? Ватӑлса ҫитрӗ, пӗччен пурӑнаяс ҫуках, ҫапах тӑван ялтан хӑпса тухма ниепле те килӗшмӗ. Чӑнласах мӑшӑрланма, ӗмӗр тӑршшӗпех пурӑнма шутласан, Гришӑна Ҫирӗклӗх ҫинчен манма тивет. Пӗринчен уйрӑлмасӑр теприпе пӗрлешме ҫук.

Малашнехи калаҫу пӗр-пӗрне хӑй ячӗпе те ашшӗ ячӗпе хисеплесе каласси ҫине куҫрӗ.

- Хӑвӑрах ӑнланатӑр, Григорий Михайлович, этем пурнӑҫӗ иккӗ килмест. Ӑна кирлӗ пек пурӑнса ирттересчӗ: пӗр-пӗрне итлесе те килӗштерсе, юратса та савса. Пӗрне те япӑх ан пултӑр, теприн кӑмӑлне те хуҫас марччӗ. Тӗслӗхрен, эсӗ Ҫирӗклӗх ҫине ал сулатӑн, ун вырӑнне шанчӑклӑ мӑшӑр туянатӑн...

Калаҫу вӑраха тӑсӑлчӗ. Григорий пӗрмай махорка мӑкӑрлантарма пуҫларӗ.

- Ку ыйтӑва момент татса пама май килмест пулӗ ҫав, - ҫине-ҫинех ассӑн сывларӗ вӑл. Арҫынпа хӗрарӑм шухӑшӗ-кӑмӑлӗ ал тупанӗ ҫинчи пекех уҫӑмлӑ. Вӑртӑнни-хӗрттӗнни ним те ҫук. Ҫавӑнпах-ши пӗр чӗлхе ниепле тупаймаҫҫӗ. Аптриш пӗр-пӗрне ҫаплалла савакан чунсемпе. Пуплесен пуплесен ик енӗ те шарт та март пулса тӑчӗҫ.

- Тӑван ялна кайса кур та каялла кил. Паллах, чӑн-чӑн юрату шыратӑн пулсан... - ҫапла пулчӗ Екатеринӑн татӑклӑ сӑмахӗ.

Кӗтмен ҫӗртен тӗл пулчӗҫ - вӑраха тӑсмасӑр уйрӑлса кайрӗҫ. Вӗсен тӗлпулӑвӗ нихӑшне те питех хӗпӗртеттермерӗ, уйрӑлӑвӗ те чун ыратмаллах кулянтармарӗ. Анчах малтанлӑха ҫеҫ. Кӗҫех Юманай пысӑк хуйхӑ пулса тӑчӗ.

## 2. *“Никама юрăхсăр çын пурăнни çут тĕнчене сая яни кăна...”*

Легкоступов аллинчи сим пыл алтăрне тикĕт тумламĕ тăтăшах лекет те унта мĕн пуррине пĕтĕмпех юрăхсăра кăларать. Халь-халь пурнăçа кĕмелли плансем арканса каяççĕ. Юманайĕнче те çаплах пулса тухрĕ. Унăн алли-ури тĕрĕс-тĕкел чухне, саркаланса утă çулнă кунсенче, Григорие япшар чĕлхеллĕ Лукерья хăйне çирĕп тытакан Екатеринăран вăйпах туртса илчĕ, пĕр ăна çеç юратма, куç шăрçине упранă пек упрама пулчĕ. Çав лăстăрти хĕрарăм арçына пылак сăмахсемпе тата балалайкăна ăста тĕнкĕлтеттернипе илĕртрĕ пулмалла. Пăхăсăн, мăйăрăн тĕшши çĕрĕк иккен, урасăр салтака хăй яхăнне те ямарĕ тăмпай хĕрарăм.

Пĕр те пĕр шутласан, ниме юрăхсăра хучĕ Екатерина та Григорие. Унпа пĕрле Çирĕклĕхре пурăнма килĕшмерĕ. Эппин вăл та урасăр салтакпа мăшăрланассинчен пăрăнмалли сăлтав тупрĕ. Чĕрине пăралакан çакнашкал шухăш патне пырса тухрĕ Григорий. Эппин хĕрарăмсем пăрахăçлакан арçын пулса тăчĕ. Кĕскен каласан, юрăхсăр çын. Çитменнине тата вăл хăрах урасăр çеç мар, пĕрмай хăйăлтатсах ӳсĕрет. Госпитальти паха апат та сăн кĕртеймен ăна, пичĕ питĕ типшĕм, янах шăммисем мăкăрăлса тăраççĕ.

Инвалид пуçне пĕр шухăш минĕретет: “Ну, ăçта кайса мĕн тăвас-ха ман тата?” Никампа калаçса чунне пусарма çук. Григорий чăнкă çыран хĕррине çитсе тăнă пек, умра та, хыçра та çăлăнăç çук пек туять. Çапах чунне хытарса тăван ялне таврăнма шут тытать.

Хăрах урапа çул çӳресси ансат мар иккен. Григорие Юманайĕнчен Горький хулине çитме ытла та терт пулчĕ. Вăрман урлă çуран утма тиврĕ. Уксахласа та костыль çине тĕреленсе пайтах тапаçланчĕ. Юрать-ха вăрмантан тухсан пĕр старик тиевлĕ лав çине лартрĕ. Горькинчен Владимир хулине пуйăс хăвăрт илсе çитерчĕ. Çуран лакăштатнă чухне те, пуйăспа пыруçăн та пуçне пĕр шухăш ыраттарчĕ: пăрахăçа тухнă çын çут тĕнчере пурăнни никама та ним тума та кирлĕ мар. Йывăр шухăш тăшманпа паттăррăн çапăçнă салтака та пуç устарчĕ. Кăмăлĕпе вăл айванланчĕ, ăс-хакăлĕпе мĕскĕнленчĕ.



- Ампă, çитет пурăнса... Пăрахăçа тухнăскер перĕнем те вилем! - сасăпах каласа ячĕ Григорий пуйăс çинчен ансан. Вăл çунса тăран чĕрине çул тăршшĕпех лăплантарма тăрăшрĕ. Тиркекене тирĕк тĕпĕ, иккĕленекене çунăк икерчĕ... Çапла каласа пуçĕнчен кăларса пăрахасшăн пулчĕ Юманай хĕрарăмĕсене. Анчах пĕр тĕвĕленнĕ шухăш тепĕртакранах малтанхи йĕр çине таврăнать: пăрахăçларĕç! пăрахăçларĕç!

Юманайĕнчи икĕ тĕлпулу çул тăршшĕпех салтак пуçĕнчен тухмарĕ. Тĕрĕс турĕ-ши вăл Екатеринăпа пĕрле унăн килĕнче пурăнма килĕшмесĕр? Тĕрĕсех пулĕ çав: тăван çĕр яланах чуна çывăх, кирек хăçан та ырă туйăм, хавас кăмăл çуратать. Апла пулсан Екатерина фронтовик умне капитуляци тумалли йывăр услови кăларса тăратрĕ. Йывăр çеç мар, юрăхсăр услови. Хăйĕн салтакĕ хитрешĕн хĕрарăма сăмахсăрах парăннине пĕлсен, взвод командирĕ Пожеданов мĕн калĕ!

Салтак пуçĕнче шухăш хăйĕн йĕрĕпе малаллах аталанать. Çапла, парăнтарайми чăнкă çыран тухса тăчĕ Легкоступов умне. Çак çыран паттăр юлташĕсемпе пĕрле çĕнсе илнĕ Чĕкеç тӳпемĕнчен те чăнкăрах. Тӳпеме тăшманран туртса илме пулать, хăй килĕшмесен чипер хĕрарăмпа ниепле те мăшăрланаймастăн. Çакă пулать те ĕнтĕ авланма шутлаканăн ĕмĕтне татни, ăна пăрахăçа кăларни. Хăрах уреллă салтак юбкăллисене кăсăклантармасть-мĕн. Акă ăçта иккен вăрттăнлăх, акă ăçта тĕп сăлтав.

Григорийĕн пĕтĕм çан-çурăмĕ сасартăк сиввĕн сăрăлтатса илчĕ, пачах кĕтмен çĕртен чĕри йĕппе чикнĕн ыратса кайрĕ. “Юратнă хĕрарăмсем тăнчах пăрахăçларĕç пулсан, тĕнче çутине сая ярса пурăнни кăлăхах, - тухма пĕлмерĕ Легкоступов пуçĕнчен сирсе сирĕлми шухăш. - Пулăçсен эртелĕ саланса кайнă тесе пĕлтернĕччĕ ялтан. Эппин ман валли юравлă ĕç те çук. Ампă, çут тĕнчепе сывпуллашмаллах. Перĕнсе вилес те, ĕçĕ те пĕтрĕ. Пăрахăç этеме халь тин нимĕн те çăлаймасть. Урăхла май çук”.

...Хула тулашĕнчи пасар самаях пысăк. Шавлаççĕ ăпăртапăр сутакан ретсем, ик вĕллере - апат-çимĕç сутакан ик павильонта - халăх пыл хурчĕ пек сĕрлет, махоркăпа пирус сутакан ачасем пĕр вырăнта тăма чăтăм çитерейместĕр йăсласа çӳреççĕ. Пасар пасарах, сĕрлет, кĕрлет. Хĕвĕшеççĕ та-

вар туянакансем, сутăçсем, улшуçсем. Унталла та кунталла кумаççĕ. Вăрăм сĕтелсем, тирпейлĕ сентресем çинче темле тавар та пур: хуппипе пĕçернĕ çĕрулмирен пуçласа аш кукли таран, çиппи те, йĕппи те, пуртă та, лум та... Анчах Легкоступова кирлĕ тавар тупăнмасть те тупăнмасть.

## *3. Пурнăç суккăр хĕршĕн те хаклă*

Вăрçăчченхи пасарта тем тĕрлĕ музыка инструменчĕ сассине илтме пулатчĕ: халăх ансамблĕ йĕркеленĕ Н.В.Кондратьев шăхличĕсенчен пуçласа хальхи янкăс саслă баян таранах. Вăрçă вăхăтĕнчи пасарта юрă-кĕвĕ юравлă мар, ахăр. Анчах тăхта-ха: ку тата мĕн? Легкоступов хăлхине темле илемлĕ кĕвĕ илтĕнчĕ.

Пурнăçран уйрăлмалли хатĕр шыраканăн çулне çынсен ушкăнĕ картласа хучĕ те, чарăнмах тиврĕ. Çав ушкăн варринче пысăк мар ещĕк çинче темле çамрăк хĕр купăс каласа ларать. Купăс чĕлĕхĕсем "Маньчжури сопкисем çинче" вальса хуллен те хурлăхлăн, чĕрене витмелле шăрантараççĕ. Купăспа пĕрле вăйçă хăй те шухăшлăн, сассине хăпартмасăр юрлать. Кашни сыпăк хыççăнах кăштăркка аллине чечексемпе тулли карçинкка еннелле тăсать. Кам купăсçăна хисеплет е чечексене кăмăллать, çавсене фиалкăсемпе розăсем туянма сĕнет. Карçинккаран çакнă кружкăна пĕри те тепри шăнкăрти кĕмĕл е хут укçа ярса парать - чечекшĕн тӳлесе, музыкăшăн тав туса, хитре хĕре хĕрхенсе. Вăл суккăр-çке-ха. Пĕр çӳллĕ арçын, шупкаланнă гимнастерка тата хăшкăлса якалнă галифе тăхăннăскер, йăлтăркка роза туянчĕ те хĕр кофтин кăкăрĕ тĕлĕнчи кĕсйине асăрхануллăн вырнаçтарчĕ.

- Эсĕ, хĕрĕм, питĕ лайăх юрлатăн, сăну вара хăв сутакан чечек пекех хитре. Ку розăна эсĕ чăннипех те тивĕçлĕ! - шантарчĕ çав арçын.

Хĕр-купăсçă хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ, питне çеç мар, янахне те, мăйне те ирхи таса шуçăмăн ачаш тĕсĕ çапрĕ. Чиперкке хĕрĕн чĕри кăрт турĕ, вăл кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ, унтан хăвăрт тăчĕ те ăшшăн тав турĕ. "Турă сывлăх патăр сире, ырă çыннăм!" - пăшăлтатрĕ тути. Хĕр алллинчи купăс каллех хӳхĕм кĕвĕ шăрантарма пуçларĕ.

Суккӑр купӑсҫӑран уйӑрӑлсан Легкоступов татах пасар тӑрӑх лакӑштатрӗ: хӗвӗнчен, эппин вӑрттӑн, пистолет сутакана шырарӗ, анчах кӑлӑхах. Хӑрах уралласкере кам пӑшал сӗнтӗр. Салтак ҫаплах пасар тӑрӑх утрӗ, анчах темшӗн-ҫке кунта вӗҫӗ-хӗррисӗр унталла-кунталла кумакан ҫынсене асӑрхами пулчӗ. Куҫӗ умӗнче пӗрмаях купӑсҫӑ-хӗрӗн сӑнӗ мӗкӗлтетет. Вӑт апӑрша! Вӑт мӗскӗн! Курми пулса ларнӑ, пурпӗр пурӑнасшӑн тапаҫланать. Хӑйне валли юравлӑ ӗҫ те тупнӑ. Эппин ӑна выҫӑ ларасси хӑратмасть. Ӑс-хакӑлне те урасӑр тӑрса юлнӑ салтакӑнни пек пӑтрашуллӑ шухӑшсем минӗретмеҫҫӗ, ахӑр.

Легкоступов ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илет те аларан тӗрлӗ тавар сутакансен речӗсем хушшипе малалла лакӑштатать. Хӑй ҫаплах хӗр-купӑсҫӑ пирки шухӑшлать. Темле асамлӑ вӑй ӑна хӗр-купӑсҫӑ патне каялла тавӑрать. Ку таранччен куҫ ҫутине малтан хӗрарӑмӑн ури ҫине ӳкеретчӗ Легкоступов. Ури тӑпӑл-тӑпӑл хӗрарӑма чипер тесе шутлатчӗ. Хальхинче урӑхла пулса тухрӗ: хӗрӗн ҫӳллӗ ҫамки, тӳп-тӳрӗ сӑмси тата пӗчӗккӗ ҫепӗҫ тути ҫине тинкерсе пӑхрӗ. Сӑнӗпе купӑсҫӑ чӑннипех те чипер, анчах мӑшӑр хура куҫӗ пачах хӗм сапмасть. Эппин сӗм суккӑр. Куҫӗ курмасан та хӑй ҫине тӗмсӗлсе пӑхакан пуррине хӗр пурпӗр тӗшмӗртрӗ. Купӑс паха кӗвве сасартӑк татрӗ.

- Туянсамӑр: сулахайра - фиалкӑсем, сылтӑмра - розӑсем...

“Ай, ӑҫта илтнӗ Легкоступов ку янкӑс сасса? Ара, ку кӳршӗ хӗрӗ Роза-ҫке. Ҫапла. Вӑрҫӑра пуҫ хунӑ Эльвира Кузьминична Львова хӗрӗ,” - тавҫӑрса илчӗ Легкоступов.

- Сывлӑх сунатӑп сана, Розалия Руслановна! - алӑ тӑсса пачӗ хӗре салтак. - Эпӗ сан кӳршӳ Григорий Легкоступов пултӑм-ха.

- Чиперех таврӑнтӑн-и, Гриша пичче? Фронтра ҫапӑҫать тенине илтсеччӗ, - хӗпӗртӳллӗн хуравларӗ хӗр шӑнкӑрав пек сасӑпа.

- Чиперри мӗнӗ, ак хӑрах уралла пулса юлтӑм... - ҫӑварӗнчен пӗр каплам вӗри сывлӑш кӑларса ячӗ Легкоступов.

- Паллах, кансӗр сана хӑрах урапа. Анчах пӗлсем: куҫ курманни те япӑх. Хӑв чӗрӗ юлни теме тӑрать. Тӑхта, парнелем-ха сана чи лайӑх чечек!

Розалия Руслановна урасăр салтака ăшă кăмăлпа чечек парнелерĕ. Хĕрĕн алли кăпăш, вăрăм пӳрнисем ҫепĕҫ. Чечексен шăрши сăмсана ыррăн кăтăклать.

Пайтах вăхăт пуплерĕҫ кӳршĕпе кӳршĕ. Роза ялти хыпарсене тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ. Григорийĕн арăмĕ пулнă Марина пирки сăмах пычĕ малтан. Арсăр тăрса юлсан, ҫав кăтра ҫӳҫлĕ сап-сарă лăстăркка ун-кун шухăшласа пăхмасăрах Макаровпа, пĕр айăпсăр Легкоступова тĕрмене хупма ҫине тăрса тăрăшнă милиционерпа, явăҫса кайрĕ. Иккĕшĕн мăшăрланас ĕмĕт те пулнă, имĕш. Анчах Макаров районти милици пуҫлăхĕ пулса тăнă та ерĕшки патне ҫӳреме пăрахнă. Ҫакă халь-халь саккунлă мăшăр пулса тăрас ĕмĕтлĕ хĕрарăма питĕ тарăхтарнă ĕнтĕ. Унччен те сăмакунпа туслăскер ĕҫке ярăннă. Хĕлле ун виллине лупас хыҫĕнчи юр кĕрчĕ ҫинче тупнă. Григорий пӳрчĕн кантăкĕсем урлă касăк-касăк хăмасем ҫапнă. Маринăна пытарнăранпа унта никам та пурăнмасть. Хăлтăрканă ҫурт хуҫине кĕтет. Ялта арҫын ҫукпа пĕрех. Ватти-вĕтти кăна тăрса юлнă. “Макаровăн броня янтă та, ăна фронта ямаҫҫĕ”, - сассине шăплатрĕ хĕр.

Розалия Руслановна амăшĕ - Эльвира Кузьминична - Вылă тăрăхĕнчи чăваш ялĕнчен Ҫирĕклĕхе куҫса килнĕренпех фельдшерицăра ĕҫлерĕ. Медицина пунктĕнчи ĕҫне вĕҫлесен тӳрех колхоз теплицине каятчĕ вăл. Ку теплицăна кантăк лартса тунă. Унта помидорпа хăяр, ытти ҫимĕҫсем туса илетчĕҫ. Теплицăн пĕр секцине тĕрлĕ йышши чечек илем кӳретчĕ. Пахчаҫимĕҫне колхоз столовăйне парса тăратчĕҫ, сутмалăх та юлатчĕ. Ҫак кăткăс ĕҫе хĕрĕпе ывăлне те хăнăхтарчĕ. Фельдшерица пулнăран Эльвира Кузьминичнăна вăрҫăн малтанхи кунĕсенчех ҫара илчĕҫ те, хĕрĕпе ывăлĕ иккĕшех тăрса юлчĕҫ. Вăхăт нумаях та иртмерĕ - яла хуйхăллă хыпар килсе ҫитрĕ: аманнисене малти линирен илсе тухнă чухне Эльвира Кузьминична Брянск ҫывăхĕнче паттăррăн пуҫ хунă.

Амăшне ҫара илнĕренпех Розăпа Сережа теплицăра иккĕшех кĕрмешрĕҫ. Инкек хыҫҫăн синкек сиксе тухрĕ. Электросетьре замыкани пулнăран теплица ялкăшсах ҫунма тытăнчĕ. Пушар сӳнтернĕ чухне пуҫ тăррине ҫӳлтен кашта йăтăнса ансан, хĕр тăнне тăнчах ҫухатрĕ. Касса янă йывăҫ пек ӳкнĕскере юрать-ха шăллĕ теплицăран сĕтĕрсе тухрĕ. Унсă-

рӑн ҫунса кайма та пултаратчӗ. Ҫавӑнтанпа хӗр суккӑр пулса юлчӗ. Куҫӗ курмасть Розӑн, ӑс-тӑнӗпе вара унччен пекех ӑнкаруллӑ.

- Куҫ курманни пысӑк инкек. Анчах татах та хӑрушӑраххи - куҫпа мар, чунпа суккӑрланни. Тӗпсӗр ҫырма хӗрне ҫитсе тухас марччӗ пирӗн, - аллине чӗри тӗлне тытса ӗненterme тӑрӑшрӗ хӗр Григорие. Анчах салтакӑн тирӗ ытла та хулӑн-и - нимӗн те витерейменрӗ унӑн ӑс-хакӑлне, тем тери ӑслӑ сӑмах та ҫемҫетейменрӗ хуйхӑпа хытса ларнӑ чӗрине. Пурнӑҫа ытла та тӳрккесле йышӑнать ҫав хӑшпӗр арҫын чӗри. Ҫак сӑлтавпа ӗнтӗ хайне мӗн каланине илтмене перет, ырӑ кӑмӑлпа ӑс вӗрентнине лайӑххӑн шухӑшласа пӑхмасӑрах айккинелле сирет. Ҫапах Григорий чечек сутакан хӗр патӗнчен тӑруках пӑрахса каймарӗ. Ҫӳлти Турӑ кӑна пӗлет ӑна кунта мӗн чарса тӑнине.

- Ялта курнӑҫсан татах пуплӗпӗр, - шантарчӗ ӑна Роза.

- Эй, паттӑр салтак! Сана пысӑк телей кӗтет! Пӗр тӳлевсӗр юмӑҫ пӑхам-и? - кӗтмен ҫӗртен сиксе тухрӗ пасар тӑрӑх таҫталла утакан Григорий умне чечеклӗ шаль тутӑр пӗркеннӗ ҫамрӑк цыганка. - Кӑтарт-ха аллуна. Чӑннипех те ӑраскалӑр ҫутӑ кунсем патне илсе пырать. Тимӗр пӑрҫа ан пул, хурсам ывӑҫ тупанӗ ҫине кӗмӗл укҫа. Вара сан шӑпу мана уҫӑмлӑрах курӑнӗ, - сӗнет цыганка. Григорий куланҫи тӑвать.

- Укҫу ҫук пулсан, салтак махоркине турттар пӗрре, - сӑпса пекех ҫыпӑҫать цыганка пӑрӑнса кайма шутлакан салтак ҫумне. Ырханкка хӗр выҫӑ куҫпа тилмӗрсе пӑхнине асӑрхасан, Григорий кӑмӑлӗ сасартӑк ҫемҫелет:

- Акӑ сана махорка - чикаркқӑ чӗрке, акӑ сана хут укҫа - юмӑҫ пӑхса пар!

Цыганкӑн типшӗм пичӗ ҫинче ӑшӑ кулӑ палӑрать, сӑнӗ ҫуталнӑ пек пулать.

- Хӑвӑр мӗн тума палӑртнӑ, ҫавна тӑвӑр. Пӗр утӑм та каялла ан чакӑр, - пӗр такӑнмасӑр юрланӑ пек калама тытӑнать цыганка. - Ал тупанӗ ҫинчи юн тымарӗсем епле вырнаҫни ҫакна кӑтартать: пӗр ӑнӑҫу хыҫҫӑн тепӗрне кӗтсех тӑрӑр. Асӑрханӑр: малтанхи йывӑрлӑхсем тӗп ҫултан пӑрса ан ячӑр.

- Калӑр-ха, тархасшӑн, манӑн ҫемье пур-и е ҫук-и? - пӗлесшӗн пулчӗ Григорий. Салтака хӗр куҫран тӗллесе пӑхрӗ.

- Эсир ăна хăвăрах лайăх пĕлетĕр. Ыйтса чăрманма кирлех те мар. Анчах чăн-чăн юрату тупайман-ха эсир. Юратусăр телей çуках. Ку вара сирĕншĕн каярахпа тупăнать...

"Пĕлсех пакăлтатрĕ-ши е пуçне мĕн пырса кĕрет, çавна каларĕ-ши?" - иккĕленчĕ Григорий, цыганкăран уйрăлсан. "Вăт Илья Лилипутов кунта пулас-тăк, пĕр сăмах та суяс çукчĕ. Çапах цыганка япăххине каламарĕ. Лайăх çынсем çав цыгансем. Алексă Романухин хăех вунă çын тĕшне тăратчĕ. Командира вилĕмрен çăлчĕ - хăй çĕре кĕчĕ".

Пуçне пĕксе пынă май Григорий хăй те асăрхамасла пасар хĕрринех пырса тухнă иккен. Кунта вăкăр кӳлнĕ темиçе лав çинчен çĕрулми сутаççĕ.

- Гриша! Гриша тетĕп! Ăçта хăямата тапăлтатăн? Сана кăшкăрса хăшкăлтие ертĕм...

Кам ку? Кам пултăр - Геннадий Кудряшов. Кăтра çӳçне каллех ӳстерсе янă. Эппин чăн-чăн граждан çынни. Кӳршĕ ялтан Комаровкăран вăл. Унпа фронтра виççĕмĕш взводра тăшмана хирĕç юнашар çапăçнă. Икĕ фронтовик пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç. Ик-виç утăм чакса тăчĕç - пĕр-пĕрин çине сăнавлăн, тунсăхлăн пăхрĕç-пăхрĕç те каллех ыталашрĕç. Ыйтмасăрах курчĕç: пĕрин сылтăм алă çук, теприн урине татнă. Ун пирки пĕр сăмах та шарламарĕç.

- Япăхрах та пулма пултарнă! И хуже могло быть! - вăрăм хăрпăкĕсемпе хупласа хучĕ куçне Геннадий. - Госпитальтен таврăннăранпах конюхра ĕçлетĕп. Утсене мар, вăкăрсем пăхатăп. Ман çул сирĕн ял урлă. Айта лар, килнех кĕртсе хăваратăп.

- Апла-тăк тăхта. Лавçă валли лешне, хĕрĕх градуслине туянар, - килĕшрĕ Григорий.

Çул çинче ытларах Геннадий калаçрĕ. Малти линири, госпитальти пурнăçĕ çинчен тем те, тем те каласа кăтартрĕ. Григорий вара итленĕ-итлемен шухăша путса пычĕ. Шăпа пĕр аллипе вут парсан, тепĕр аллипе шыв курки тытса тăрать теççĕ. Перĕнсе вилме çине тăрсах пистолет шыракан çын шавлă пасарта мĕн курни, Розăпа тата Геннадипе тĕл пулни шăп та лăп çав шыв курки вырăнне пулчĕ. Григорийĕн шухăш йĕрĕсем урăх еннелле пăрăна пусларĕç, апла пулин те чĕри вырăнта мар.

Ч-36710
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Ула çамрăк вăкăр урхамах мар, çапах фронтовиксене яла чиперех илсе çитерчĕ. Ай, тамаша, унăн сăн-сăпачĕ мĕн тери улшăннă. Урамра çул ик айккипе курăк улăхри пекех ашкăрса ÿсет. Урампа пыруçăн Григорий качака та, пăру та, ĕне те курчĕ - вĕсене вĕренпе кăкарнă.

- Ку выльăхсене мĕншĕн кĕтĕве яман-ши? - кăсăкланчĕ Григорий.

- Ялта кĕтÿ кăлармалăх выльăх-чĕрлĕх юлман çав. Пусса çисе пĕтерне... - ăнлантарчĕ Геннадий.

Кивелсе мĕскĕнленнĕ çуртсем урам тăршшĕпех, çĕнни вара курăнмасть. "Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн ял кăна çапла хăрăннă-ши?" - тĕлĕнчĕ Григорий. Питĕрĕнсе тăракан çурта уçса кĕресси фронтовиксене йывăрах пулмарĕ. Пÿрт самаях пысăк, урайĕ сăрăллă, кантăкĕсем çутă, анчах ăшчикĕ пушă. Арăмĕ пулнă Марина сĕтелсĕр пуçне нимĕн те хăварман - сутса ĕçсе янă. Юрать-ха пăлтăрта пушă ещĕксем тупăнчĕç. Фронтовиксен çавсем çине лармалла пулчĕ. Икĕ тус пайтах вăхăт пуплесе ларчĕç. Григорийĕн пусăрăнчăк кăмăлĕ çаплах сĕврĕлмерĕ-ха.

- Турра шĕкĕр, тимĕр авма икĕ вăйлă аллу пур, ман вăн хăрах алă кăна... Эй, мĕн пакăлтатмалли... Пĕлме тивĕç: хуже бывает! Меммеленсе кайнă эсĕ, тăванăм!

Геннадий фронтри тусĕ çине пăхать те ăнланса пĕтереймест. Палламалла мар улшăннă вăл: хулпуççийĕсем усăнса аннă, куçĕнчи чăрсăр хĕлхем сÿннĕ, калаçасса та сÿрĕк калаçать.

- Манăн асаттесемпе асаннесем патне каясси çеç юлнă - автансăр яла... - ассăн сывлать Григорий. Тусĕн çакнашкал шухăшĕсене татăклăн хирĕçленине палăртса, Геннадий аллине лăст сулать, пуçне пăркалать.

- Çук, Гриша, эсĕ фронтра пулман пуль. Тар шăршипе пиçĕхмен-касăлман пулĕ, пуля шăхăрнине те хăнăхман ĕнтĕ. Фронтовик унашкал калас çуках. Пĕлетĕн-и, хуже бывает. Пулкалать вĕт пурнăçра: татах та япăхраххи килсе тухать. Эсĕ вăн Юманайри сараппанлă сĕтĕрĕнчĕкшĕн куççуль юхтаратăн. Прими к сведению: унашкаллисем Çирĕклĕхрех пĕве пĕвелемелĕх пур. Çук-тăк - пирĕн яла Комаровкăна пыр!

## 4. Командиртан ӑслӑ ҫыраймӑн

Этем тени ыррине час манать, япӑххи вара унӑн чунне вӑрах ҫунтарать. Юманайӗнче мӗн курни, мӗн илтни Григорий асӗнчен туха пӗлмерӗ. Чӗри ыратнӑ самантсенче вӑл фронтри тусӗсене аса илчӗ: шухӑшра вӗсемпе канашларӗ. Чӑнах та, ҫакӑн пек йывӑр та кӑткӑс лару-тӑрура мӗн сӗннӗ пулӗччӗҫ-ши вӗсем? Тӗслӗхрен, Иван Иванович Иванов, "кубланӑ Иван". "Григорий Михайлович, никак пӗлме ҫук сана мӗн кирлине,- тетчӗ ӗнтӗ вӑл шухӑшлӑн. - Чипер пурӑнас тесен, ҫемье йӗркеленӗ чухне, паллах, чи малти вырӑнта юрату тӑмалла. Ҫынра сӑн кӑна мар, чун та кирлӗ". Педагог кирек мӗнле ыйтура та педагогах. Вӑл урӑхла калама пултараймастех.

"Эсӗ Юманай Дульсинейипе - самӑркка Лукерйӑпа пурӑнса пӗтерӗн-ши?" - иккӗленетчӗ ӗнтӗ Илья Лилипутов. Унтан ҫапла хушса хуратчӗ: "Турӑ сыхлатӑр унашкал кӗрӗс-мерӗспе ҫыхланасран". Серуш Шакуров чӑвашӑн темле кӑткӑс лару-тӑрура та иккӗленсе тӑрасси ҫук. "Значӑт, теветкелленсе пӑхсам, ӗҫ тухсан - тухать, тухмасан - алӑкне шалтлаттарса хупса хӑвар!" Вӑл ҫакнашкал канаш парасси пачах иккӗленмелле мар.

Вӑт Кураков чӑннипех юратӑва пысӑка хуратчӗ, унӑн пӗлтерӗшне истори тӗслӗхӗсемпе ҫирӗплететчӗ. Ку аспирант пӗлӗвӗсен шайӗпе тепӗр профессортан та irrterет. Уйрӑмах Гомерӑн чаплӑ поэмисем "Илиада" тата "Одиссея" пирки хавхаланса калама тытӑнсан. Авалхи Грецири паттӑрсен сӑнарӗсене куҫ умне чӗрӗ пек кӑларса тӑрататчӗ. Те чӑнах пулнӑ ҫавнашкал паттӑрсем, те пулман. Аспирант каланӑ тӑрӑх, ҫав тери хитре Еленӑшӑн пуҫланнӑ Троя вӑрҫи вунӑ ҫула пынӑ, имӗш. Ун пирки вӑрҫӑра мӗн чухлӗ паттӑр пуҫ хунӑ! Еленӑна ырламастчӗ Виктор, юратӑва упранине мухтатчӗ. "Чӑннипех юратсан - сӑмахна ҫирӗп тыт, пустуй ҫилпе ан вӗҫтер!" - сӗнетчӗ ӗнтӗ Виктор юратура уҫҫи-хуппине тупайман Гришӑна.

Асаилӳсем ӑшне путнӑ фронтовика почтальонка пачах кӗтмен ҫӗртен виҫ кӗтеслӗ ҫыру кӗртсе пачӗ. Мӗн тери пысӑк савӑнӑҫ! Ҫыру виҫҫӗмӗш взвод командирӗ пулнӑ Пожедановран. Акӑ мӗн ҫырать вӑл.

*"Хисеплĕ Григорий Михайлович!*

Сана хĕрӳллĕ салам яратăп. Тӳрех калам: тунсăхланăран çыратăп.

Дмитров хулине сан ятпа кĕске çыру янăччĕ - адресат тухса кайнă пирки çырăва каялла тавăрчĕç. Гангренăран хăтарма уруна ампутаци тунине мана госпитальтен çырса пĕлтерчĕç. Эпĕ тĕшмĕртнĕ тăрăх, халĕ эсĕ, паттăр салтак, тăван ялăнта пулма кирлĕ. Чĕрĕ юлайсан, вăрçă хыççăн сан патна çитсе куратăпах. Хăвăн командирна чыспа кĕтсе илес тесен, халех кăмăлна килекен ĕçе пуçăн - вăрçăчченхи пек пулăçсен эртелĕнче е колхозра.

Осташковри эвакогоспитальте сипленекен Кураковран çыру илтĕм. Вăл унта Юманай хĕрĕсемпе - Маргарита Лепеховăпа тата Лидия Галкинăпа тĕл пулнă иккен. Виктор хăйне çĕнĕ звани панине тата орденпа наградăланине пĕлмест-мĕн. Степан Воробьевпа Митрофан Ястребов таçти госпитальте сывалаççĕ. Çырăвĕсем тăрăх хирти почта номерĕ çеç паллă. Сергей Шакуров чăваш контузи хыççăн килĕнче сипленет. Ытти юлташсенчен хыпар çук-ха.

Тата çакна пĕлтерем. Аттем Сталинград тамăкĕнче йывăр аманнă та - каллех госпитальте. Мирун тете Çурçĕр флотĕнче темле специалист. Люнькка тете, атте пекех, фронтра вăрçă туррине калаçтарать. Халлĕхе тăватсăмăр тə чĕрĕ-ха. Нина Лаврентьевна учительницăран çыру килсех тăрать.

Юлашкинчен çакна калам: сан вырăнта эпĕ ним тăхтаса тăмасăр авланнă пулăттăм. Паллă, сана ăс вĕрентме кирлĕ мар. Хăвах пĕлетĕн: кашни йăлтăрти металл ылтăн мар. Сурăха качакаран уйăракан çын юратуллă-савăшлă пурнăç тума пултаратех. Юратусăр телей çук. Сывлăх та телей сунатăп.

*Чун-чĕререн хисепе*
*хурса Пожеданов".*

Çыру вĕçне командир çапла хушса хунă: "Почеркшăн ан ятла. Планшет çинче чипер çырма чăрмавлăрах çав".

## *5. Хушкана урăххи кӳлме пуçлать*

Çырма çумĕпе çеремлĕх. Çывăхрах тӳп-тӳрĕ ӳссе çĕкленнĕ мăнаçлă хыр. Унпа юнашар кукăр вулăллă хурăн тем сăлтавпа пуçне аялалла пĕкнĕ. Хыр тăрринче вăрт-варт пакша турат çинчен турат çине сикет, çивчĕ шăлĕсемпе йĕкелтен вăррине кăлара-кăлара çиет. Çырма хĕрринелле уксах çын çывăхарнине асăрхасан, тепĕр йывăç çине сикрĕ. Вăт акробат! Ултă-çичĕ метр таранах сикме пултарчĕ. Ку йывăç çинче те чарăнса тăмарĕ - яра пачĕ шыв урлă леш еннелле. Хăй хӳрине çӳлелле тăратнă - ăна йĕпетесшĕн мар, ахăр.

- Пакша темерĕн... Йăви çырма леш енче пулинех, - сасăпах каласа тăрса юлчĕ çырма ку енне Григорий. Вăл васкамасăр курăк çăлса пуçтарчĕ, меллĕн вырнаçса ларчĕ те ăман тирнĕ вăлтине шыва чăмтарчĕ.

Шыв çийĕпе пăс йăсăрланать. Вăрçăччен ку çырмара хăях хушшинче çупах çатăлтататчĕ, шарлакра партас ишетчĕ. Паян вара Григорий вăлтине ырашпăтрисĕр пуçне урăх пулă çакланмарĕ. Те пуллисем питĕ чееленсе çитнĕ, те çыннин пулăç ăсталăхĕ иксĕлнĕ... Пулă хыпман хушăра пулăç тĕлĕрме пуçларĕ. Унăн тĕлĕрĕвне çывăхрах курăка лаша кăмпăртаттарса çини сирсе ячĕ. Григорий лашана пуçĕнчен лăпкаса илчĕ, çилхи çинчи куршанака тасатма пикенчĕ.

- Хушка! Хушка! - кăшкăрса чупса килет ял енчен пĕр каччă. Çамки çинче шурă лаптăк пулнăран çавăн пек ят панă ĕнтĕ лашана. Хашкаса чупса килни Сергей Львов пулчĕ.

- Ай, Гриша тете! Кунта тĕл пултăмăр иккен! Таврăннă ятпа саламлатăп, саламлатăп! - çĕкленнĕ кăмăлпа чăмăртарĕ салтак аллине Сергей. - Эсир правление председатель патне кĕреймĕр-ши? Вăл сире пĕр-ик пăт тырă парса пулăшасшăн.

Сергей Хушкана йĕвен тăхăнтарчĕ, ăна мăйĕнчен аллипе лăпкарĕ.

- Халĕ эпĕ Хушкана кӳлетĕп те пасара аппана илме каятăп. Вăл чечекĕсене кăнтăрла тĕлнех сутса пĕтерекенччĕ. Укçине колхоз правленине паратпăр. Председательпе курнăçма вăхăт тупмаллах сирĕн, - тепре астутарчĕ Сергей.

Колхоз председателĕ - вăйпитти хĕрарăм Агреппина Митрофановна - фронтовика икĕ пăт тулă çăнăхĕ илме хут çырса парсанах çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ:

- Сергей Львова ҫара кайма повестка килнӗ. Ун вырӑнӗнче теплицӑра ӗҫлеме ҫын тем тери кирлӗ. Килӗшмӗр-ши?

Ку хыпара илтсен Григорий пӗр вӑхӑт аптриш пулчӗ. Мӗншӗн ҫакӑн пирки Сергей хӑй пӗр сӑмах та шарламарӗ--ха? Хӑрах ураллӑ салтак, хула пасарӗнче Розалия Руслановнӑпа юнашар ларса, гитара каласа юрлама шутласа хунӑччӗ, капла вара шухӑшне улӑштармалла пулса тухрӗ. Сергее ҫара илни ун кӑмӑлне хуҫрӗ: куҫӗ пач курман Розалия Руслановна пӗчченех тӑрса юлмалла-и? Ӑна кам пулӑшӗ? Хула пасарне кам леҫсе ярӗ? Телейсӗр шӑпаллӑ хӗре тӑр--пӗччен тӑратса хӑварни ниҫта та шӑнӑҫмасть. Ашшӗ - Руслан Львович Львов - тӗрмерен таврӑнайман, амӑшӗ вӑрҫӑра пуҫ хунӑ, халӗ ав пӗртен-пӗр шӑллӗне те салтак тӑвасшӑн. Нивушлӗ ку ҫемье нимӗнле ҫӑмӑллӑха та тивӗҫлӗ мар? Совет влаҫӗ Львовӑн кил-йышне тӗппипех пӗтерсе хурасшӑн-ши?

Григорий тепӗр кунах районти ҫар комиссариатне кайрӗ. Ҫар комиссарӗпе хӑйӗнпе курса калаҫасси ансат пулмарӗ. Халӑха йышӑнмалли кун мар иккен унӑн. Салтак умри чӑрмавсене сире-сире пӑрахма хӑнӑхнӑран кунта та ҫапла тума шутларӗ. Кунсӑр пуҫне, протез ураллӑ салтака дежурнӑй та ҫине тӑрсах чармарӗ.

- Руслан Львов ҫемйин пурнӑҫӗ пӑрӑҫлӑ пулчӗ, халӗ ӑна тӗпсӗр авӑрах чӑмтарасшӑн-им? - чышкине чӑмӑртасах ӑнлантарасшӑн пулчӗ вӑл комиссара, ун патне вӑйпах кӗрсе тӑрсан.

- Ҫапах та хӑвӑнтан аслӑрах ҫын умӗнче пилоткӑна хывмалла пуль, - асӑрхаттарчӗ комиссар - ватӑ енне кайнӑ майор. Гимнастерки пекех тӗссӗрленнӗ пилоткине Легкоступов хыврӗ, малтан ӑна пӗр аллинче, унтан тепӗр аллинче тытрӗ. Лутӑрканнӑскере ниҫта хума аптранӑран ҫурӑмӗ хыҫне пытарчӗ. Комиссар салтака мӗн каламаллине калама чармарӗ, унтан ларса лӑпланма хушрӗ.

- Миҫере вара вӑл? - ыйтса тӗпчеме тытӑнчӗ вӑл.

- Кам?

- Кам... кам... Сергей Львов аппӑшӗ ҫинчен ыйтатӑп.

- Манран вӑл тӑхӑр ҫул ҫамрӑк. Эпӗ ҫирӗм тӑххӑрта, эппин вӑл ҫирӗмре...

- Ҫирӗмри хӗр нянькӑсӑрах пурӑнӗ-ха. Ӑна качча илме шутларӑн-им? Ҫавӑнпа ун хутне кӗретӗн-и?

Легкоступов туххӑмрах пилоткине пуҫӗ ҫине лапчӑтса лартрӗ, унтан ӑна каллех хӑвӑрт хыврӗ, тӑруках ним калама аптранӑран куҫне ҫине-ҫинех мӑчлаттарчӗ.

- Амӑшӗ ӑҫта? - пӗлмене персе тӗпчет комиссар.

- Фронтра пуҫ хунӑ.

- Ашшӗ?

- Ашшӗне пӗлместӗп.

- Епле апла! Арӑслан Русланӗ - Львов Руслан Львович - халӑх тӑшманӗ пулнине чӑвашсем ҫеҫ мар, Владимир облаҫӗнче те пӗлеҫҫӗ-ҫке... Халӑх тӑшманӗ ҫемйине хӳтӗлеме килтӗн пулать. Ан анкӑминкӗлен! Хӑв хӳтлӗхсӗр тӑрса юлӑн. Ку ыйтупа эпӗ пулӑшма пултараймастӑп.

Легкоступов ҫар комиссариатне кайса ҫӳрени усӑ кӳмерӗ: Сергее ҫара ӑсатма тиврӗ.

## 6. Кашни чул айӗнче - тӗнче историйӗ

Ашшӗне Роза тӗлӗкри пек кӑна астӑвать. Руслан Львович Вылӑ тӑрӑхӗнчи чӑваш ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, ҫак ялтах чылай ҫул хушши учительте ӗҫлесе пурӑннӑ. Роза хӑйӗн ашшӗн пурнӑҫ ҫулне ытларах амӑшӗ каласа панӑ тӑрӑх пӗлет. Руслан Львович Хусанта вырӑс мар халӑх учителӗсен семинарийӗнчен 1918 ҫулта вӗренсе тухнӑ. Ку вӑл Хир сысни (Кабан) кӳлли леш енчи ҫак семинарин юлашки кӑларӑмӗ пулнӑ. Совет влаҫӗ чӑваш ялне вырӑс хӗрачине Эльвирӑна фельдшер пунктӗнче ӗҫлеме ярать. Икӗ ҫамрӑк - Русланпа Эльвира - ҫакӑнта сывӑххӑн паллашаҫҫӗ те пӗр-пӗрне юратса мӑшӑрланаҫҫӗ.

Кам мӗнпе пулӗ те, Руслан Хусанта вӗреннӗ чухнех чӑваш халӑхӗн историйӗпе кӑсӑкланать. Тӗрӗссипе каласан, ҫакӑ ҫуралса ӳснӗ ял ячӗ мӗне пӗлтернине тишкернинчен пуҫланать. Ял ятӗнче малтанхи сыпӑк Иш. Хӑй тӗллӗн ку нимех те мар. Таврари нумай-нумай ялсен ячӗсем ҫак сыпӑкпа пуҫланаҫҫӗ вӗт-ха: Ишлей, Ишек, Иштерек, Ишпарайккӑ... Ӑҫтан тупӑннӑ ҫакнашкал пӗрешкеллӗх? Мӗне пӗлтерет ял ячӗсенчи “Иш” тымар?

Тӑван чӑваш чӗлхинче ку сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ пӗрре ҫеҫ мар иккен. Пӗрремӗшӗ шывра ишессипе ҫыхӑннӑ. Унта

алă-ура вăйĕпе те, кимĕ ҫинче кĕсменпе те ишме пулать. Чăвашсен сĕм авалхи несĕлĕсем мăн юханшыв е тинĕс хĕрринче пурăннă-ши, вĕсене апла та, капла та ишме тивнĕ-ши?

Ку сăмахăн тепĕр пĕлтерĕшĕ те пур вĕт. Ҫĕмĕр, аркат, тустар, пăс, салат сăмахсем те унпа тăван. Эппин чăвашсен ĕлĕкхи ялĕсене сĕмсĕррĕн, тискеррĕн тустаракансем, аркатакансем пулнă, ахăр. Ялсен ячĕсенче "Иш" тĕп вĕсене ишĕлнисем вырăнне никĕсленине кăтартмасть-ши? Тепĕр тесен ҫав ятсенче вĕсене никĕсленĕ ҫынсен ячĕсем сыхланса юлма пултарнă. Тĕслĕхрен, несĕлсем хушшинче Иштек ятлисем чылаях пулнă. Руслан Львович хăйне Иштек ывăлĕн Арăсланăн тăсăмĕ тесе шутланă. Урăхла пулма та пултараймасть: ашшĕ Лев (Арăслан) ятлă, хушамачĕ - Львов (Арăсланов). Ку хушамат ратнерен ратнене куҫса килет.

"Иш" сăмах чăваш чĕлхине пĕр-пĕр урăх чĕлхерен кĕмен-ши? Пайтах шырав тунă хыҫҫăн Руслан Львович ҫак сăмах перс чĕлхинче пуррине, кĕсменпе ишекене пĕлтернине тупать. Кайрантарах шур сухалсем ăна ҫапла каласа параҫҫĕ: авал Уралпа Атăл хушшинчи ҫĕршыва перссен Фарис хулинчен Салиман ятлă ҫын пырса вырнаҫнă, имĕш. Вăл паллах тинĕс урлă, Атăл тăрăх кимĕпе ишсе килнĕ. "Иш" сăмах унпа пĕрле килмен-ши? Салиман ăрăвĕ Ылтăн Пăлхарта тăнăҫ пурнăҫпа пурăннă. Ĕҫчен пăлхарсемпе перссем пĕр-пĕринпе килĕштернĕ, мăшăрланнă, тăванлашнă. Анчах самана тикĕс килмест ҫав. Ылтăн Пăлхар патшалăхне куҫса ҫӳрекен вăрă-хурахла халăхсем хĕвелтухăҫ енчен те, кăнтăртан та киле-киле тапăнма, ҫаратма та ҫĕмĕрме тытăннă. "Иш" сăмахăн иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ ҫавăн чухне тупăнман-ши?

Салиман мăнукĕсен мăнукĕсем Иштек, Иштерек, Ишлей тата ыттисем те ҫавнашкал инкекрен хăтăлма Атăл урлă каҫса тарнă, ҫĕнĕ вырăнта ҫĕнĕ ялсем никĕсленĕ. Вĕсене хăйсен тата пăрахса хăварма тивнĕ ялсен ячĕсене панă. Эппин, малтанхи вырăнта та вĕсен ҫав ятсемех пулнă. Чăвашсем тĕрĕк йăхĕнчен тухнă - ҫирĕплетеҫҫĕ пайтах ăсчахсем. Руслан Львович чăвашсем пăлхарсемпе тата перссемпе тăванлă тесе вĕрентнĕ шкулта. Эсерсене - сулахайрисене те, сылтăмрисене те -

революционерсем вырӑнне хурса хаклanӑ. Нимӗҫ поэчӗ Г.Гейне каланӑ евӗр, масар ҫинчи кашни чул айӗнче тӗнче историне тӗпчеме чӗннӗ, тӑван халӑхӗн аваллӑхне ялсен ячӗсенче шырама хистенӗ чӑваш ялӗнчи учитель.

Тӗпчевҫӗ ку ыйтупа малалла кӑсӑкланайман: пачах кӗтмен ҫӗртен ун ӗмӗчӗсен ҫуначӗсем айне НКВД серепе лартнӑ. Руслан Львовичӑн тӗпчевӗсемпе вӗрентӗвӗ унта ӗҫлекенсен кӑмӑлне килмен. Сумлӑ ӑсчахсем чӑваш халӑхӗ ӑҫтан пулса кайнине урӑхларах ӑнлантарнӑран-ши? Эсерсене революци тӑшманӗсем шутне кӗртменрен-ши? НКВД ҫыннисем учитель килне ҫурҫӗр тӗлӗнче пырса ухтарнӑ. Вӗсем чӑваш халӑх историйӗ пирки алҫырӑвӗ тата А.Г.Гаврилова эсеркӑн учительсен съездӗнчи доклачӗ тӑрӑх пичетлесе кӑларнӑ “Женщина - гражданка” брошюрӑна тупнӑ. Чиновниксем ку кӗнеке эпиграфне вуланӑ: “Хӗрарӑма эшафот умне тӑратаҫҫӗ пулсан, унӑн трибуна патне тухма та тивӗҫ пурах”.

Учитель хучӗсем хушшинче Пӗтӗм Раҫҫейри хресченсен союзӗ кӑларнӑ “Хӗрлӗ ялавпа ҫӳрекен ҫынсене мӗн кирлӗ” прокламаци тупӑнать. Ку союз программинче эсерсен витӗмӗ палӑрнӑ. Унтан ухтаракансем Хусанта тухса тӑнӑ “Хыпар” хаҫат тӗркине туртса кӑлараҫҫӗ, унӑн пӗрремӗшпе иккӗмӗш номерӗсенче “Кӑчуне хысна укҫа ӑҫтан тупӗ-ши? Питӗрте пулни” памфлета интересленсе вулаҫҫӗ. Ку памфлетра патша влаҫне сирпӗтесси пирки уҫӑмлӑн каламан, “лартӑрах вӑл Питӗрте” тесе ҫырнӑ. “Эппин ку хаҫат революциллӗ-демократиллӗ туртӑмлӑ мар, либераллӑ-буржуаллӑ сулӑмлӑ. Учителе историн ҫак тусанӗ мӗн тума кирлӗ-ха?” - тӗлӗнеҫҫӗ ухтаракансем.

НКВДра ӗҫлекенсем Р.Л.Львова ҫавӑн чухне “хура ҫӑханпа” лартса кайнӑранпа ун ҫинчен “халӑх тӑшманӗ” ят сарӑлать, яла урӑх хыпар-хӑнар пачах килмест. Ырӑ ҫынсем сӗннипе Эльвира Кузьминична тӑхтаса тӑмасӑр ҫуртйӗрне сутать те Вылӑ хӗрринчи яла пӗчӗкҫӗ хӗрӗпе тата ывӑлӗпе пӗрле яланлӑхах хӑварать, Владимир ҫывӑхӗнчи тӑван ялне килет, ҫурт туянса унта пурӑнма пуҫлать. Икӗ ачана пӗччен ӳстерсе ҫын тума амӑшне, паллах, ҫӑмӑл пулмарӗ.

## 7. Куç çути çапла таврӑнать

Григорий йăрăс кĕлеткеллĕ хĕре хăй çумне чăмăртасси ăнсăртран пулса тухрĕ темелле. Малтан вăл хĕрĕн вĕри аллине кăна хăйĕн кăкăрĕ çумне хурасшăнччĕ, анчах арçын еннелле чиперкке хăй туртăнчĕ-ши е темле ăшă туйăм магнитла туртса илчĕ-ши - тытрĕ те чăмăртарĕ хĕре хăй çумне. Унтан, çиленмерĕ-ши тесе, ун çине шикленӳллĕн пăхса илчĕ. Çук иккен.

- Мĕншĕн сасартăк çавнашкал пăчăртăк? - ахăлтатса савăккăн кулса ячĕ хĕр. - Гриша, пĕр вăрттăнлăх пĕлтерем-и сана? Манăн сана çав тери курас килет. Астăватăп-ха: эсĕ питĕ кĕрнеклĕччĕ, сан хулпуççи сарлакаччĕ, пĕвӳпе çӳллĕччĕ... Кутăруçăн та çаплах-ши?

Хăйне тăванла пулăшакан хаклă çын çине Роза чăнах та чăннипех курма пултарасла куçне сиктермесĕр пăхрĕ-пăхрĕ те тем тĕсмĕртнĕ пек пулчĕ:

- Гриша, сан гимнастерку симĕс мар, шупкалнă...

Те тĕлĕннипе, те савăннипе Григорий шак хытса кайрĕ.

- Тăванăм, сан питӳ мĕншĕн ку таранах куштăрканă? - кĕтмен çĕртен ыйту пачĕ Роза. Çавăн хыççăнах савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ:

- Гриша! Гриша! Эп куратăп! Эп сана куратăп!

Çав самантрах хĕр арçын çумне тĕршĕнчĕ, ăна питĕнчен, тутинчен чуптума тытăнчĕ.

Çавăнтанпа Розăн куçĕ курасса курать, анчах темшĕн тĕтреллĕ кăтартать. Куç шăрçине пысăк мар тĕссĕрункă карса тăрать, тĕрĕс-тĕкел курма çав чăрмантарать пулмалла. Григорий хĕре Владимир хулине куç тухтăрĕ - окулист патне илсе кайса пăхтарчĕ, анчах ун рецепчĕпе туяннă эмел усă кӳни сисĕнмерĕ. Куç шăрçи тĕлĕнчи хăтсăр ункă çав-çавах çухалмасть. Тӳррипе каласан, куç капла курни те теме тăрать. Çакă та ун пурнăçне самаях пысăк улшăнусем кĕртрĕ: теплицăри ĕçе алăпа хыпаласа мар, куçпа курса тăвакан пулчĕ. Хула пасарне çӳреме вăл халĕ те пăрахмарĕ.

- Пире текех хĕрхенӳ кирлĕ мар. Купăсу килте юлтăр, канăва тухтăр, - хушнă пекех сĕнчĕ ăна Григорий.

Куçĕ кăштах курма пуçланăранпа Розăн ăшă кулли татах та илемленчĕ. Хĕпĕртӳллĕ кулă унăн пысăк куçне çăлтăрла çутăлтарса ярать, сăн-сăпатне ылтăн пек те кĕмĕл пек йăл-

тăртаттарать, чиперлĕхпе кĕрнеклĕх кӳрет. Анчах куçĕн вăйĕ çукрах çав, уççăн кăтартмасть, часах ывăнса ыратакан пулать.

Пасарта чечексемпе çимĕçсем сутса ларать-и, теплицăра чакаланать-и, килĕнче тăр-пĕччен тăрмашать-и - хĕрпе яланах Гриша хăй е унпа çыхăннă ырă шухăшсен паха çăмхи. Вăрçă тапраннăранпа ялта арçын йышĕ иксĕлмеллипех иксĕлчĕ, çапах упăшка пулас шутлисем çук мар. Пĕрисем фронтран аманса таврăннă та çемьеллĕ пуласшăн, теприсене хусах пурнăç йăлăхтарнă. Анчах Роза пĕрмаях Гриша çинчен шухăшлать. Хĕрĕн кури-курми куçĕ умĕнче унăн сăнарĕ тăрать. Роза чун-чĕрипе ун еннелле туртăнать. Гриша кирек хăçан та ырă кăмăллă пулнăран-ши? Хĕрпе пĕрле теплицăри ĕçе кӳлĕннĕрен-ши? Сергее салтака илесрен хăтарас шутпа районти çарĕç комиссариатне кайнăран-ши? Тен, пушă вăхăтра çырмаран чĕрĕ пулă тыта-тыта килнĕрен?

Сăлтавĕ кирек епле пултăр, Роза ку арçын çумĕнче хăйне çав тери лăпкă тата канлĕ туять. Хĕре ун валли апат хатĕрлесси те, кĕпине çуса парасси те савăнтарать. Ан тив уксах пултăр, ан тив арçынсенчен нимĕнпе те уйрăлса ан тăтăр - ир тăрсан пурпĕр ăна курас килет, кун каçа унпа пĕрле ĕçлес килет. Çитменнине тата ку арçын хĕрарăма итлеме пĕлет, мĕн хушнине пурне те тăвать. “Сан чикарккуран тухнă чухлĕ тĕтĕм пăравус трубинчен те палкамасть пуль. Кунашкал тĕтĕме теплицăри чечексем те килĕштермеççĕ,” - кулараххăн каларĕ пĕррехинче Роза, аллине ун хулĕ çине хурса. Гриша виç-тăватă кун хĕртен вăрттăн турткаларĕ, çавăн хыççăн темле майпа кăмăл çирĕплĕхĕ тупса, çăварне чикаркка текех хыпмарĕ. Чăн-чăн арçын çеç çапла тума пултарать.

Юрату пурах-ши е çук-ши? Çакăн пирки иккĕленӳллĕ шухăш Роза пуçне нихçан та пырса кĕмен. Ăна урăхла шухăш минретет: юрататъ-ши вăл мана е çук-ши? Шухăшласан-шухăшласан хĕр ку ыйтăва çапла татса парать: вăл мана пĕр сăмах хăварми итлет, эппин юрататех. Анчах çакна калама арçын мĕншĕн-ха тытăнса тăрать? Вăтанать-ши? Именет-ши? Урăх сăлтавсем пур-ши? Çакнашкал ыйтусене татса парасси Розăшăн ку таранччен шăл çемми пулаймарĕ-ха.

Гришăшăн пулсан, Роза теплицăра хăй ӳстерекен чечек пекех хитре. Ашшĕ-амăшĕ суйласа илнĕ ят та Роза, сăн-пи-

чӗпе те чӑн-чӑн роза. Унӑн хӗп-хӗрлӗ вӗри пичӗ ҫине пӑхсан, Гриша ҫӗнӗ теплицӑна еплерех тӑвасси пирки колхоз председателӗпе хӗрсе тавлашнине те манса каять, аслӑ конюхпа Хушкана сӗлӗ уйӑрса парасси пирки харкашни те пуҫран тухса ӳкет, Сережӑна салтака илнӗшӗн районти ҫарӗҫ комиссарне ҫиленни те иртсе каять.

Роза питне ӑшӑ кулӑ уйрӑмах илемлетет. Вӑл йӑл та йӑл кулнӑ чухне тути кӑштах уҫӑлать те, шап-шурӑ тикӗс шӑлӗсем курӑнаҫҫӗ, пит ҫӑмартине ирхи шуҫӑмӑн ҫепӗҫ тӗсӗ ҫапать. Унӑн ӑшӑ куллинче уҫӑмлӑ шухӑш палӑрмасть, илӗртӳпе астару пӗр чӗптӗм те ҫук. Илемлӗхпе пурнӑҫ савӑнӑҫӗ, ырӑ кӑмӑлпа тараватлӑх кӑна асӑрханаҫҫӗ хӗр куллинче. Ҫакӑ Гришӑна тем тери килӗшет. Пытармасӑр каласан, Роза ун кӑмӑлне килет, хӑй патнелле туртать. "Эпӗ ӑна юратма пуҫларӑм-ши? - хӑйӗнчен хӑй ыйтать Гриша, унтан аллипе ҫамкинчен ҫатлаттарать: - Юрамасть. Ку ытармалла мар хӗре пысӑкрах телей кӗтет, ахӑр".

Гришӑна теплицӑра Розӑпа пӗрле ӗҫлеме кирек хӑҫан та лайӑх. Ӑна пасара сутуҫӑ вырӑнне хӑварсан, илме каяс вӑхӑт ҫитиччен тунсӑхлама пуҫлать. "Нивушлӗ манӑн чӑн-чӑн юрату арӑслансен йӑхӗнчи ҫак Роза?" - миҫемӗш хут ӗнтӗ хӑйӗнчен хӑй ыйтать Гриша. Ҫакӑн хыҫҫӑнах пуҫне ырӑ мар шухӑш ыраттарма тытӑнать. "Ӑшталанчӑк та сутӑнчӑк Маринӑпа, Юманайӗнчи чӑнкӑл-чанкӑл Лукерйӑпа, калаҫса тӑлма ҫук Екатеринӑпа ҫыхланса ята ҫӗртнӗ хыҫҫӑн эпӗ Розӑна тивӗҫлӗ арҫын мар. Ку икӗ хут иккӗ тӑваттӑ тенӗ пекех тӗрӗс. Йӑрӑс пӳллӗ пӗр ҫылӑхсӑр ҫамрӑк хурӑн ҫумӗнче туратти хуҫӑлнӑ хурама тӑма пулаймастех. Ҫак икӗ йывӑҫа юнашар тӑратсан, ялйыш мӗн калӗ? Кулаканни кулӗ, ахӑраканӗ ахӑрӗ, ырлаканӗ тупӑнмӗ."

## *8. Юратупа телей юнашарах иккен*

Ятарласа янӑ йыхрава илсен, Геннадий Иванович Ҫирӗклӗхе мӑшӑрӗпе пӗрле килсе ҫитрӗ. Лариса Петровна уяв чухне тӑхӑнакан шурӑ кофтӑпа, кӑвак пустав юбкӑпа, хром атӑпа. Роза килне иккӗшӗ алла-аллӑн тытӑнса утса кӗчӗҫ, сӑран сумкӑран сӗтел ҫине кӗрпе кукӑлӗ кӑларса хучӗҫ, пулштух эрех лартрӗҫ. Ара, Розалия Руслановнӑн куҫ ҫути таврӑннине па-

лăртмалла-çке-ха. Кун çути тепĕр хут курма пуçланă ятпа ăна хăнасем чун-чĕререн саламларĕç. Хĕр вĕсене хăй юхтарнă сăрапа тата хăех хатĕрленĕ салатпа сăйларĕ.

Григорий Михайловичпа Геннадий Иванович пайтах вăхăт тараватлăн пуплесе ларчĕç. Тем çинчен те калаçрĕç, тем пирки те сӳтсе яврĕç. Розăн амăшне - ял сума сунă фельдшерицăна ырăпа асăнчĕç. Хĕр ыйтнипе арçынсем вăрçăра хăйсем мĕн курни, Така мăйракипе Чĕкеç тӳпемĕ çинчи çапăçусем çинчен кала-кала кăтартрĕç. Хĕрпе пĕрле ларнăран юрату ыйтăвĕ те айккине тăрса юлмарĕ.

- Пире, арçынсене, пурнăçра пуринчен ытларах мĕн кирлĕ? Арăм тӳрĕлĕхĕ, шанчăклăхĕ, çемьери килĕшӳ. Вăн ман Лариса ик хĕрача çуратса пачĕ. Иккĕмĕшне ывăл кĕтетчĕ - брак тăватăн тесе мана айăплать. Юрату çинчен манса кайнă ĕнтĕ вăл... - йăл кулать Геннадий Иванович. Унăн кăтра çӳçĕ вăрăмланнă, çĕнĕ ункăсем хушнă. Хăйĕн кăмăлĕ лăпкă пек, çапах пушă çанни çине кăн-н пăхса илетех. Унтан пуçĕпе савнă мăшăрĕ ĕннелле çаврăнать, çав самантрах куçĕ çутăлса каять. Вăл хуллен кăна çапла хушса хурать:

- Все-таки... все-таки вăрçăран хăрах алăсăр таврăннăшăн ӳпкеленине унран çур сăмах та илтмен эпĕ...

- Вăрçă вăхăтĕнчи хĕрарăмсем арçынна чунтан парăнса юратма пултараймаççĕ. Эпĕ вĕсене пĕр чĕптĕм те шанмастăп... - хăйне хирĕçлеме юрами сасăпа ĕнентересшĕн пулчĕ Григорий Михайлович.

Пĕр вăхăта калаçу татăлчĕ. Григорий мĕн пирки çапла шутланине Геннадий çеç мар, Роза та лайăх пĕлет. Çывăх тăванăн курăнакан арçын çине хĕр ăшшăн-ăшшăн пăха-пăха илет, лешĕ - каснă-лартнă тăмсай - çакна асăрхамасть е асăрхаманçи тăвать. Роза ăс-хакăлĕнче уçăмлă шухăш çирĕп тымар янă: вăл мана, суккăра, мĕн тери хисепе хучĕ, тăванла пулăшрĕ! Ăна, урасăрскере, манăн мĕншĕн юратмалла мар вара? Хĕр такама хирĕçленĕн хулне сиктеркелесе илет, тăруках ура çине тăрать. Унăн пичĕ вутла çунать, куçĕ йăлтăр-йăлтăр тăвать.

- Каçарăр-ха, пур хĕрарăма та Маринăсемпе Лукерйăсен йышне кĕртмелле мар. Çав шутрисем хăйсен çулĕпе çӳреччĕрех. Вĕсен пĕрин те вутра çунми, шывра путми юрату пулманах. Калăр тӳррипе, Григорий Михайлович, çав сив-

лек чёреллё чиперккесене эсир хăвăр та чун-чĕререн юратман вĕт? Ман шутпа, юрату - пурнăç тыткăчĕ. Çут тĕнче илемĕ юратусăр катăк. Çут тĕнчене чăн-чăн юрату, ĕмĕре пыракан манăçми таса юрату сиплĕх кӳрет, - хăйĕн шухăшне тĕпĕ-йĕрĕпе каларĕ Роза.

...Ашшĕн виçĕ ывăлĕнчен Гена вăталиххиччĕ. Машина-трактор станцийĕнче çамрăклах трактториста вĕренчĕ, трактор бригадинче ĕçлеме тытăнчĕ. Ĕçĕ ăнса пычĕ унăн. Пĕр çултанах паха пуставран ятуллă костюм çĕлетрĕ, хром атă туянса тăхăнчĕ. Кăтра çӳçлĕ яштака каччă çине хĕрсем ăмсанса пăхаççĕ. Гена вара вĕсенчен пĕрне çеç кăмăллать. Ку вăл трактористсем валли апат пĕçерекен Лариса. Мĕншĕн килĕшет-ха ăна çак повар? Ирхи шуçăм тĕслĕ сăнĕпе-ши е çынсемпе кăмăллă калаçма пĕлнĕрен-ши? Çук, çакна Гена паян та татса калаймасть. Пĕр сăмахпа, килĕшет, çав тери килĕшет. Хăйпе пĕрле кинона çӳрекен хĕре тăхтаса тăмасăрах качча илме хатĕр. Анчах ăна киле çавăтса пыма май çук. Пиччĕшĕ пĕлтĕр çеç авланчĕ - сăпкара пĕчĕкки кăшкăрать. Шăллĕ те килтех пурăнать-ха. Çавăнпа каччă малтан пысăк мар типтерлĕ çурт лартрĕ, унтан тин кĕрлеттерсе туй турĕ.

Çĕнĕ çынсен телейлĕ пурнăçĕ вăраха пыраймасть. Пĕр сивлек ирпе Геннадий машинăсен паркне пырать те тĕлĕнсех каять: унăн кустăрмаллă çĕнĕ тракторĕ лачакари сысна пекех пылчăкпа вараланнă. Мĕн ку? Кам хăтланнă? Çак ыйтупа пуçне ватса тăракан тракторист патне милиционер мотоциклпа кĕрлеттерса çитет, трактора ку енчен те, леш енчен те тĕрĕслеме тытăнать. Ăна уйрăмах кустăрмисем кăсăклантараççĕ.

- Ферма патĕнчи йĕрсем шăп çак тракторăн. Пылчăкĕ те унтиех. Эппин икĕ пуç сыснана эсĕ çак тракторпа пĕçертсе тухнă?

- Эпĕ çĕркаç килтех çывăрнă. Ниçта та тухман, ниçта та кайман...

- Суятăн. Трактору мĕншĕн вараланчăк?

Çĕрле ун тракторĕпе кам ĕрĕхтерсе çӳренине Геннадий питĕ пĕлесшĕн пулчĕ, анчах трактор бригадинче ĕçлекенсем курмана-илтмене печĕç. Ферма хуралçи Трифон следователь умĕнче те, судра та пĕр юрă юрларĕ:

- Хыçалтан пырса, мана пĕр вăйлă çын йывăç мăлатукпа пуçран çапрĕ. Ку вăл Кудряшов пулма пултарать. Ун пек вăйли ялта урăх çук...

Хай çирĕм тăватта çитсе, никамăнне те нимĕн те вăрламаннине кăлăхах ĕнентерме тăрăшрĕ Геннадий, чĕркуçленсе те ларчĕ - çакă та усă кӳмерĕ. Судья ун сăмахĕсене хăлхине чикесшĕн пулмарĕ. Вараларĕç пулсан - тасатма ансат мар, тĕксе йăвантарсан - тăма татах та йывăртарах. Приговор вуласа парсан, Геннадийĕн çӳç-пуçĕ вирелле тăчĕ. Анчах мĕн тăвăн: кассацие пани те пулăшмарĕ. Приговор пирки ял халăхĕ питĕ иккĕленчĕ. Хĕрхенекенĕ хĕрхенчĕ, пĕлекенĕ шăлне çыртрĕ. Ларисăна аллинчи кăкăр ачипе нушана тăратса хăварма тиврĕ. Юрать-ха решетке хыçĕнчен тухма фронта ямашкăн ыйтса çырни пулăшрĕ.

Госпитальте чухне хăрах алăсăр тăрса юлни çинчен Ларисăна епле пĕлтересси пирки кулянатчĕ. Каçăн-ирĕн вăл мĕнле хуйхăрнине çӳлти Турă çеç пĕлетчĕ. Кĕтмен-туман çĕртен унта мăшăрĕ хай пырса çитрĕ, йывăр аманнă салтак чĕрине пыллă сăмахсемпе ăшăтрĕ, иккĕленӳсемпе вутсăрах çунакан чуна савса та чуп туса лăплантарчĕ.

- Мана сансăр пуçне никам та кирлĕ мар. Килте сана арăму кăна мар, тăван хĕрӳ те кĕтет, - куççуль витĕр шантарчĕ ăна Лариса.

Килне таврăнсан, ăна хăрах алăлăскере, МТС дирекцийĕ трактор шанса пама килĕшмерĕ. Ун вырăнне кӳлме вĕрентнĕ вăкăрсене колхоз правленийĕ витипех шанса пачĕ. Лариса шухăшларĕ-шухăшларĕ те трактор бригадине тăрантаракан повар ĕçне пăрахрĕ, упăшкипе пĕрле вăкăрсем пăхма куçрĕ. Кирек мĕн тунă чухне те хăрах алăллă çынна чун-чĕререн пулăшма пуçларĕ.

...Кĕрекери калаçу малалла тăсăлать.

- Все-таки эсир шухăшăра каласа пĕтермерĕр-ха, Розалия Руслановна, - аса илтерчĕ Геннадий хĕре.

- Пурнăçăн тепĕр ырлăхĕ - юрăпа купăс. Чунри туйăма мĕнпе палăртма пулать? Сăмахпа, юрăпа тата купăспа. Сăмах кушелĕ пуянах мар манăн, юрăпа купăс вара ман чунчĕрене чăннипех те çывăх. Тунсăха вĕсем сиреççĕ, савăк кăмăл кӳреççĕ, тепĕр чухне тарăн шухăша яраççĕ.

- Розалия Руслановна, эсир чăвашла юрласа кăтартмăр-и? - сĕнчĕ Лариса Петровна. Те хисеплесе, те урăх сăлтавпа, паян хăнасем хĕре “эсир” те “эсир” теççĕ.

- Сĕнĕвĕре хаваслансах пурнăçлатăп. Итлĕр, тусăмсем...

## ШУР ХУРĂНĂН МĔН ХУЙХĂ?

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Чулсем тăрăх ыткăнса,
Инçе çитме васкаса.
Каччă çине хĕр пăхать
Именсе те вăтанса,
Чăн юрату шыраса.
Серте яшки яшка-и,
Ытах типĕ çиесрен,
Чĕре сури тумалăх.
Ют ял ачи ача-и,
Ытах пĕччен çӳресрен,
Вăхăт сая ямалăх.
И, утар-и, утар-и,
Тутăр витĕр пăхар-и,
Курман пекех пулар-и!
Чун юратман ачана
Куç айĕнчен пăхар-и,
Пăрăнайса каяр-и!
Шур хурăнăн мĕн хуйхă?
Куккук лармасть - çав хуйхă,
Кӳмест ăна йăпану.
Сарă хĕрĕн мĕн хуйхă?
Каччи савмасть - çав хуйхă,
Çавă кӳрет куляну.
Кĕске утта çуласси,
Çулассинчен пухасси,
Купа туса хурасси.
Савнă туса курасси,
Курассинчен пуплесси,
Ун шухăшне пĕлесси.
Кайкăттăмччĕ вăрмана,
Хăмла çырли илĕртет,
Татса çимешкĕн чĕнет.
Тухмăттăмччĕ урама,
Савнă тусăм илĕртет,
Пĕрле пулас килчĕ тет.
Манăн тутăр пит нумай,
Чĕнтĕр тытни пĕрре çеç,

офицер икĕ еннелле сиксе ӳкесшĕнччĕ - май килмерĕ, самантрах чарчĕç. Икĕ салтак хĕç-пăшалсăрлатнă икĕ офицера тепĕр çур сехетрен хамăрăннисем патне илсе çитерчĕç.

Тытса килнисем офицерсем те мар, мĕн те мар, Корольковпа Валетов иккен. Иккĕшĕ те пĕр шухăшлăн тăшмана сутăнма шут тытнă. Секретрисем ирпе таврăнсан, рота командирĕ иккĕшне те тав турĕ. Сутăнма шутланисене комбат çар прокуратури аллине пачĕ.

Унта ĕçлекенсем çакна тупса палăртрĕç: иккĕшĕн те чăн хушамачĕсем урăхла-мĕн - Дурасовпа Поленов. Пĕлтĕр тăшман патне тарса каçсан Корольковпа Валетов пулса тăнă. Кунта вĕсем сутăнчăк Власов çарне, Вырăс патшалăхĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекенскер тенĕскере, хăйсен ирĕкĕпе çырăннă. Çăварлăхламан ăйăрсене кунта та тем килĕшмен.

- Эх, пĕр-пĕр така çаклатасчĕ те шашлăк пĕçересчĕ! Кĕр енне вăл мăнтăрланса çитнĕ ĕнтĕ. Шнапспа мар пулсан та, сăмакунпа çăвăттăмăр! - тек-текех ассăн сывланă Валетов.

- Çӳресчĕ тепрер çул ялсем-хуласем тăрăх каскăнла! Вара çапăçма та, вилме те хатĕрех пулăттăм! - йĕрмĕшнĕ вăл тепрехинче.

- Тав турра, пуçна йĕвен тăхăнтарнă, урусене тăлланă! Унсăрăн эсĕ тем те хăтланăн! - шăпипе килĕшме ӳкĕтленĕ ăна Корольков. Ӳкĕтлессе ӳкĕтленĕ те, анчах кăмăлĕ хăйĕн те çурхи çанталăк пекех улшăнса тăнă иккен. Май килсенех иккĕш хамăрăннисем патне каялла тарса каçаççĕ. Çавăн чухне лекеççĕ те вĕсем “Смерш” аллине. Кĕçех штрафбат салтакĕсем пулса тăраççĕ. Хальхинче шăпи тулсах çитрĕ хăйхискерсен. Хирти çар çучĕ тивĕçлĕ приговор йышăнчĕ - иккĕшне те персе пăрахмалла.

- Калăр-ха, приговора штрафбат умĕнче ун вăйĕпе пурнăçлани вырăнлă пулĕ-ши? - канаш ыйтрĕç “Смерш” уйрăмĕнче ĕçлекенсем комбатран.

Чăнах та апла туни хăш енчен те пулин усă кӳрĕ-ши? Урăхла каласан, воспитаниллĕ пĕлтерĕшлĕ пулĕ-ши е çукши? Батальон приговора хăйĕн вăйĕпе пурнăçлама пултарĕ-ши? Паллах, кунашкал ыйтăва татса панă чухне Пожеданова васкама юрамастех. Комбат теветкеллĕхĕ пирки

батальон мĕн калĕ? "Пирĕн комбат хĕпĕртеттерекенниех мар", - терĕç ун çинчен пыр чӳхеме юратакансем хăйсене "Кăвак Дуная" çӳреме чарсан. "Комбат куçĕ çĕр айĕнчине те курать!" - илтĕнчĕ касăрмара пуплени тĕп сакайĕнчи вăрттăн çула тупсан. "Королькова кăлăхах отделени командирне лартрĕ!" - ӳпкелерĕç ватăрах салтаксем комбата.

Батальонти офицерсем ăна ыйтусене хăвăрт та тĕрĕс татса паракан хăюллă командир тесе шутлаççĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл асăрханулла тата тимлĕ пулнине те пĕлеççĕ.

"Тинех шалчи тулчĕ хайхисен!" - сасăпа каларĕç салтаксем хăйсен шухăшне хирти çар сучĕн приговорне пĕлсен. "Апли апла та, хамăра тем кĕтет-ха..." - хирĕçлерĕç теприсем.

Çапла, батальонта апла каланине те, капла хакланине те илтме пулать.

Пĕр те пĕр шутласан, приговора ăçта тата камсем пурнăçа кĕртесси тем тери кăткăс ыйту мар пек, анчах комбат çаплах çамкине картлантарать, пичĕ тĕксĕмленчĕ. Штрафникпа штрафник пĕр мар. Хăш-пĕринчен тем те кĕтме пулать. Сасартăк сутăнчăксене хӳтĕлекенсем кăшкăрашма таптратсан? Приговора пурнăçлама килĕшекенсем тупăнмасан?

Иккĕленмелли çук: пĕр пуç ăслă, пĕрлехи ăс нумай хаклăрах. Çакна асра тытса, комбат салтаксемпе тата офицерсемпе чылайăшĕпе канашларĕ, çавăн хыççăн тин ыйтăва епле татса памаллине палăртрĕ.

Çар сучĕпе айăпланисене тĕттĕм пуласпа, позицисенчи кăнтăрлахи хурал каçхипе ылмашăнас умĕн, конвойпа илсе килчĕç. Батальон стройĕнче кашни ротăранах каçхи хурала каймаллисем тăраççĕ. Айăпланнисене илсе килнĕ офицер хирти çар сучĕн приговорне вуласа пачĕ. "Приговор кассацисĕр законлă вăя кĕрет", - тенĕ унта.

Айăпланнисен пичĕсем шурса кайнă, тăсмакланнă. Куç хӳрисем иккĕшĕн те урмăшнă, вăкăрăнни евĕр хĕремесленсе кайнă. Куç айĕнче хура ункăсем. Çӳхе тутисем пăхăманлăхпа кутăнлăх кукăрăлчăкне пĕрĕннĕ. Иккĕшĕ те пуçĕсене çĕклесе пăхма хăяймаççĕ, куçĕсене кашкăрла айккинелле тартаççĕ.

Хуйхӑрсан та ан йӗр кӑлӑхах -
Пирӗн пурӑнасси малалла.
Атте лаши, ай, кӑвак лаша,
Кӑвак шуҫӑмченех ҫӳрес мар.
Ырӑ ывӑл пулма, ай, чӗр нуша,
Атте ятне ҫавах ярас мар.

Ӑна-кӑна сахал мар курнӑ ҫын юрри Розӑна та, хӑнасене те килӗшрӗ. Сӑмахӗсем тарӑн шухӑша яраҫҫӗ, куҫ умне иртсе кайнӑ кунсен ӳкерчӗкӗсене кӑлара-кӑлара тӑратаҫҫӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ итлекенсем виҫҫӗшӗ те юрӑҫа алӑ ҫупса саламларӗҫ. Роза унпа юнашар пырса ларчӗ.

- Гриша, юрру питӗ килӗшрӗ. Айта тепре юрлатпӑр...

Салтак ӑҫта та салтаках: тепре юрлама та хирӗҫлемерӗ. Юрӑ сӑмахӗсене Роза кӑррипех астуса юлаймарӗ, ун вырӑнне икӗ инструмент - хуткупӑспа гитара аккомпанеменчӗ юрӑ кӗввине тем тери илемлетрӗ.

Хуппине пӗрре катсах тӗшши тупӑнакан мӑйӑр мар ҫав ҫын. Геннадий вӑн Григорие чылайранпа пӗлет: тӗрмере те кирпӗч пӗрле шутланӑ, фронтра та пульӑсем шӑхӑрнине пӗрле итленӗ, ҫапах тепӗр чухне ӑна ӑнкарма пултараймасть. Урлӑ-пирлӗ шутласан, фронтовика вӑйлах шутлаттараканни сывлӑхӗн барометрӗ унталла-кунталла сулӑнни пулмалла. Хӑйне ҫирӗп тытма тем тери тӑрӑшсан та, ӑна ампутациленӗ ури канӑҫ памасть ӗнтӗ. Суран суранах, ҫанталӑк улшӑннине питӗ сисӗмлӗ. Сурма тапратсан - ай-яй еплерех ыратать. Ҫакнашкаллине Геннадий хӑй тӳсет. Каланӑччӗ тусӗ: ҫӳренӗ чухне йывӑҫ протез ӳтне хӑшкать, вистени те пулкалать. Резина протез меллӗрех теҫҫӗ те, анчах ӑна туянма хал ҫитереес ҫук. Кунсӑр пуҫне, ӳсӗресси иртсе каймасть унӑн. Ӗҫрен таврӑнсан вырӑн ҫине тӳнмеваскать. Ыйхи килмен чухнех йӑваланса выртма кӑмӑллакан пулчӗ.

Ҫапли ҫапла, анчах пурнӑҫне ҫӑмӑллатас тесен, уншӑн тӑванла тӑрӑшакан ҫын кирлӗ. Апла унӑн авланмаллах. Розӑпа мӑшӑрланма мӗншӗн килӗшмест-ха ӗнтӗ? Унпа пӗрле пурӑнма хӑйне тивӗҫлӗ мар тесе шутлать-ши? Турӑ парсан Розӑн та ар пулатех. Халӗ вӑл сӗм суккӑр мар ӗнтӗ. Куҫ ҫути вӑйланас шанчӑк та пур. Эппин ку кайӑка Гришӑн вӗҫертмелле мар. Вӑл пур - Лариса сӗнӗвне хуравламасӑр хӑварчӗ. Ҫакӑ тарӑхтарать те ӗнтӗ Геннадие.

- Эс ытла та-çке! Хăвăн телейĕнтен хăв пăрăнатăн, - ўкĕтлеме тытăнчĕ вăл тусне. - Сирĕн иксĕрĕн тăхтаса тăмасăр мăшăрланмалла. Ман кунтан ытла сăмахăм çук. Çитмен пулсан - çитерĕр, ытла пулсан - каçарăр.

Григорий ку сăмахсене те хăлхине чикмерĕ, куç харшине кăна çўлелле çĕклерĕ. Хăй тем пирки пăлханать.

- Пурте пĕлетпĕр: чакаксем чаклатма ăста, хăшпĕр хĕрарăм вара паврама ухута. Нумай пуплерĕм паян, пурпĕр чакак тесе ан калăр. Акă мĕн тусăмсем: урăх ан турткалашăр. Ларăр вырăнăра, тытăр куркăра. Эпир, Геннадипе иксĕмĕр, сирĕн умăрта тайăлса тăрар. Эпир тайăлнă чух юратупа мăшăрлану курки ĕçмесессĕн, Турă хурланă чун пулăпăр. Эпир тайăлнă чух ĕçсессĕн, Турă савса çуратни пулăпăр.

Мăшăрĕн çак сăмахĕсене илтсессĕн, Геннадий Иванович хăвăрт ун çумне пырса тăчĕ. Розалия Руслановна, килĕшўпе çураçу кĕтсе, Григорий Михайлович çине куç ывăтрĕ, лешĕ темшĕн-çке вырăнĕнчен хускалмарĕ. Пит çăмартийĕсем çине кăна хĕп-хĕрлĕ пăнчăсем тухрĕç. Те тархаслаттарас шутпа ăнланмана перет, те Лариса Петровна сĕнĕвĕ пачах килĕшмест.

Лариса Петровнăпа Розалия Руслановна кухньăна, тĕрĕсрех каласан, кăмака умĕнчи пўлĕме, кĕчĕç, пăшăл-пăшăл пуплерĕç. Хăлăхсăр арçына мăшăрланма ўкĕтлес тактикăна улăштармашкăн калаçса татăлчĕç, ахăр. Кухньăран тухсан, Розалия Руслановна хăй савакан арçын çине тĕтреленнĕ куçĕпе пăхса тăчĕ-тăчĕ те ун умне чĕркуçленсе ларчĕ:

- Эсĕ мана кирек мĕн кала та, эпĕ пурпĕр сана чи çывăх çын тесе шутлатăп. Тав сана тăванла пулнăшăн! Пысăк тав! Эпĕ тăмана, суккăр тăмана... Вăл хăть кун çутине курмасть пулин те, çĕрле курать. Ман куç кăнтăрла та, çĕрле те витĕр кăтартмасть. Чунăм айван, пуçăм çамрăк - пурпĕр пĕр пытармасăр калам: ылтăнăм çук, кĕмĕлĕм çук. Гришăран ытла савнă çыннăм çук.

“Мăшăрланар иксĕмĕр”, - тесе каласшăнччĕ малалла, чĕлхи çаврăнмарĕ. Ун вырăнне хуллен кăна çапла хушса хучĕ:

- Куçсам пирĕн çурта пурăнма... вăхăтлăха...

Григорий Михайлович çакна кĕтнĕ-и, кĕтмен-и, кăмăлсăррăн çамкине пĕркелентерчĕ, тутине пăркаларĕ.

- Ман умра хĕр чĕркуçленме тивĕçлĕ мар эпĕ. Момент сиксе тăрăр, Розалия Руслановна, - хулăнлатрĕ сассине Гри-

горий Михайлович. - Хăв пĕлетĕн, сана пĕр сăмах хăварми итлетĕп. Юрĕ, пĕр-пĕрне пулăшма ансатрах пултăр тесе, малашне пĕр çуртра пурăнар эппин. Анчах мăшăрланмасăр. Вăхăтлăха. Сережа таврăниччен. Унтан куç курĕ.

Розалия Руслановна хăвăрт ура çине тăчĕ. Хăй тăр-тăр чĕтрет: кĕлетки те, аллисем те, кофти те. Унтан йăл кулançи турĕ, чĕтĕревлĕ сасăпа юрласа ячĕ:

Урам хушши тикĕс мар,
Тикĕслекен эпир мар.
Яшсем качча илмесен,
Йăлăнакан эпир мар.

- Шалт аптрамалла йăлăнтармăш фронтовиксемпе! Пыр та ăнлан вĕсене! - сасăпах каласа ячĕ хăй шухăшне Геннадий Иванович. Мăшăрĕн сăмахĕсемпе пачах килĕшмерĕ Лариса Петровна.

- Апла мар, Генăçăм! Апла мар, Розалия Руслановна! Мĕн хаклă, Григорий Михайлович пирĕн пулас кинпе пĕр çуртра пурăнма килĕшни хаклă. Чăнахах, нумай та пĕтĕ, сахал та çитĕ, пĕрле пурăннине мĕн çитĕ! Эх, тăм пуç, чи кирлине манса кайнă... - çат! çат! тутарчĕ çамкинчен Лариса Петровна. - Пĕр килнĕ чухне парнене те парса хăварас!

Вăл сумкинчен вĕр-çĕнĕ сатин платье кăларчĕ, хĕре халех тăхăнса пăхма хистерĕ. Розалия Руслановна парнене хĕпĕртесех тăхăнчĕ, тĕкĕр умĕнче апла та, капла та çаврăнкаларĕ. Хăйпе виçсе çĕленĕ пекех платье хĕре ытармалла мар чипер кăтартать. Çакна курса савăннăран Лариса Петровна ал тупанĕ çине алă тупанĕ хучĕ те кăшкăрса ячĕ:

- Вăт телей! Вăт телей! Кӳршĕ хĕрĕпе виçсе çĕлерĕм - сана чухах пулнă! Кĕлеткӳне мĕн тери тăпăл-тăпăл тытать. Унпа çĕнĕ çын пулма та аптрамалла мар пек.

Юмахри пике евĕр хитре хĕре тĕсесе пăхма Григорий Михайлович вăтанать, пĕр пăхсан - пăхса тăранаймасть. Тахăш самантра хăюлăх тупса, вăл пирĕшти пек таса хĕр умне пырса тăчĕ. Лешĕ сылтăм аллине тӳрех ун çӳллĕ хулĕ çине хучĕ. Куçĕ çăлтăрла йăлтăраса кайрĕ, пичĕ вутла çунма пуçларĕ. Арçын аллисем пикене пилĕкĕнчен ыталаса илчĕç, пĕрпĕрне савакан икĕ чунăн тутисем те пĕрлешрĕç тепĕртакран. Çав вăхăтра хăнасем иккĕшĕ те театрти пек алă çупса ячĕç.



Шел, тутлӑн чуп тӑвасси сасартӑк татӑлчӗ. Тем сӑлтавпа хӗр вайлӑ алӑсен ытамӗнчен йӑпӑрт вӗҫерӗнчӗ те Лариса Петровна патне пырса тӑчӗ, куҫне ун ҫине витӗр шӑтарасла тӗллерӗ.

- Инке, сан куҫу хӑмӑр. Ҫӳҫӗнте эрешмен картисем пур... - темле вӑрттӑнлӑх пӗлтернӗн пӑшӑлтатма тытӑнчӗ хӗр. Унтан тепӗр еннелле ҫаврӑнчӗ те ҫапла хушса хучӗ: - Геннадий Ивановичӑн кӗпи умӗ те, ҫухавийӗ те, ҫанӑ вӗҫӗсем те тӗрӗллӗ. Симӗс тата кӗрен пурҫӑн ҫиппе инке хӑй тӗрленӗ ӗнтӗ...

Ҫавнашкал вак-тӗвек хӗре мӗн пирки кӑсӑклантарнине ӑнланаймасӑр ун ҫине виҫҫӗн тан тӗлӗнсе пӑхрӗҫ. Розалия Руслановна хӑй те ҫакна асӑрхарӗ, ҫав самантрах савӑнӑҫлӑн кулса ячӗ:

- Хаклӑ сынӑмсем! Тусӑмсем! Пӗлетӗр-и, куҫ ҫутӑлса кайрӗ ман! Куҫ шӑрҫине хуплакан ункӑ тӑнчах ҫухалчӗ. Халӗ лайӑх куратӑп эпӗ! Витӗр куратӑп! Ай, мӗн тери телей! Мӗн тери телей!

Хӑй лайӑх курма пуҫланӑран хӗр ҫунатлансах кайнӑ. Тусӗсене виҫҫӗшне те пӗрин хыҫҫӑн теперне чуп турӗ. Хӗр телейӗ вӗсене пурне те чун-чӗререн савӑнтарчӗ. Пулаҫҫӗ вӗт пурнӑҫра ҫавӑн пек ырӑ сехетсем: телей сана ҫепӗҫ ҫуначӗпе сӗртӗнет те чун ҫуталса каять, хуйхӑ-суйхӑ пуҫран тухса ӳкет, пурӑнас та пурӑнас килет. Ӑс-хакӑл ҫутӑ ӗмӗт ҫурататать. Эх, ҫакнашкал сехетсем пурнӑҫӑмӑрта час-часрах пулсанччӗ!

Ҫӗнӗ платье тӑхӑнакана чӗпӗтес йӑлана аса илчӗҫ хайхисем. Чӗпӗтес вырӑнне ҫурӑмӗнчен лӑпкарӗҫ. Тӑванла ыталаса та чуп туса ӑсатса ячӗҫ Ҫирӗклӗх хӗрӗпе унӑн кӳрши ырӑ шухӑшпа хӑнана килнӗ Кудряшовсене.

Григорий Михайлович кӳршӗ киле Розалия Руслановна патне пурӑнма куҫсан, иккӗшӗ виҫ кунранах ял Советӗнче ҫырӑнчӗҫ. Хайсем саккун йӗркипех мӑшӑрланни ҫинчен Сергей Львов салтака ятарласа ҫырса пӗлтерчӗҫ. Шӑллӗ вӑрах кӗттермесӗр виҫ кӗтеслӗ ҫырупа хуравларӗ: аппӑшӗпе Григорий Михайлович мӑшӑрланнине ырласа саламларӗ. Аппӑшӗ епле пурӑнасси пирки шӑллӗ текех ассӑн сывласа хуйхӑрмасть ӗнтӗ. Ҫырура чӑн-чӑн юратупа, килӗштерсе, ӗмӗр тӑршшӗпех пӗр-пӗрне пӑрахмасӑр пурӑнма сӗнни те пур. Розалия Руслановна тинех чун ҫунатне пӗтӗм анлӑшӗпе сарса ячӗ.

Репродуктор фронтри хыпарсене пĕлтерсех тăрать. Хула хыççăн хула ирĕке кăларать Хĕрлĕ Çар. Аслă Çĕнтерӳ çывхарнăçемĕн çывхарса килни сисĕнет. Çавна май вăй хурсах ĕçлес килет. Григорий Михайлович мăшăрĕпе пĕрле тул çутăлнă-çутăлманах теплицăна васкать, кунĕпех ырми-канми тăрмашать. Çывăрма выртать - ыранхи ĕç çинчен шухăшлать.

Григорий Михайлович хăй çăтăр-çатăр хĕрарăмсемпе кăлăхах çыхланнине, хула пасарĕ тăрăх пистолет шыраса çӳренине ӳкĕнсе аса илет. Розалия Руслановнăсăр пусне, ăна юбка тăхăнаканни урăх никам та кирлĕ мар. Мăшăрĕ купăс калама ларсан, ун çине куç илмесĕр пăхса тăрать. Григорий Михайлович гитарăпа савăк кĕвĕсем янăраттарма тытăнсан, Розалия Руслановна тутисене тăп тытать, хĕпĕртӳллĕ питпе, куçне çиçтерсе тăнлать. Сăмах май каласан, гитарист унчченхи пек тăсăмлă та тунсăхлă, шухăшлă та хурлăхлă кĕвĕсем калама пăрахнă ĕнтĕ. Иккĕшĕ икĕ инструментпа юнашар ларса çемĕ хыççăн çемĕ шăрантарма пуçласан, пӳрт ум пахчинчи шăпчăк та шăпланать. Ытти çемĕсемсĕр пусне, ăна купăссăпа гитарист юратакан “Шур хурăнăн мĕн хуйхă?“ тата “Атте ятне çавах ярас мар” юрăсене тăтăшах тăнлама тивет. Купăссăпа гитарист пӳрт тулли савăнăç кӳреççĕ.

Теплицăра ĕç-пуç ăнăçса пырать. Унта чечексемпе пĕрлех симĕс сухан, укроп, петрушка ӳстерсе сутма хăнăхрĕç упăшкипе арăмĕ. Çитес çул хăярпа помидор юр кайиччен çитĕнтерсе сутма ĕмĕтленеççĕ çĕнĕ çынсем. Çавна май икĕ платник - сухаллă стариксем çĕнĕ теплица ăсталаççĕ. Хула пасарĕнче колхоз хăй ячĕпе вĕр-çĕнĕ киоск уçрĕ, унта пилĕк минутранах ăшăтакан тимĕр кăмака (буржуйка) вырнаçтарчĕ.

- Кăмаки хăй çур пуслăх кăна, ăшшине вара пин тенкĕлĕх парать, - мухтать ăна Розалия Руслановна. Упăшки хăйне илме килнĕ тĕле пĕтнĕк курăкĕпе чей вĕретет. Кашнинчех ăна куç пек кĕтет.

Григорий Михайловичăн чăн-чăн юратăвĕ те, нимĕнпе виçейми пысăк телейĕ те юнашарах пулнă иккен. Тăван ялтах, кӳршĕ килтех. Çав ырлăхсене вăл таçти хăяматри Юманайĕнче кăлăхах шыраса çӳренĕ-мĕн.

# КАШКĂР ВĂРМАНАЛЛАХ ПĂХАТЬ

Приказра кăтартнă вырăна батальон вăхăтра çитрĕ. Речĕсем сайралнă тата ĕшенсе çитнĕ подразделени тыла канма тухать-мĕн, унăн позицийĕсене штрафбат йышăнмалла. Канма тухакан подразделени командирĕ тата штаб пуçлăхĕ позицине карттă тăрăх паллаштарнă хыççăн Пожеданов комбат тата Майоров замполит тавралăха тĕплĕ рекогносцировка турĕç, хăш ротăна ăçта вырнаçтармаллине татса пачĕç, каçпа кашни рота умнех секретсем ячĕç.

- Пĕрремĕш ротăран гинеколог кайтăр. Кампа каймаллине хăй суйласа илтĕр. Тăхта-ха, хут мурĕпе Заметкинпа пит килĕштерет вĕт. Унпа пĕрле кайтăр, - сĕнчĕ Телегин старшина.

- Кирпĕч шутланисен чĕлхине манмалла сирĕн. Гинеколог мар - Кирпичев сержант. Сирĕн ротăра хут мурĕ те çук, Заметкин хĕрлĕармеец пур, - асăрхаттарчĕ старшинана Майоров замполит. Хăй вăл майор мар, капитан, хушамачĕ кăна аслăрах званине аса илтерет. Кирпичев сержантпа Заметкин автоматчика капитан задание уçăмлăн ăнлантарчĕ.

- Нейтраллă хушлăхра, тăшман позицийĕ çывăхĕнче, вăрттăн "йăва" тăвăр. Çичĕ ют мĕн хăтланнине биноклĕпе тимлĕн сăнăр. Мĕн те пулин сиксе тухсан, телефонпа пĕлтерĕр. Тул çутăличчен вырăнтан ан тапранăр. Асăрханullă пулăр: шинель çинче мар, шинельпе таврăнăр!

Секрета тухнă сержантпа рядовой салтак хăтлă вырăн çӳллех мар тĕмсем хыçĕнче тупрĕç. Тăшман траншейи çывăхрах, биноклĕпе тинкерсен симĕс туратсемпе витнĕ хăмăр тăм йăрăмне уйăрса илме пулать. Тăм йăрăмĕ хыçĕнче тăшман мĕн тунине турă кăна пĕлет.

Хуралти нимĕҫсене кичем пулмалла: сайра хутра сăлтавсăрах перкелешме пуҫлаççĕ. Хăйсене хирĕç позици йышăннă ҫĕнĕ подразделени ҫĕрле кĕтмен ҫĕртен тапăнасран шикленсе-и е урăх сăлтавпа фашистсем ҫук-ҫук та пĕлĕтелле ракетăсем вирхĕнтереççĕ.

Тĕм хыҫĕнче тапранмасăр тенĕ пек выртасси тӳшек ҫинче йăраланасси мар. Ҫĕр сулхăнĕ ӳте шинель витĕр ҫапать. Ир енне ҫакă вăйлăнрах сисĕне пуҫларĕ. Ҫапах тăрса сиккелеме, утса ҫӳреме юрамасть. Нимĕҫсем секрета асăрхаса пеме пуҫласан куҫса выртма тăпрана ҫурри таран пусăрăнса кĕнĕ лаптака чул асăрхарĕ сержант. Юрать-ха ҫĕнĕ "йăва" кирлĕ пулмарĕ.

Тул ҫутăласпа хуллен чăштăртатнă сасă тăшман енчен мар, хамăрăннисем енчен илтĕне пуҫларĕ. Кирпичев та, Заметкин та хыҫалалла ҫаврăнса пăхаççĕ. Никам та курăнмасть. Чăштăртатнă сасă пĕрре илтĕнет, тепре ҫухалать. Упаленеççĕ-упаленеççĕ те чарăнса тăхтаççĕ, ахăр. Ҫакăн ҫинчен Кирпичев телефонпа шăппăн ротăн хурал нарядне пĕлтерчĕ.

Секретрисен персе шăв-шав кăларма юрамасть. Татах та тимлĕрех пулас шутпа иккĕшĕ те сывламасăр тенĕ пек выртаççĕ. Часах икĕ мĕлке шуса ҫывхарни курăнчĕ. Аллине кинжал тытнă пулин те, Заметкинăн ҫан-ҫурăмĕ сăрр! турĕ, ҫӳҫĕ-пуҫĕ вирелле тăрса кайрĕ. Сержантăн та шăнăрĕсем хĕлĕх пек туртăнса ларчĕҫ.

Мĕлкесем секрет патнех ҫывхарчĕҫ. Аллисенче иккĕшĕн те тем йăлтăртататать: вăрăм ҫĕҫĕсем пулма кирлĕ. Капитанпа лейтенант иккен погонĕсем тăрăх. Тумĕсем рядовой салтакăнах.

- Пире ҫак вырăнтан вăрттăн тăшман енне каҫса кайма хушнă. Чарса ан тăрăр... - пăшăлтатса хушрĕ капитан.

- Пире унашкал кăтарту паман. Пăрахăр ҫĕççĕрсене, - хирĕҫлеме юрамасла пăшăлтатса хушрĕ сержант.

Лешсем иккĕшĕ те секретрисем ҫине сиксе ӳкрĕҫ. Сержант хăйалти капитанăн аллине хăвăрт ҫыхса лартрĕ. Лейтенант вара Заметкина ҫĕҫĕпе хулĕнчен амантма ĕлкĕрчĕ. Ҫав хушăра хамăрăн икĕ салтак пластунла шуса ҫитрĕҫ. Икĕ

Илем кӳрет ҫав кӑна.
Ялта каччӑ пит нумай,
Чун юратни пӗрре ҫеҫ,
Мана кирлӗ ҫав кӑна.

Ытла та лайӑх юрӑ шӑрантарчӗ Розалия Руслановна. Кашни ҫаврӑмнех вырӑсларан чӑвашла хӑех куҫарса пычӗ. Ун аллинчи купӑс юрра кӗмӗл кӗвӗпе илемлетрӗ. Ачалла ҫӑварне карсах итлекен Григорий Михайлович гитара ярса тытрӗ.

- Пикеҫӗм, шӑпчӑкӑм, юрла тепре ҫак юррах. Эпӗ сана хамӑн пӑнтӑртипе пулӑшса пырам, - сӗнчӗ вӑл хӗре. Хӳхӗм юрӑ тепӗр хут янӑрарӗ.

- Сан юррусем-кӗввӳсем итлесе тӑранайми. Сӑмахӗсем чуна пырса тивеҫҫӗ, - хӗр аллине пырса чӑмӑртарӗ Геннадий Иванович. Юрлакан хӗр ҫине куҫ илмесӗр пӑхса ларнӑ Лариса Петровна ӑна питӗнчен темиҫе хут чуп турӗ.

- Юрру чун-чӗрере ырӑ туйӑмсем вӑратать. Пӗр-пӗр ансамбльте кӑна юрламалла та ҫав санӑн - чечек теплици хӑйӗнчен вӗҫертесшӗн мар, ахӑр. - Унтан Лариса Петровна вӑртах Григорий Михайлович еннелле ҫаврӑнчӗ: - Эсӗ тата мӗн? Лайӑх юрӑшӑн хӗре тав тума шутламастӑн-им?

Григорий Михайлович ҫураҫма пынӑ хӗр пекех хӗрелсе кайрӗ. Мухтав сӑмахӗсем каласа, хӗре ҫурӑмӗнчен ҫупӑрларӗ, пуҫне хӗр пичӗ патнех пӗшкӗртнӗччӗ - пушшех вӑтанса кайрӗ те хӑй вырӑнне ларчӗ.

- Э, арҫын мар, тӑм шӑхличӗ кӑна эсӗ. Хӗре ак мӗнле тав тӑваҫҫӗ... - Лариса Петровна хӑйӗн упӑшкине мӑйӗнчен ыталарӗ те ӑна питӗнчен те, тутинчен те ҫине-ҫинех чуп турӗ.

- Ан та ӳкӗтле, Лариса Петровна. Пурпӗр хӑяймастӑп. Розалия Руслановна манран тӑхӑр ҫул ҫамрӑк. Эпӗ вара - пули-пулми хӗрарӑмсемпе ята янӑ хусах...

Геннадий Ивановичпа Лариса Петровна пӗр-пӗрин ҫине кӑн-кан пӑхса илчӗҫ, сасӑпа вара нимӗн те каламарӗҫ. Розалия Руслановна пуҫне усрӗ, куҫӗ тӗтреленчӗ.

Чеен пӑхакан Лариса Петровна упӑшкине хӑлхинчен кулараххӑн ҫапла пӑшӑлтатрӗ: "Григорий Михайловича авлантарма ятарласа килтӗмӗр пулсан, тӗллеве пурнӑҫламасӑр каймастпӑр..." Унтан ҫарти командир сассипе татӑклӑ приказ пачӗ:

- Григорий Михайлович, халĕ сана черет çитрĕ. Эсĕ те юрласа кăтарт хăвăн юрруна!

- Питĕ, питĕ итлес килет. Тархасшăн, кăмăл тусам! - ырларĕ хăна сĕнĕвне Розалия Руслановна.

Григорий Михайлович ĕнер çӳçне хулари парикмахерскинче кастарнă, шăрт пек хытă мăйăхне ирпе хăех яп-яка хырнă. Вăл салтакăн тап-таса çуса тасатнă, утюгпа тăрăшсах якатнă гимнастеркипе тата шăлаварĕпе. Супăнь çук та, вĕсене Розалия Руслановна сĕлтĕпе, амăшле каласан, кĕл тăррипе çуса пачĕ. Мĕн вăл кĕл тăрри? Кĕл ярса вĕретнĕ шыв. Тăрăлтаратăн та - кĕл тăрри пулчĕ те. Çапла тума хĕре амăшĕ вĕрентнĕччĕ. Кĕпе-йĕме кĕл тăррипе çумасан шуралмасть, кăвакарса çеç каять. Утюгласа тирпейленĕ таса тум тăн-тăн кĕлеткеллĕ Григорий Михайловича кĕрнеклĕх кӳрет.

- Ну, юрĕ. Эпĕ тархаслаттаракан йышши мар. Момент пĕрер çавра юрласа кăтартатăп, - килĕшрĕ хайхи салтак. Унăн куçĕ хĕрĕн çуттăн йăлкăшакан куçĕпе тĕл пулчĕ. Иккĕшĕн те куçĕсем тинкерсе пăхаççĕ, ăшă хĕм сапаççĕ. Григорий Михайлович каллех гитара тытрĕ. Ку музыка инструменчĕн грифĕнчен кивелнĕ те тусанланнă хăю выранне халĕ вĕр-çĕнĕ симĕс хăю çыхса янă. Çакна никам та мар, Розалия Руслановна тунă. Чечек куршакĕсем хăтлăх кӳрекен пӳртре кĕçех хӳхĕм юрă илтĕнчĕ.

## АТТЕ ЯТНЕ ÇАВАХ ЯРАС МАР

Вăрман витĕр утса тухнă чух
Уртăш йывăç юлчĕ тайăлса.
Эпир ялтан тухса кайнă чух
Тăванăмсем юлчĕç хуйхăрса.

Çыр хĕрринчи хура хурлăхан
Ирхи сывлăмпалан шапарать.
Эпĕ юлтăм ĕнтĕ хурлăха,
Йывăр хуйхă мана пусарать.

Тухать пĕлĕт, пĕлĕт хуп-хура,
Тата мĕн çăвасси, ай, пур-ши?
Ай-хай пуçăм, çакă пурнăçра
Тата мĕн курасси, ай, пур-ши?

Ĕшенсен те юртсам, урхамах -
Каяс çĕре пурпĕр каймалла.

- Айăпа кĕнисене уйрăлу сăмахĕ паратпăр. Калăр, Корольков! - хушрĕ комбат.

- Манăн каламалли çук, - çаплах пуçне çĕклемерĕ Корольков. - Хăвăра мĕн кĕтет? Епле-ши ăраскалăр? Паян çакăнта пирĕн юн тăкăнĕ, ыран ак пурсăр та çак уйра выртса юлатăр...

Турра те ĕненет, те çук, кăкăрĕ çине хĕрес хыврĕ, унтан хавхануллă сасăпа кăшкăрса ячĕ: - Сывă пултăр Расçей!

Валетовăн сывпуллашу сăмахĕ пăлханулларах та çыхăнусăртарах пулчĕ.

- Эпĕ сутăнма шутламан. Разведкăна кайма кăна килĕшнĕччĕ. Каçар, Тăван çĕршыв!

Замполит сăмах илчĕ.

- Кирек мĕн калăр та, çын шăпи чăн малтан хăйĕнчен килет. Çын йăнăшма пултарать, чĕрипе çынах юлать. Çын сутăнма пултарать - чунĕпе кашкăра тухать. Кашкăр вара вăрманаллах пăхать. Хăшне-пĕрне çынла пурăнса этемле вилме ўкĕтлени ним тĕшне те тăмасть иккен. Ку вăл кашкăра аш çиме пăрахса утăпа тăранса пурăнма хистенипе пĕрех. Пирĕн умра пуç усса тăракансен те çаплах пулса тухрĕ. Анчах çакă паллă: пирĕншĕн пуриншĕн те çуралса ўснĕ çĕршыв пĕрре кăна. Хамăрăн çĕрщывăмăр, тăван халăхăмăр умĕнчи айăпа юнпа тасатма, пуç хума е паттăра тухма эпир хамăр ирĕкпе килĕшрĕмĕр. Кам урăхла шутлама тытăннă, вăл штрафбатран каялла таврăнма та пултарать. Пирĕн хушăмăрта хăйĕн айăпне юнпа каçарттарнисем те пур ĕнтĕ. Çакăн çинчен Заметкин рядовоя документ хирти госпитале кайса паратпăр. Пĕр ўпкев çеç чĕрене касать: сутăнчăка тухасран хăш-пĕрисене сыхласа хăвараймарăмăр...

Кĕçех комбатăн çирĕп сасси илтĕнчĕ:

- Кам приговора пурнăçлама килĕшет, вунă утăм малалла!

Малтан строй хускалмарĕ, тапранмарĕ. Комбат куç харшийĕ çўлелле çĕкленчĕ. Тепĕр самантранах çиччĕн автоматсемпе мала тухса тăчĕç. Ик-виç минутран татăклă команда сывлăша çурчĕ:

- Пли!

Сутӑнчӑксен пурнӑç кустӑрми çакӑнта пӑлтӑр-палтӑр саланса кайрӗ.

- Ампӑ! Çитет çӗлен-калталла пурӑнма! - кӑмӑлне хытарчӗ Телегин старшина.- Шыв юххине хирӗç ишме хӑтланакансенчен тем те кӗтме пулать!

- Тав турра, текех алхасаймӗç...- тутине çиллессӗн пӑчӑртарӗ Ватӑ Пӑшатан - Яков Михайлович.

- Хамӑр çынсем çине текех алӑ çӗклеймӗç... Сутӑнчӑксен аллисем тахçанах хӑрса типмелле пулнӑ! - хаяр сӑнпа пӑхрӗ тӗшӗрӗлсе ӳкнисем еннелле Кирпичев сержант.

- Çылӑхлӑ чунсене турӑ çырлахтӑр! Айӑпӗсене ку тӗнчере каçармарӗç, леш тӗнчере те пулин каçарччӑр! - çине-çинех сӑхсӑхрӗ Протопопов хӗрлӗармеец, пачӑшкӑ чухне просвирньӑн çул çитмен хӗрне хӑй айне йӑтӑрланӑскер.

- Таси паха! - çӑмӑллӑн сывласа ячӗ строй пӗр шухӑшлӑн.

Фронтӑн ку тӑрӑхӗнче юлашки кунсенче лару-тӑру лӑпкӑ. Снаряд е мина теплерен пӗрре кӑна килсе ӳкет. Çанталӑк тӗтреллӗ, тӗксӗм те кичем, кӑмӑл-туйӑма çӗклентерекенни мар. Хӑрма пуçланӑ хуçӑк юман тӑррине фронт çывӑхӗнчен кайман анкӑ-минкӗ çӑхан вӗçсе пырса ларать. Хӑйне валли мӗн те пулин тупасшӑн, ахӑр. Пирӗн çынсем этем харрин куçне те çӑхана сӑхма памаççӗ. Шел, хӑйне ирсӗрле таптаса çӳренисен лӑстанкисене те çӗрӗн тӑпра ӑшне йышӑнма тивет.

* * *

Вӑрçӑччен журналистикӑра ӗçленӗ Заметкин хӗрлӗ армеец пурнӑçӗнче мӗн пуласси пӗтӗмпех кӗтмен çӗртен пулса пырать. Тӗлӗкре пушар курни чӑна тухать, тӗлӗке çырса кӑтартни автор ирӗк памасӑрах хаçатра пичетленет. Корректура вуланӑ чухне "Главнокомандующий" сӑмах тӗрӗсехчӗ, "американкӑпа" пичетленӗ чухне иккӗмӗш саспалли - "л" - тухса ӳкет те урӑх сӑмах пулса тӑрать. Çавӑншӑн лекет те ӗнтӗ Заметкин штрафбата.

Хирти госпитальте вăл Кондрат Корольковпа Валера Валетов, вĕсен финалĕ çинчен фельетон çырма тытăнчĕ. Лайăх астăвать-ха: короле тухиччен Кондрат кĕсъе вăрри пулнă. Тĕрĕссипе вăл кĕсьесем мар, сумкăсем пушатнă. Ар çынсем укçана - кĕсьене, хĕрарăмсем сумкăна чиксе çӳреççĕ. Мĕн тесен те арçынсем шăл çеммиех мар, çавăнпа вăл сумкăсенчи укçа кушилккисене кăмăлланă, халăх тĕркĕшнĕ тĕлте - пасарта-и, трамвай çинче-и - вĕсене бритвăпа каса-каса кăларнă.

Çавнашкал вак-тĕвеке аса илнĕ май хут çине ӳкерсе ларатчĕ Заметкин хăй патне палатăна Кирпичев сержант пырса кĕнĕ чухне. Заметкин сывлăхне пĕлме, ăна халиччен-хи пур айăпсенчен те хăтарнине пĕлтерме комбат сержанта хирти госпитале ятарласа янă иккен. Йĕрки çапла: çапăçура паттăра тухсан е амансан, штрафника тĕппипех - хăйсем калашле, пырши-пакарти таранах - каçараççĕ. Пожеданов комбат çакăн çинчен ятарласа хатĕрленĕ бланкпа пичет пуснă хут парать. Заметкина сержант çавнашкал документ пачĕ, çав ятпа госпиталь хуçисенчен вăрттăн черкке тултарма та манмарĕ. Ара, ку кучченеçе Пожеданов хăй парса янă-çке-ха.

Сержантпа салтак хĕпĕртесех вăрах калаçса ларчĕç. Мĕн çинчен кăна пуплемерĕç пулĕ. Штрафбатри вĕресе тăракан пурнăçа, иккĕшĕ пĕрле секрета тухнине аса илчĕç. Юлташĕсем-тусĕсем çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ Заметкин.

- Каçарăр-ха, Борис Ларионович, иксĕмĕре тепре тĕл пулма май килĕ-ши? Хăвăр çинчен мĕн те пулин каласа кăтартăр-ха...

Çук, хăй çинчен пакăлтатма юратмасть Кирпичев. Çапах тепрер черкке ӳпĕнтерсен, унăн та чĕлхи салтăнчĕ. Черкки черккех мар-ха ĕнтĕ, снаряд гильзинчен ăсталанă пĕчĕкçеççĕ курка кăна. Хаяр шĕвек тултарсан куркари те пурпĕрех пуçа каять, кăмăла çемçетет. Сержант сывпуллашса тухса кайсанах вăл мĕн каласа панине Заметкин тетрадь тулли çырчĕ. Малаллине унăн тетрачĕ тăрăх çырса кăтартатпăр.

# ШĂТНĂ КУРĂК ЎСЕТЕХ

Кирпĕч завоччĕн директорĕ, ватă енне кайнă Марков, отпуска тăван хĕрĕ патне Новосибирска кайрĕ те унтан каялла таврăнаймарĕ. Ăна пенсионер пулас шухăш парăнтарчĕ пулмалла. Директор ĕçĕсене вăхăтлăх гуса пыма Кирпичев инженера тиврĕ. Çавăнпа ăна тĕп хулана вырăнти промышленность управленине час-часах кайса çӳреме тивет.

Райĕçтăвком председателĕн хĕрне, Ларисăна, вăл çывăхран пĕрремĕш хут чугун çул вокзалĕнче хĕвеллĕ çурхи кун курчĕ. Пысăк пуçлăхăн пиçнĕ çырла пек чипер усрав хĕрĕ Хусанта вĕренни çинчен вăл унччен илтнĕччĕ-ха, анчах унпа курнăçма тӳр килменччĕ. Хăй хыçĕнчен вакунтан хĕр чăматанпа тухнине курсан, Кирпичев ăна пулăшма кăмăл турĕ. Хĕре вокзал умĕнче çăмăл автомобильпе тăван мар амăшĕ кĕтсе тăрать иккен. Нонна Ардалионовна студенткăна ыталаса питĕнчен чуп турĕ, машинăна кĕрсе ларма пулăшрĕ. Кирпичев айккинелле пăрăнасшăнччĕ ĕнтĕ, кабинăран хĕр пуçне кăларчĕ.

- Тăхтăр-ха, сире таçта курнă пек. Ăçталла çул тытатăр?
- Сирĕн пекех Хурăнкасалла...
- Эппин пĕрле каяр... - куçне çиçтерсе илчĕ хĕр.
- Çук, çук, служба машини пассажирсем валли мар... - татăклăн хирĕçлерĕ шофер. Вăл Кирпичева курсанах палларĕ, анчах унпа туслă мар. Директор хевтеллĕскер ăна çурт лартма çителĕклĕ таран кирпĕч памасăр тарăхтарнăччĕ. Ун чухне райĕçтăвком председателĕ Косолапов хăй хушсан кăна завод хуçин кăмăлĕ çемçелнĕччĕ. Паллах, çакăн çинчен Лариса пачах пĕлмест, çавăнпа шофер çине сиввĕн пăхса илчĕ.

- Машина мана кĕтсе илме килнĕ. Эппин, халлĕхе унăн хуçи эпĕ. Ырă рыцарь, кĕрсе ларсамăр юнашар! Пĕрле çул

çӳреме çав тери лайăх! - сенкер куçне тепре çиçтерчĕ хĕр.

Пуçлăх хĕрне хирĕçлеме хăяймарĕ шофер. Кабинăн кайри ларкăчĕ хыçĕнчен тăлăп кăларчĕ те сивлектерехххĕн хĕр ури çине пăрахрĕ.

- Пĕркĕр хĕр урисене - шăнмалла ан пултăр...

Шофер сĕнĕвне пурнăçлама Нонна Ардалионовнăна Кирпичев хапăл тусах пулăшрĕ. Çавăн чухне хĕрĕн вĕри чĕркуççийĕ ăна пĕçертсе илнĕнех туйăнчĕ. Амăшĕпе йĕкĕт хушшинче ларать Лариса. Машина кустăрмисем ланкашкана лекмессерен хĕр кĕлетки пĕрре унталла, тепре кунталла сулăнса каять. Хăйĕнчен кирпĕч заводĕнчи çавра кăмакари пекех вĕри çапать.

Пассажир Нонна Ардалионовна çине тĕсесе пăхать: ку хĕрарăм чĕрĕ кирпĕч евĕр кăпăшка. Çакăн пирки, ахăр, ача çуратса парса упăшкине савăнтарайман. Кирпичев сивлек шофер çине те сăнаса пăхать: типшĕм сăнлă çак арçын хăлтăркалă кивĕ кирпĕче аса илтерет. Йĕкĕт куçне Лариса çинелле тĕллет: ку хĕр çавра кăмакаран тин хĕртсе кăларнă паха кирпĕч пекех тăпăл-тăпăл. Анчах унран мĕншĕн çакнашкал вĕри çапать-ши?

Ыйту тупсăмне йĕкĕт каярахпа пĕлĕш тухтăр Павел Павлович Павлов патĕнче пĕлчĕ.

- Тин кăна Нонна Ардалионовна шăнкăравларĕ. Хĕрне гинеколог кирлĕ иккен... - хура мăйăхне чĕтретсе илчĕ тухтăр.

- Косолапов мăшăрĕ-и?

- Çавă.

Кирпичев пуçне теветкел шухăш пырса кĕчĕ.

- Эсир мĕнле шутлатăр: эпĕ гинеколога пултараймăп-ши?

Тухтăр малтан йĕкĕт мĕнлерех шухăш тытнине ăнкараймарĕ, унтан кулса ячĕ:

- Калăр тӳррипе - юрату серепине çаклантăр-им?

- Хам та пĕлместĕп... Магнит пекех хăй патне туртать мана пуçлăх хĕрĕ... Анчах Нонна Арадалионовна мана хĕр яхăнне те ярас çук. Ăна качча парас-тăк упăшкипе кăна тăрса юлать-çке-ха!

- Пуçлăх хăй пĕлсен? Мана та, сана та кутран тапать...

Икĕ тус вăрах иккĕленсе тăмарĕç. Тухтăр кĕçех гример ĕçне пуçăнчĕ. Пите урăх сăн кĕртме аслă сестра кирлĕ сăрă-

сем тупса пачӗ. Сӑмси тӗлне хура мӑйӑх ҫыпӑҫтарсан, хура кӑшкарлӑ куҫлӑх тӑхӑнсан, Павел Павлович пекех пулса тӑчӗ кирпӗч ӑсти.

Хура мӑйӑхлӑ "гинеколог" халиччен кӗрсе курман ҫурта килсен, алӑка Нонна Ардалионовна хӑй уҫрӗ. Вӑл тухтӑр ҫине иккӗленереххӗн пӑхса илчӗ: чӑнах та Павел Павлович-ши ку е урӑххи? Тухтӑрӑн шурӑ халачӗ ҫинче "П.П.П." саспаллисене курсан, тулли кӗлеткеллӗ хӗрарӑм хӑйпе упӑшки хушшинчи хутшӑнусем пирки канашласа пӑхасшӑнччӗ, лешӗ алӑ кӑна сулчӗ.

- Хӑвӑр пирки кайран... Амбулаторири кабинета пырӑр. Халӗ хӗрӗре кӑтартӑр!

Тухтӑрӑн сасси темле улшӑннӑ, ҫамрӑкланнӑн туйӑнчӗ Нонна Ардалионовнӑна, анчах ҫакна шарламасӑр ирттерчӗ. Паллах, ҫав хушӑра "гинеколог" чӗрине те ӑмансем кӑшларӗҫ. Хӑйне хӗр пӳлӗмне чӗнни вара тухтӑра лӑпланмалли паха паллӑ пулчӗ. Кӗҫех тухтӑр ӗҫе пуҫӑнчӗ.

- Мӗн ыратать? Чир диагнозӗ пирки хӑвӑр мӗн шутлатӑр?

Хӗр пуҫне амӑшӗ еннелле сӗлтрӗ:

- Иксӗртен те вӑтанатӑп. Мамӑран пушшех...

Тухтӑр хӑйне пациенткӑпа пӗрле хӑварма сӗнчӗ. Мӗн тӑвӑн, тухтӑр хушнине итлемеллех пулчӗ. Амӑшӗ пӳлӗмрен тухсан, йӗкӗт чипер хӗр чирӗн вӑрттӑнлӑхӗсене пӗлме пултарчӗ-пултарчех. Ара, пациентка хӑйӗн арлӑх органӗ ыратнине тӳрремӗн ниепле те каласшӑн пулмарӗ. Аялти хутра йӗркелӗх пӗтни, унта ҫанталӑк пӑсӑлни пирки кӑна именӳллӗн калакаларӗ. Паллах, тӗрӗслемесӗр нихӑш тухтӑр та диагноз лартаймасть, анчах хӗр аялти хутрине тӗрӗслеме ирӗк памарӗ: унта ку вӑхӑтра хӗрлӗ ялав ҫакнӑ-мӗн.

Чӑнах та, айван ҫав яш-кӗрӗм йышӗнчен тухса ҫитеймен Борис - аялти хутри хӗрлӗ ялав мӗне пӗлтернине тӑруках тавҫӑрса илеймерӗ. Лариса мӗн пирки чирленин сӑлтавне вара пӗлчӗ-пӗлчех: вӑл хулара шыв бассейнӗнче ишнӗ чухне шӑнса пӑсӑлнӑ иккен. Хӗр шывра ишессипе ӑмӑртусене те хутшӑнать-мӗн, парнесемпе дипломсем пӗрре ҫеҫ мар ҫӗнсе илнӗ.

Лариса Сидоровна тухтӑра виҫӗ-тӑватӑ кунран тепре килме сӗнчӗ.

Тӑватӑ кун иртсен, Кирпичев сӑмси тӗлне каллех хура мӑйӑх ҫыпӑҫтарчӗ, хура кӑшкарлӑ куҫлӑх тӑхӑнчӗ, пациент-

ка патне иккӗмӗш хут кайрӗ. Хальхинче унӑн хӑюлӑхӗ ӳсрӗ.

- Касарӑр та, тухтӑр тивӗҫӗпе сирӗн вӑрттӑн вырӑнӑрсене тӗрӗслеме тивет. Труссине хывӑр... - хирӗҫлеме юраман сасӑпа хушрӗ вӑл.

Тухтӑр ҫине хӗр чӑрр! пӑхрӗ те ӑна самантлӑха тепӗр май ҫаврӑнса ларма сӗнчӗ. Тепӗртакран тухтӑр хӗре аялти кӗпине ҫӗклеме хушрӗ.

- Э, ҫук, ар вырӑнӗсене ар ҫына куҫпа пӑхма ирӗк памастӑп... - янахне сиктерсе илчӗ хӗр. - Унта илӗртмелли нимӗн те ҫук. Ана куҫпа кураканни аякалла пӑрӑнса утӗ...

Тухтӑр кулараххӑн пӑхса илчӗ, куҫлӑхне юсаса лартрӗ те тепӗр сӗнӳ пачӗ:

- Сӑмах паратӑп - ыраттармастӑп, ал тупанӗпе кӑна хыпашласа пӑхам!

- Кӗпе аркине сирмесӗр... - пуҫне пӗкрӗ хӗр, вӑтаннӑран пичӗ кӗтмел пек хӗрелсе кайрӗ.

Диагноз ҫакнашкал пулчӗ: ҫӑмарталӑх шыҫӑнса тӑртаннӑ, аман вӑрлӑх ҫулне инфекци ҫакланнӑ. Ирсерен фельдшерица килӗ, пенициллинпа укол тӑвӗ...

Иккӗмӗш тӗлпулу ҫинчен ҫамрӑк инженер-“гинеколог” каласа панине итлесен, Павел Павлович хырӑмне сӑтӑра-сӑтӑра ахӑлтатрӗ.

- Хыпашласа пӑхрӑн эппин... Сӑнаса пӑхман эпӗ пысӑк пуҫлӑхӑн усрав хӗрӗ ҫине - чӑнахах чипер-им?

- Татӑклӑн калама пултараймастӑп. Анчах унра кӑсӑкки, кӑмӑла килекенни ҫук мар. Хӑйне лӑпкӑ тытни, пуҫне касӑртманни, хӑюллӑн хӑй шутланӑ пек тума тӑрӑшни кирек кама та сӑхлантарӗ, - хуравларӗ йӗкӗт.

Пациенткӑна сиплесси малалла тӑсӑлать. Темиҫе эрнерен Павел Павлович чеен куҫ хӗссе, Борис Ларионовичран ҫапларах ыйтать:

- Косолапова патне татах каятӑр-и е кӑмӑлӑр сивӗнчӗ-и? Чӑвашсем ҫимӗкчен ҫичӗ хут шыва кӗме хушнӑ. Ҫимӗк иртрӗ, шыв ӑшӑнса ҫитрӗ. Эсӗ пациенткӑна кӳлӗре шыва кӗме чӗн. Унӑн ар органӗсене шывра массаж туса пӑхӑр, - канаш пачӗ Павел Павлович.

Ҫапла майпа массаж тунӑ чухне хӗр тем сӑлтавпа - шывӗ сулхӑнрах пулнӑран-ши, ар ҫын алли тӗкӗннӗрен-и - чӗтре-

не-чĕтрене илчĕ.

Антибиотик пулăшрĕ-ши е шывра ишсе çӳренисем сиплĕх кӳчĕç-ши, юлашки вăхăтра Лариса хăйне самаях лайăх туякан пулчĕ. Çавраках шурччас питне юн тĕсĕ кĕчĕ. Температура яланхи нормăна ларчĕ. Пăрçа евĕр тар тумламĕсем çамки тăрăх юхма пăрахрĕç ĕнтĕ. Сенкер куçĕ çамрăклăх хĕмне сапакан пулчĕ. Чĕкеç çуначĕ пек хуп-хура çӳçĕ, парка калча пек çăраскер, хĕре çав тери илем кӳрет.

Шывра Лариса пулă пекех туять. Хĕр хăвăрт ишнĕрен Бориса унран юлса пыма тивет.

- Калăпăр, ишсе ывăнтăр. Ал-урана хускатмасăрах путмасăр выртма пултаратăр-и? Кăкăр тулли сывлăш сывласа илĕр, аллăрсене сарса, çурăм çине выртăр, урăрсене пĕрле тытăр. Ăхă, питĕ лайăх. Ку вăл ишсе ĕшенсен канма кирлĕ.

Çапла хăнăхтарчĕ хĕр йĕкĕте шывра ишмесĕр тытăнса тăма. Аллисен вăйĕпе кăна ишетчĕ Борис, урисемпе те ишме вĕрентрĕ ăна хĕр. Тата брасс мелĕпе чылай хăвăртрах ишме пулать иккен. Ку меслетпе усă курма та Бориса хĕр вĕрентрĕ. Çĕнĕ мелсене пĕлсе çитсен, йĕкĕт шывра хĕртен юлми пулчĕ.

Шыва кĕме Борис хĕре ĕç вĕçленсен, каç кӳлĕм, илсе каять. Ку вăхăта шыв лайăх ăшăнса çитет. Сулхăн шыв хĕр сывлăхне сиен кӳресрен шикленет йĕкĕт.

Шывра черетлĕ массаж тунă хыççăн пациенткăпа тухтăр-"гинеколог" çыран хĕрринчи хăйăр çинче хĕвелпе хĕртĕнсе ĕреххетленсе выртаççĕ. Хĕрĕн йăрăс кĕлетки çине Борис вăрттăн пăха-пăха илет. Лариса çакна асăрхамасть теме çук, пурпĕр нимĕн те шарламасть. Сасартăк хĕр ахăлтатсах кулса ячĕ.

- Сирĕн куçлăхăр аякрине çывăхлатмалли-и е сăмса умĕнчине курманран-и? Чугун çул станцийĕнчен пĕрле килнĕ чухне эсир куçлăхсăрах хитре рыцарьччĕ.

Ку сăмахсем йĕкĕтшĕн уяр кун аçа çапнă пекех пулчĕç. Вăл çăварне карчĕ, куçне чарчĕ. Ку мĕне пĕлтерет? Хĕр сăмахне малалла тăсрĕ:

- Хура мăйăхăра та салтса пăрахма вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Эпĕ сире мăйăхсăр ытларах та кăмăллана пулăттăм... Кăмăллă тухтăрăм, эсир хура мăйăхăра сĕвсе пăрахăр, куçлă-

хăра хывăр. Яланхи пекех Борис Ларионович Кирпичев пулса тăрăр!

Хĕр çумĕнчен сиксе тăрасшăнччĕ йĕкĕт, лешĕ чарчĕ.

- Эппин эпĕ кам пулнине эсир пĕлетĕр? Хăçантанпа?

- Ман шутпа, ку вăл тупсăмлă ыйту мар. Паллах, куçлăхпа мăйăх сăн-пите урăхлатаççĕ, анчах вĕсем сассăра ылмаштармаççĕ-çке-ха. Эпĕ сирĕн кăмăллă сассăра пин çын хушшинче те çăмăллăнах палласа илнĕ пулăттăм...

- Ăнланаймастăп: инженер тухтăра тухнипе мĕншĕн килĕшрĕр?

- Çавна та ăнланаймастăр-и? Мĕншĕн тесен кăмăллана йĕкĕт юнашар пулни хĕре çав тери килĕшет! Йĕкĕчĕ те хĕр патне çав сăлтавпах килсе çӳрени пирки эпĕ пачах иккĕленместĕп! Эпĕ сире палласа илнĕшĕн ан кӳренĕр. Мана пĕр чиртен сыватрăр, эпĕ халь урăх чирпе - юратупа асапланма пуçларăм...

Ак тамаша: чĕлхи çĕтнĕ йĕкĕте Лариса питĕнчен, куçĕнчен чуп турĕ те хăвăрт тумланса килнелле чупрĕ.

Шăтнă курăк ӳсетех. Пĕр пуçланнă юрату та вăйлансах пычĕ. Çамрăксем иккĕшĕ те пĕрешкел чунлă пулнине ăнланса çитрĕç. "Эпир", "эсир" тесе калаçасси "эпĕ, "эсĕ" çине куçрĕ.

Косолапов хваттерне гинеколог пулса çӳреме пăрахсан, йĕкĕт кăмăлĕ палăрмаллах сӳрĕкленчĕ, пурнăçĕ вĕрлĕк карта пек кичемленчĕ. Ара, халь ăна хĕрпе сайра хутра çеç курнăçма тивет-çке-ха. Заводра та ĕç-пуç ăнăçса пырать теме çук. Кирпĕч çапмалли тăм турттарма транспорт çитмест. Пĕр трактор е автомашина тупсан ĕç çăмăлланĕччĕ те, ниçтан тупма май килмест. Райĕçтăвком председателĕ Косолапов та пулăшмалли май тупаймарĕ.

* * *

Район центрĕнчи ятлă çынсен ывăлĕсем, Ульян Усмановпа Уртем Урмаков, Канашри финанс техникумĕнче вĕренеççĕ, эрнере пĕрре канмалли куна Хурăнкаса, килĕсене, таврăнаççĕ. Усманова яла час-часах таврăнма хистекен сăлтав та пур: чунĕпе шкулта пĕрле вĕреннĕ Ульяна Герасимова еннелле туртăнать. Ку хĕрача шкулта вĕреннĕ чухне вăтанчăклăн та сăпайлăн пуçне пĕксе çӳретчĕ. Ульян ăна Канашра пĕрле

вёренме ўкётленёччё, килёшмерё - кирпёч заводёнче ёҫлеме вырнаҫрё. Кино курма та, ташă каҫёсене те пёрле каятчёҫ. Ҫитёнен хёр юлашки вăхăтра чăхăмлама пуҫларё. Турта хушшине тăма пёлмен кёсре евёр аяккалла тапса сикет.

- Пёр вёҫёмсёр махорка мăкăрлантаратăн. Сăмакуна стаканра пёр пўрнелёх те хăвармасăр шалт та щалт тутаратăн. Ҫамрăклах ҫапла хăтланатăн-тăк, пурнăҫ ҫынни мар эсё... - тутине пăрчё Ульяна иртнё канмалли кун.

- Туртман, ёҫмен ар ҫын пур-ши вара ҫут тёнчере? Ун пирки калаҫни ҫăвар тутине сая яни кăна. Ан хирёҫ, Уляҫăм. Эпё сана чунтан юрататăп.

- Мён юратăвё пултăр пăсăлсах пыракан йёкётпе ырă ёмётлё хёр хушшинче...

Ҫынлăха упрама хистекен кăмăл-сипетлёх йёркисем пирки тем каларё Ульяна, унтан вăрт ҫаврăнчё те килне тарса кёчё.

Тепре яла таврăнсан, Ульян Урттеме ҫапла пёлтерчё:

- Эпё кёҫёр Ульянана турта хушшине тăратма шутлатăп-ха. Пёрле пымастăн-и?

Паллах, Ульян ăҫта, Урттем унта. Вёсене пёр чустаран пёҫернё темелле. Иккёшё те йăлтти-ялтти хăтланаҫҫё, калаҫнă чухне сăмахёсене сăвăрса тăмаҫҫё, хутли-хутлисемпе ҫине-ҫинех перкелеҫҫё. Яла килсен ёҫ тёлне пёлмеҫҫё, пёрехмай урам тăрăх янккаса ҫўреҫҫё.

- Кашкăртан хăрасан - вăрмана ура ярса ан пус, ҫылăхран шикленсен - каҫ урама ан та тух, - ҫийёнчех килёшрё юлташён сёнёвёпе Урттем. - Мана пурпёрех, пултăр ҫеҫ эрех. Вăл та тус кёрекинчех.

Килне иккёмёш сменăран ҫёрле таврăнакан Ульянăна икё тăсланкă хапха умёнче кётсе илчёҫ. Калинкке алăкне уҫса картишне кёрес хёре чун-чёри мунча хăрăмё пек хуралса ларнă Ульян ҫёре йăвантарчё те ҫăварне алă лаппипе хупларё, хапха умёнчех... пусмăрларё. Урттемё ҫывăхрах ахăлтатса кулса тăчё. Ҫёр чăтайми намăс курнă хёр аран-аран ура ҫине тăчё, пуҫё ҫурăлса тухасла ыратать, куҫё алчăраса кайнă.

Тепёр кун ирех Ульяна Герасимова завод директорё патне кайрё. Унпа канашланă хыҫҫăн, хăйне ирёксёрлесе мăшкăл тунăшăн Ульян Усманова саккун йёркипе айăплама ыйт-

са, прокурора хут çырса пачĕ. Ирĕксĕрленĕ майпа хĕрлĕхне çухатма тивни çинчен тухтăрсенчен тивĕçлĕ документ илесси чăрмавах пулмарĕ.

Хĕвеллĕ уяр кун кирпĕч завочĕн вăхăтлăх директорне Кирпичева парти райкомне чĕнчĕç. Унпа агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕ Фомкин питĕ вашават пуплерĕ, заводра массăлла ăнлантару ĕçне епле йĕркеленине ыйтса тĕпчерĕ. Унтан кĕтмен ыйту пачĕ:

- Сирĕн завод пысăк мар. Унта ĕçлекенсене ывăç тупанĕ çинчи пекех пĕлетĕр ĕнтĕ. Герасимовăна, Ульянана, паллатăр-и? Вăл хăш цехран? Мĕнлерехскер?

- Питĕ маттурскер. Кирпĕч хĕртнĕ çĕрте вăй хурать. Ăнланмастăп: мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ха вăл сире?

- Шăши утă капанĕ айне хăй кĕрет. Кайран лапчăтрĕ тесе капана айăплать. Çавнашкал пулса тухнă-ха ку чиперккепе те. Йĕкĕте айăпласа вăл суда панă. Тивĕçлĕ хутсене прокурор аллинчен каялла илме шутламасть-ши вăл? Директор ÿкĕтлесе тăна кĕртсен, килĕшмĕ-ши?

Акă мĕншĕн чĕннĕ иккен ăна райкома. Анчах прокурор патне кайма хĕре Кирпичев хăй канаш панă-çке-ха. Кунсăр пуçне, тÿрĕ кăмăллă çынна ун пек тума юрать-и-ха?

- Фомкин юлташ, Герасимовăпа эсир хăвăр пуплесе пăхăр. Мана унашкал тивĕçрен хăтарăр.

Кирпĕч завочĕн хуçи çине Фомкин ĕненмесĕрле пăхса илчĕ.

- Эпир унпа пуплерĕмĕр ĕнтĕ - килĕшмерĕ. Çавăнпа сире хутшăнтарас терĕмĕр. Ку вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эсир унран кăлăхах пăрăнатăр. Хăвăр пирки шутласа пăхăр: сирĕн авторитетăра ÿстерсех пымалла-çке...

Фомкин ÿкĕтлени нимĕнле усă та кÿмерĕ. Чыссăр ĕçе хутшăнма килĕшмерĕ Кирпичев.

- Агитаципе пропаганда пайĕ ку ыйтупа хăйĕн тÿрем тивĕçне пурнăçа кĕртеймен, - тараса çине хучĕ пай ĕçне-хĕлне пысăкрах пуçлăх, парти райкомĕн секретарĕ Усманов. Суд умĕн вăл тăхтаса тăмасăр Сироткин судьяна хăй патне чĕнтерчĕ.

- Ульяна Герасимова ĕçне еплерех пăхса тухасси пирки йыхравларăмăр-ха... Сирĕн шутпа мĕн кĕтет Ульян Усманова? - секретарь йĕкĕт хушаматне тем шутпа сассине хăпар-

тарах каларĕ. Судья çакна асăрхаманçи пулчĕ.

- Ку вăл суд ларăвĕнче паллă пулать. Халлĕхе нимех те калаймастăп. Уголовнăй кодекс епле хушать, ыйтăва çапла татса парăпăр.

- Ытлашши ан васкăр, Сироткин юлташ... Парти райкомне акă мĕн паллă: йĕкĕтпе хĕр шкулта вĕреннĕ чухнех туслă пулнă, арлă çыхăнăва хăйсен ирĕкĕпе кĕнĕ. Эппин, кунта мăшкăлласа ирĕксĕрлени çинчен сăмах та пулма пултараймасть...

- Аплах мар çав... Хĕр хăй те, тухтăрсем панă документ та урăххине çирĕплетеççĕ.

- Бюрократла хута ĕненмелле-и е хăй куçĕпе курнă чĕрĕ çынна? Урмаков кӳнтелен пачах урăхла калать-çке... Ăнланатăр-и ĕнтĕ райком шухăшне?

- Судья хăй тĕллĕн ĕçлет, никама та пăхăнмасть...

Çӳллĕ те тăлпан Сироткин пăлхануллăн ура çине тăчĕ. Хĕрсе кайнă Усманов та пуканĕ çинчен çĕкленчĕ. Кĕлетки тачкăмĕпе вăл та судьяран юлсах каймасть, кăштах лутрарах кăна. Иккĕшĕ те пĕр-пĕрин çине кашкăрла пăхаççĕ.

- Килĕшетĕп: судья хăй тĕллĕн ĕçлекен çын. Анчах эсир коммунист вĕт... - сассине хăпартрĕ Усманов. - Райкома пăхăнман çын партире тăма пултараймасть!

Ку сăмахсене Сироткин райкомра иккĕмĕш хут илтет ĕнтĕ. "Трудовик" колхозăн çĕнĕ председателĕ ял çыннисен тулă уйне кĕрсе кайнă хурĕсене, măйĕсене пăра-пăра, пĕр лав тиенĕ те аш-какай комбинатне хатĕрлев шучĕпе леçтернĕ. Хăй ирĕккĕн пуçтахла хăтланнăшăн халăх сучĕ ăна явап тыттарасшăн пулчĕ, анчах райком секретарĕ çакна тума яхăнне те ямарĕ.

- Ан кансĕрле çĕнĕ председателе ялта йĕрке тума! Эсĕ парти членĕ, райком хушнă пек ĕçле! - тăн пачĕ вăл ун чухне судьяна.

Ульяна Герасимова ĕçне пăхса тухнă чухне судья, хăй никама та пăхăнманнине пĕле тăркачах, райком кăтартăвĕнчен иртеймерĕ. Арлă çыхăну ирĕклĕ йĕркепе пулнă тесе йышăнчĕ суд. Приговор вуласа парсан, айăпланаканăн тенкелĕ çинче ларнă Ульян Усманов хăй мăшкăлланă хĕр тĕлĕнчен те, кирпĕч завочĕн директорĕ умĕнчен те каçăртнă пуçпа мăнаçлăн иртрĕ. Йĕкĕтĕн ашшĕпе амăшĕ вара Герасимовăпа Кирпичев еннелле çаврăнса та пăхмарĕç. Пусăрăнчăк кăмăллă хĕре, Ульянăна, темиçе кунран ăнсăртран урамра тĕл пул-

сан, пуҫне каҫăртнă Ульян тӳрех чышкă кăтартрĕ.

- Суд тăрăх ҫӳретнине манмăпăр. Аса илтермелли май тупăпăрах... - хура ҫĕленле чашкăрса илчĕ вăл.

Кирпĕч заводĕнче кĕтмен пăтăрмах сиксе тухрĕ: такамсем ҫĕрле сейфа уҫса ĕҫ укҫи пама хатĕрленĕ пысăк суммăна ҫаратса кайнă, пичетлемелли "Прогресс" машинкăпа арифмометра та хăйсенчен хăварман. Прокуратура следователĕ вăрăсене шыраса тупаймарĕ. Хурăнкассем Ульянпа Урттем хăйсен Канашри преподавателĕсенчен те хӳхĕмрех тумпа ҫӳреме пуҫланине курчĕҫ-ха, анчах ҫакна айăпламалли сăлтав теме ҫук. Ятлă ҫынсен ачисем апла та, капла та тумланма пултарĕҫ.

Хуйха ӳкнĕ Кирпичева йĕр ҫине ӳкме Лариса Косолапова пулăшрĕ. Унăн тантăшĕ - Хурăнкас хĕрĕ - Хусана кайса тир-сăран фабрикине ĕҫлеме вырнаҫнăччĕ. Ҫав хĕр патне апăрша Ульян Усманов машинкăпа пичетленĕ ҫыру ярать. Кĕтмен ҫĕртен илнĕ ҫав ҫырăва кăтартать те ĕнтĕ Ларисăна тĕлĕннĕ тантăшĕ. Ăна "Прогресс" машинкăпа пичетленĕ иккен. Тĕлĕнмелли ҫук: милици ҫав машинкăна кĕҫех Канашри финанс техникумĕн пĕр пӳлĕмĕнче тупать. Тутăхма пуҫланă арифмометр Урттем Урмаков килĕн нӳрлĕ тĕп сакайĕнче тупăнать. Чапрас каччă ăна пасара кайса сутайман, унпа усă курмалли урăхла май тупайман.

Следстви ăнăҫлă пынă вăхăтра Кирпичева телефонпа каллех парти райкомне чĕнчĕҫ.

- Мĕн ыйтупа? - хăюллăн ыйтрĕ вăхăтлăх директор. - Ҫарату ыйтăвĕ пулсан - пымастăп...

- Эсир асăрханулăрах калаҫăр-ха. Телефонпа пуплени урама тухса кăшкăрнипе пĕрех. Конкретлă сĕнӳ пур: ҫухатусене пĕтĕмпех компенсаци тăвăпăр, эсир судпа айăпласси ҫинчен ыйту хутне каялла илĕр...

- Пуҫ ҫине арман чулĕ йăтăнса антăр - каялла илместĕп. Ӳкĕтлени кăлăхах. Рабочисене ĕҫ укҫи ик эрне кая юлса патăм.

Ҫав самантрах телефон трубкинче ҫăт-ҫат туни илтĕнчĕ. Тепĕр вĕҫĕнче трубкăна хăпăл-хапăл хучĕҫ пулинех.

Ульян Усмановпа Урттем Урмаков темиҫе кун вунсаккăр тултарайман иккен. Ҫитĕннисен шутне кĕрсе ҫитейменнипе суд ҫав икĕ услапа виҫĕ ҫуллăха условнă хупмалла тесе йы-

шăнчĕ. Айăпланакансен тенкелĕ çинчен çăмăллăн сиксе тăнă Ульянпа Урттем унччен пекех Борис Ларионовичпа Лариса Сидоровна тĕлĕнчен пуç каçăртса та ихĕрсе иртрĕç. Икĕ çемьен ашшĕсемпе амăшĕсем вара суд пуçаракансем çине çиллессĕн те мăнкăмăллăн пăха-пăха утрĕç.

Кирпĕч завочĕ директорĕн пӳлĕмне "Улăп" колхоз председателĕ Яснов ĕç кунĕ вĕçленеспе пырса кĕчĕ, портфелĕнчен сĕтел çине тӳрех пĕр бутылка эрех тата пулă консервин банкине кăларса хучĕ.

- Лаша витине туса пĕтеретпĕр ĕнтĕ. Çивитти кăшкарне те майлаштартăмăр. Юрать-ха эсир пулăшрăр, Борис Ларионович. Тав тума ятарласа кĕтĕм. Консерва банкине уçма çĕçĕ тупăнать-и?

Çамрăк директор эрех-сăрапа туслă мар, çапах та кăмăллă çынпа, Ясновпа, пĕрер черкке ӳпĕнтерессинчен пăрăнма шутламарĕ. Ĕç-пуç пирки сăмах ылмаштарса илнĕ хыççăн вăл сĕтел ещĕкне уçрĕ. Ак тамаша: сунарçă çĕççи яланхи вырăнта çук. Ытти çĕрте шырасан та тупăнмарĕ. Консерва банкине пекĕпе уçма тиврĕ.

Черкке ӳпĕнтерес енĕпе Яснова та пултарулла теме çук иккен. Икĕ ар çын пайтах пуплесе ларчĕç пулин те, кĕленчери хаяр шĕвекĕн тĕпĕ пурпĕр курăнмарĕ. Çапла калаçса таталчĕç: "Улăп" колхоз строительсен бригадине килес çул та завода ĕçлеме ярать, мĕншĕн тесен хуçалăх тата ĕне вити çĕнĕрен туса лартма палăртать.

Йĕпе çине сапа тенĕ пекех, инкек çине синкек тупăнсах пычĕ: кирпĕч хĕртекен цехри Ульяна Герасимова кĕтмен çĕртен ĕçе тухмарĕ. Килне кайса пăхрĕç - хĕрĕ ăçтине амăшĕ те пĕлмест. Кирпичев ĕçрен таврăннă чухне Герасимовасен кил йытти Улайкка пĕве хĕрринчи хăвалăх хушшинче тем пирки йынăшсах вĕрнине асăрхарĕ. Йытă патне пăрăнса кĕрсен, Кирпичев хăва тĕмми хыçĕнче хура халатлă хĕр хускалми выртнине курах кайрĕ. Ак тамаша: Ульяна Герасимова вĕт ку! Директор хĕре аллинчен тытса пульсне тĕрĕслерĕ: чĕри тапма чарăннă, пичĕ кăн-кăвак, çӳçĕ сапаланнă. Халачĕ çинче юн тапса тухнă ункăсем пур.

Синкерлĕ тупăну çинчен директор васкасах прокурату-

рӑна телефонпа шӑнкӑравласа пӗлтерчӗ, анчах хӗре кам вӗлернине следстви эрне шыраса та тупаймарӗ. Ҫакӑ ҫеҫ палӑрчӗ: каҫхи сменӑран таврӑнакан хӗре такам пӗве хӗрринче кӗтсе тӑнӑ та хӑвалӑх хушшине сӗтӗрсе кӗнӗ. Унта ӑна ирӗксӗрленӗ, унтан ҫӗҫӗпе тӑватӑ тӗлтен чиксе вӗлернӗ.

Носов следователь кирпӗч заводӗнче ӗҫлекенсене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне прокуратурӑна допроса чӗнет. Кашнинех малтан пӗрешкел ыйту парать:

- Калӑр-ха, Герасимовӑна юлашки хут хӑҫан курнӑ эсир?

Марина Матвеева тӗп бухгалтер патне вара следователь завод кантурне килчӗ. Вӑраха кайнӑ калаҫура сикми куҫлӑ хӗр следствие мӗн пӗлтернӗ - пире паллӑ мар. Ҫавӑн хыҫҫӑн Носов прокуратурӑна кирпӗч завочӗн директорне хӑйне чӗнсе илчӗ, допроса урӑхла ыйтупа пуҫларӗ:

- Сирӗн ҫинчен хӗрсен кӗтӳҫи тесе калаҫҫӗ. Тӗрӗс-и ҫакӑ е суя-и?

Следовательрен Кирпичев кунашкал ыйту кӗтменччӗ, ҫавӑнпа ним калама аптӑрарӗ.

- Именсе ан тӑрӑр. Завод директорӗ гинеколог ремеслине пултарни пире паллӑ. Тӗп бухгалтера, Матвеевӑна, пӗрре мар хӗстерсе пӗлетпӗр. Эсир Ульяна Герасимова ҫине кушак аҫи пек пӑхни те вӑрттӑнлӑх мар. Ӑнсӑртран мар директор ӑна премии хыҫҫӑн премии панӑ, ҫутӑ сӑнне Хисеп хӑми ҫине вырнаҫтарнӑ...

- Тӑхтӑр-ха, Носов юлташ, сирӗн ку сӑмахӑрсемшӗн эпӗ кӳренме те пултаратӑп... - пӳлчӗ следователе Кирпичев.

- Ку сирӗн ирӗк! - ахӑлтатсах кулса ячӗ следователь. Унтан тӳрех нумайлӑ хисепрен пӗррелли ҫине куҫрӗ. - Эпӗ саншӑн текех Носов юлташ мар, гражданин следователь, эсӗ вара айӑпа кӗнӗ гражданин. Ӑнлантӑн-и? Кала тӳррине: Герасимовӑна юлашки хут эсӗ хӑҫан курнӑ?

- Ун виллине Улайккапа пӗрле хӑвалӑх хушшинче тупсан...

- Эпӗ ун ҫинчен мар, урӑххи пирки ыйтатӑп. Хӑвна парӑнма ӑна юлашки хут хӑҫан хистерӗн?

- Тупа туса калатӑп: ун ҫумне эпӗ нихӑҫан та сӗкӗнмен. Унашкал шухӑш ман пуҫра пачах пулман...

- Суятӑн! Сана, аслӑ пӗлӳ илнӗ ҫынна, директора тухнӑ ӗҫтеше, тӗрӗслӗхе пытарни пачах килӗшмест. Хӗр вилли юнкун

тупăннă. Юлашки хут эсĕ унпа ытларикун çĕрле пĕве хĕрринче тĕл пулнă. Кунта та хĕр сана хирĕç тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ таврари хупахсем лапчăннă, хăва тураттисем хуçăлнă. Эсĕ ăна ирĕксĕрленĕ те вĕлерсе хăварнă. Пирĕншĕн çакă кăнтăр çути пекех уçăмлă. Йышăнатăн-и ĕнтĕ хĕре хăвах вĕлернине?

- Çук! Эпĕ никама та вĕлермен! - ура çине сиксе тăчĕ Кирпичев. - Вĕлерме шутламан та...

- Эппин йышăнмастăн? Кăлăхах. Айăпăра таса чĕрепе йышăнни çăмăллăх кӳнине пĕлместĕр-и-мĕн? Акă эпир вĕлерӳ хатĕрне те тупрăмăр... Тен, ку çĕçĕ те сирĕн мар?

Следователь сĕтел çине шăмă аврлă çĕçĕ кăларса хучĕ. Ун аври çине картса "Б.Л.Кирпичев" тесе çырнă.

Допроса килнĕ çын пуçран мăлатукпа çапнă пек пулса кайрĕ.

- Эпĕ ăна çухатнăччĕ. Ăçтан тупрăр?

- Ăçтан, ăçтан... Паллах, хăвалăхран... Хĕре вĕлернĕ çĕртен... Ку çеç те мар, экспертиза хĕр алли çинче сан пӳрнӳ йĕрĕсене палăртнă. Ну, айăпна йышăнатăн-и е çук-и?

- Ан нулатăр, эпĕ лаша мар. Коммунист тасалăхĕпе калатăп: эпĕ халиччен никама та вĕлермен. Следствие малалла тăсăр: чăн-чăн вĕлерекене тупăр...

- Э, çук, çын вĕлернĕ гражданин. Следстви çакăнпа вĕçленнĕ тесе шутлатăп. Хурăнкасран ниçта та тухса кайма-стăп тесе çакăнта алă пус. Прокурор тĕп хуларан таврăнсан, сана тытса хупма санкци парасса кĕтĕпĕр.

... Шăтнă курăк ӳсетех. Пĕр тапраннă юрату та сӳнмест, вайлансах пырать. Лариса йĕкĕте мĕн тери хĕрӳллĕ юратнине ун пуçĕ тĕлне аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсем капланса килсен уйрăмах çивĕччĕн туйрĕ. Çав тискер пĕлĕтсем хăйĕн пуçĕ тĕлĕнче явăннăн туйрĕ хĕр. Следстви епле вĕçленни çинчен Лариса тепĕр кун тăван мар ашшĕнчен пĕлчĕ.

- Халь пĕлетĕн-и ĕнтĕ хăв мĕнлерех йĕкĕтпе туслашнине? - ӳпкелесе илчĕ хĕре Сидор Ксенофонтович.

Хуйха ӳкнĕ Лариса çĕрĕпех куç хупмарĕ. Пуçĕнче шухăш хыççăн шухăш явăнчĕ. Борис хĕре пусмăрлама пултарасси пирки иккĕленĕве вăл хăвăрт сирсе ячĕ. Сăпайлă йĕкĕт ун пек тумастех. Ара, Лариса хăйăр çинче труççи вĕççĕн унпа юнашар миçе хут выртнă! Ашкăнас туртăм пĕрре те

кăтартман йĕкĕт. Чуп тăвасса та хĕр хăй ăна пуçласа чуп тунă. Çавнашкал йĕкĕт ĕçчен хĕр çине алă хума хăйни пушшех иккĕлентерет. Çук, унашкалли пулма пултараймасть. Юрататăп ăна эпĕ, чун-чĕререн саватăп. Тен, çавăнпа ăс-хакăлăм ун пирки мĕн те пулин япăххи шутлама ирĕк памасть. Çавнашкал шухăшсем явăнчĕç хĕр пуçĕнче.

Анчах йĕкĕт çĕçси мĕнле майпа хĕре вĕлернĕ çĕрте тупăннă-ха? Ун ӳчĕ çинчи пӳрне йĕрĕсем тата... Каснă-лартнă тăм писмен эпĕ. Мĕн тесен те Ульянăна вăл вĕлермен. Çук, çуках. Ăна хĕрарăм кирлĕ пулнă тейĕпĕр. Борис лайăх пĕлет: эпĕ ăна паян тесен паянах качча тухма хатĕр. Мĕн тери лайăх çын вăл! Унсăр пуçне урăх никама та качча каймастăп. Епле çăлса хăвармалла ăна кăлăхах айăплассинчен? Айăпсăр çынна тĕрмере нуша кăтартиччен лартчăр пулать мана... Калама кăна çăмăл, ун вырăнне хăв ирĕкӳпе тĕрмене кайса лараймастăн вĕт.

Çапла шухăшласа выртрĕ Лариса çĕрĕпех. Ирхине хĕрĕн куçĕ тăртаннине асăрхасан, Нонна Ардалионовна хулăн тутине мăрт-март тутарчĕ.

- Тупнă пуç ватмалли! Сурса пăрах та манса кай!

Лариса пурпĕр тăван мар амăшĕ сĕннĕ пек тума шутламарĕ. Тумланчĕ те тем шутпа прокуратурăна васкаса кайрĕ.

- Айăпăма йышăнма хам ирĕкпе килтĕм... - пĕлтерчĕ вăл тĕп хуларан таврăнса ĕçе пуçăннă прокурора.

Николай Алексеевич Малинин прокурор çăварне алăк сарлакăш карса пăрахрĕ.

- Эсир Лариса Сидоровна пулатăр вĕт-ха. Хисепе тивĕçлĕ Косолапов хĕрĕ. Халь каникулта пулас-ха. Ларăр, ларăрччĕ. Пĕр-пĕр пуçтах йĕкĕте çупкă çитертĕр-им? Куншăн кама та пулин айăпланине халиччен курманччĕ-ха...

- Йăнăшатăр, прокурор юлташ. Ульяна Герасимовăна автансăр яла ăсатрăм!

Малинин çăварĕ татах та сарлакарах карăлчĕ.

- Ман умра юмах ан ярăр-ха. Ку вĕлерӳ пирки следстви вĕçленнĕ. Кирпĕч завочĕн директорне Кирпичева судченех тĕрмене хупасси пирки хут çырса ларатăп-ха.

- Ан васкăр, ĕлкĕретĕр. Пĕтĕмпех кĕвĕçӳ пирки пулчĕ. Кир-

пичев - эпё савакан йёкёт. Ăна Ульяна манран туртса илесшён тапаçланчё. Ульянпа хёвёшни çитмерё ăна, Бориса çулăхнă...

Малинин çат! тутарчё тăнлавёнчен алă лаппипе:

- Ăнкартăм, ăнкартăм... Эсир савнă каччăра çăлса хăварасшăн, ун вырăнне айăпа хăвăр çине илесшён иккен... Çапах йёркипе каласа парăр-ха: эсир Герасимовăна епле вёлертёр?

- Çын вёлерессиçавăн пек ансат тесе шутламан эпё. Герасимова каçхи сменăран тухса килне таврăнасса пёве хёрринче сыхласа тăтăм. Ăна хыçалтан ярса тытрăм та темиçе тёлтен çёçёпе чикрём...

- Миçе тёлтен?

- Шутламан. Тиртём те тиртём хёр тўнсе кайиччен...

- Çёççине ăçтан тупрăн?

- Ăна директор пўлёмёнчен вăрласа тухрăм...

Прокурор Косолаповăна ыйту хыççăн ыйту пачё. Вăл мён каланине тёплён çырса пычё.

- Акă допрос протоколё. Килёшетёр пулсан - алă пусăр... ак çакăнта... тата çакăнта... - сёнчё Малинин хёре. - Халё кайма пултаратăр.

- Тёрмене-и? Эпё хатёр...

- Халлёхе килёре кайăр. Кайран куç курё...

Лариса тухса кайсанах прокурор райёçтăвком председательне шăнкăравларё.

- Сидор Ксенофонтович, пирён прокуратурăра чăн-чăн камит пырать. Сирён хёрёр айăпне йышăнма килсе тёлёнтерчё. Ăна ёненес-тёк, Герасимова пурнăçне вăл татнă пулса тухать...

- Епле апла? - тёлёнчё пуçлăх. - Ларисăпа Кирпичев пёр-пёрне кăмăллани Хурăнкасшăн вăрттăнлăх мар. Яш-кёрёмрен тем те кётме пулать. Ашшё-амăшё пылчăка кёрсе ан ўктёр тесен, ман шутпа, ёçе суд аллине пама васкамалла мар, следствие малалла тăсмалла.

Кăнттамрах Косолапов кашни сăмаха, парти райкомён пёрремёш секретарё евёр, пуртăпа лачлаттарнă пек касса татса каламасть, çемçереххён, асăрханараххăн, калаçать. Хальхинче вара унăн сассинче хурçă çирёплёхё сисёнчё. Паллах, кăмăлё Кирпичев еннелле çаврăннăран мар, райком бюровё членён

çемйи кăтартуллă пулмаллине асра тытнăран. Председатель сăмахĕсене прокурор çӳлтен панă кăтарту вырăнне йышăнчĕ.

- Ан пăшăрханăр, Сидор Ксенофонтович, следствие малалла тăсассине хам çине илетĕп. Апăрша хĕр виллине тупни çинчен прокуратурăна завод директорĕ хăй пĕлтернĕччĕ. Çакă та шухăшлаттарать...

- Шухăшласа пăхни пăсмасть. Анчах ку вăл тилĕлле йĕр çухатма хӳрепе шăлни мар-ши? - хирĕçлерĕ председатель прокурора. - Апла-и, капла-и, мана хыпарламасăр ĕçе суд аллине ан парăр.

Аслă пуçлăх кабинетĕнче телефон трубкине аппарат çине хуни илтĕнчĕ. Малинин пуçлăхсем хушнине итлеме хăнăхнă. Мĕн тесен те райĕçтăвком председателĕ - район хуçисенчен пĕри. Сăмах та çук, районăн чăн-чăн хуçи, патши - парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, çапах райĕçтăвкомран та мала иртеймĕн.

Лариса айăпа хăй çине илни Кирпичева тĕлĕнтерсех ячĕ. Мĕншĕн унашкал хăтланать таса хĕр? Ĕненмелле-ши вăл айăплă ĕç тăвас çул çине тăнине? Каччă çакăн пирки хĕрпе хăйĕнпе калаçса пăхма шутларĕ.

- Пĕве хĕрринчи пулăмсемпе эсĕ мĕнле те пулин çыхăннине, çапса вĕлертĕрех шăна çип-çинçе тяппипе, эпĕ ĕненместĕп. Мана урăххи кăсăклантарать: мĕншĕн айăпа хăв çине йышăнатăн? Кала тӳррипе, ан пытар тĕрĕссине упăшку пулас çынран...

- Пытармастăп, тĕрĕссине тĕрĕсех калатăп: кĕвĕçме пуçларăм. Ульяна сана манран туртса илесрен сехĕрленсе ӳкрĕм. Хăв пĕлетĕн: кĕвĕçӳ тем те тутарать...

- Ну, юрĕ. Килĕшĕпĕр. Эппин мĕнле вĕлернине йĕркийĕркипе каласа пар.

- Йĕркипе каламалли манăн нимĕн те çук. Тиртĕм те тиртĕм ăна çĕçĕпе...

- Çĕççи еплерехчĕ? Мĕн çырнăччĕ ун аври çине?

- Асăрхаман. Астумастăп.

- Çĕçĕ аври йывăçчĕ-и е тимĕрччĕ-и?

- Ку тата сана мĕн тума кирлĕ? Урăх нимĕнле ыйту çине те хуравламастăп. Эсĕ прокурор мар. Санăн мана допрос тума право çук! Çĕçĕ аври... Çĕçĕ аври тимĕрччĕ.

- Тимĕрччĕ? Мĕн тĕслĕччĕ?

– Паллах, хура. Тимĕр тĕсне те пĕлместĕн-и...

– Э, çук! Манăн çĕçĕ аври шăмăччĕ, тĕксĕм шурăччĕ. Ун çине картса ман хушамата çырнăччĕ... Эппин Герасимовăна вĕлерекенĕ эсĕ мар...

– Эпĕ мар-тăк, кам пултăр-ха! Хам вĕлертĕм. Каларăм, кĕвĕçнĕрен... Юрататăп эпĕ сана, Боря. Сансăр пуçне мана урăх никам та кирлĕ мар!

Лариса ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ. Хĕр пĕлет: Ульянăна Боря вĕлермен. Çав каç вĕсем иккĕшĕ клубра кино курчĕç, ун хыççăн урам тăрăх тул çутăличченех юнашар çÿререç. Заводри рабочисем иккĕмĕш сменăран çĕрле вунпĕр сехетре тухаççĕ. Пĕр хĕр çуменчи йĕкĕт тепĕр хĕре епле вĕлертĕр-ха?

Пусăрăнчăк кăмăлпа, иккĕленÿсене сире-сире, чылайччен пуплесе ларчĕç хĕрпе йĕкĕт.

– Ан кулян, Боря. Тĕрĕслĕх çиеле тухатех. Пуçра юрă шухăшĕ мар. Вăхăчĕ те юрласа лармалли мар. Çапах тăнласам, пĕр юрă юрласа парам.

### *Çул тайлăк мар, хам тайлăк*

Тайлăк, тайлăк, çул тайлăк,
Çул тайлăк мар, хам тайлăк.
Хам та тайлăк пулманччĕ,
Кăмăл темшĕн хуçăлчĕ.
　　Хушса юрламалли:
　　Тайлăк, тайлăк, çул тайлăк,
　　Çул тайлăк мар, хам тайлăк.
　　Хамăн тайлăк пулас мар,
　　Кăлăх намăс курас мар.

Пурнăç çулĕ тумхахлă,
Çапах савсам кăмăлтан.
Пулсам çирĕп, хăватлă,
Телей килет хамăртан.

Шансам хăвăн савнине:
Унăн урăх йĕкĕт çук.
Сан пек ыр кăмăллине
Тĕнчипе те тупас çук.

Куҫа чарса пăхсассăн,
Юрату вăл - ырату.
Чун-чĕререн савсассăн,
Ĕмĕр сӳнмĕ юрату.

Тайлăк, тайлăк, ҫул тайлăк,
Ҫул тайлăк мар, хам тайлăк.
Хамăн тайлăк пулас мар.
Кăлăх намăс курас мар.

Лариса - профессиллĕ юрăҫă мар, артисткăна та вĕренмен, янравлă ҫепĕҫ сассине вара тиркеме ҫуках. Хăй мĕн калас шухăша хĕр пурпĕр йĕкĕт чун-чĕри тĕпне ҫитерчĕ: пуҫна ан ус, эсĕ пĕччен мар. Чăн ĕнтĕ, юрă сăмахĕсем те, кĕвви те савăккисем мар, анчах шанчăк кӳрекеннисем, чĕрене сиплĕ вăй параканнисем.

Хĕрĕн сенкер куҫĕнчен йĕкĕт тинкерсе те тĕсесе пăхать. Кам хушнă-ха ăна пĕр чĕптĕм те айăп ҫук ҫĕртен ӳкĕненҫи туса прокурор патне кайма? Иккĕленмелли ҫук, хĕре никам та унашкал канаш пама пултарайман. Унта вăл чĕри хушнипе кайнă. Мĕн тĕллевпе? Юрату ҫулăмне сӳнме парас мар тесе. Эппин ҫакă ҫутă тĕнчере таса юратуран вăйлăрах хăват ҫук. Ҫын пурнăҫне вăл тытать. Мĕн тăвасси пирки ăс-хакăла ырă канашсем вăл парать. Пĕтĕм тĕнче унпа тытăнса тăрать.

Кирпичев ҫав кунах прокурор патне ҫитрĕ, Косолаповăпа иккĕшĕ хушшинчи калаҫăва тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрĕ. Кунсăр пуҫне, прокурора чăн-чăн преступнике шыраса тупма хистерĕ.

* * *

Малинин прокурор следствие малалла епле тăвасси пирки пуҫ ватса ларатчĕ. Ун патне кирпĕч завочĕн тĕп бухгалтерĕн ҫумĕ Клавдия Петрова пырса кĕчĕ.

- Каҫарăр та, йыхравсăрах килтĕм. Директор ҫĕҫҫи пирки пĕр ик сăмах каламалли пур...

Прокурор куҫ харшийĕ вăртах ҫĕкленчĕ.

- Ларăр-ха, ларăр. Мĕнле ҫĕҫĕ пирки?

- Ара, хамăрăн директорăн Кирпичевăн ҫĕҫҫи пирки. Тĕрĕссипе ҫĕҫĕ пирки те мар, ăна кабинетран кам вăрласа тухни пирки...

Прокурорӑн куҫ харшийӗ татах та ҫӳлерех ҫӗкленчӗ.

- Калӑр, малалла калӑр...

- Ҫӗҫҫе директор кабинетӗнчен вӑрласа тухаканӗ пирӗн тӗп бухгалтер Матвеева... Марина Матвеева тесе шутлатӑп.

- Эсӗ ҫакна хӑвах курнӑ-и?

- Ҫук, курман... Анчах вӑл ку ҫӗҫҫе сумккинчен хӑвӑрт кӑларса Ульян Усманова тыттарнине хам куҫпа куртӑм...

- Чӑнахах-и? Мӗншӗн вара ҫакна паянччenex пӗлтерeймерӗн?

- Каккуй пӗлтерме... Тӗп бухгалтер мана ҫисе яратех ӗнтӗ. Паян та сехӗрленсе кӑна килтӗм...

- Алли кӗске - нимӗн те тӑваймӗ... Хӑв каланине алӑ пусса ҫирӗплетме пултаратӑн-и?

- Калама хӑюлӑх ҫитертӗм-тӗк, алӑ пусассинчен те пӑрӑнмастӑпах...

- Кала пытармасӑр: сан шутпа Герасимовӑна кам вӗлернӗ?

- Каҫарӑр та, кӑна татӑклӑн калаймастӑп. Кам ун хӗрлӗхне туртса илнӗ, вӗлерессе те ҫавах вӗлернӗ ӗнтӗ...

- Эппин Ульян Усманов?

- Пӗлместӗп, пӗлместӗп...

Петрова допрос протоколӗ ҫине алӑ пусса тухса кайсан, прокурор следстви материалӗсене тепӗр хут тӗплӗн вуласа тухрӗ. Пӗве хӗрринчи хӑвалӑхра следователь чӗн пиҫиххи те тупнӑ иккен. Вӑл камӑнне тӗпчесе палӑртман. Чӑнах та, камӑн-ши вӑл? Усмановӑн мар-ши?

Унӑн юлташне Урттем Урмакова чӗнтерчӗ прокурор. Галифе йышши шалпар шӑлаварлӑ услапа тӳрех уҫӑмлӑ ыйту пачӗ:

- Кирпӗч заводӗнче ӗҫленӗ Герасимова вилӗмӗ пирки эсир мӗн пӗлетӗр?

- Ҫакна эпӗ сиртен хӑвӑртан ыйтса пӗлесшӗнччӗ. Район центрӗнче тӗрлӗ халап ҫӳрет: завод директорӗ вӗлернӗ имӗш. Теприсем ку айӑпа Косолапова ҫине йӑвантараҫҫӗ. Каламӑр-ши: чӑннипе хӑшӗ вӗлернӗ?

- Ан васкӑр, ку ыйтӑва суд чиперех татса парӗ. Эсир Ульян Усмановпа питӗ туслӑ теҫҫӗ. Тӗрӗс-и ҫакӑ?

- Мӗн тӗрӗс, ҫавӑ тӗрӗсех ӗнтӗ. Туслӑ пулнӑ темелле. Герасимовӑна пусмӑрлани пирки судлашнӑранпа пирӗн туслӑх ҫине ӗне ури лачӑртаттарса пусрӗ.

- Епле апла?

- Анне чарчĕ. Чылайранпа ĕнтĕ унпа пĕрле çÿреместĕп. Прокурор сĕтел çине чĕн пиçиххи кăларса хучĕ.

- Çак пиçиххие ăçта та пулин курман-и эсир?

Пиçиххин йĕс тăхи çине çурлапа мăлатук ÿкернĕ. Сарлаках мар кĕлеткене тăпăл-тăпăл тытма чĕн çине аптрипе хушма шăтăксем тунă.

Урмаков хĕрелсе те шуралса кайрĕ, пăлханчĕ пулин те тĕрĕссине калама шутларĕ.

- Пĕлетĕп камăнне. Ульян Усмановăн вăл. Ăна Пасаркассинчи Саньккаран укçалла туяннăччĕ. Шĕвĕрккене тăван пиччĕшĕ аслă лейтенант парнелесе хăварнăччĕ. Чĕн çинчи хушма шăтăксене эпĕ шăтарса патăм. Ĕненместĕр пулсан, Саньккаран хăйĕнчен ыйтса пĕлĕр...

Следстви Герасимовăна вĕлерекене шыраса тупрĕ-тупрех. Суд Ульян Усманова вунă çула кирпĕч шутлама ячĕ.

Çуркунне завод территорийĕ тавра çамрăк йывăçсем лартма шут тытрĕ вăхăтлăх директор. Лесничипе калаçса татăлнă хыççăн пĕр канмалли кун рабочисен ушкăнĕ çывăхри вăрманта икĕ-виçĕ çул ÿснĕ хурăн хунавĕсене чава-чава кăларчĕ, теприсем вĕсене шăтăксем чавса икĕ ретпе лартрĕç. Выльăхсем ан кăшлаччăр тесе, лартнă йывăçсем тавра решеткеллĕ картасем тытрĕç. Ĕç-пуç чиперех пыратчĕ, кăнтăрларан вара çумăр йăслама тапратрĕ. Рабочисем пĕр пуçланă ĕçе малаллах тăсрĕç, каç пулнă тĕле лачкам йĕпенчĕç.

- Капла шăнса пăсăлăпăр та ыран ĕçе тухаймăпăр. Кăштах карланкăна урнă ĕне сĕчĕпе чÿхесчĕ, - систерчĕç пуçлăха ар çынсем.

Шур шлепкеллĕ симĕс пуканисене тата çыртмаллине магазинтан тĕп бухгалтер Марина Матвеева хăй туянса килчĕ.

Ытларикун пуçлăх пÿлĕмне тĕп бухгалтер ир-ирех кĕчĕ.

- Свердловскри аппа вилсе кайнă. Укçа парса пулăшмăр-ши? Çĕр аллă тенкĕ кирлĕччĕ те...

Тĕп бухгалтер хăй ыйтать пулсан, епле пулăшмăн-ха. Çапах пуçлăх ыйтса пĕлме шутларĕ:

- Канмалли кун тăкакĕсем енĕпе магазинтан юравлă документ илсе килтĕр-и эсир?

- Вырсарникун çĕр аллă тенкĕ тăкакларăмăр. Çавăн чухлех мана Свердловска кайса килме кирлĕ. Пурĕ виççĕр тенкĕ. Документне çавăн чухлĕ çыртарам-и?

- Малтан документчĕсене çыртарса кил. Унтан аппуна пытарма пĕр эрнелĕхе кайăн, - пуçне сĕлтрĕ Кирпичев, ун-кун шухăшласа тăмасăр.

Заводра рабочисем çителĕксĕр. "Улăп" колхозра лаша усракан пысăк йывăç вите сасартăк çунса кайсан, Кирпичев ку хуçалăхпа килĕшÿ турĕ: колхозниксен пĕр бригади çу каçа заводра ĕçлет, çавăншăн çĕнĕ вите лартмалăх кирпĕч туянать.

Тепĕр чухне телей ура айĕнчех тупăнать иккен. Хусанти финанспа экономика институчĕ çырса панă хутпа Лариса Косолапова студентка икĕ уйăхлăх практикăна килсе çитрĕ. Икĕ çамрăк хушшинчи юрату пачах сӳнмен-мĕн. Иккĕшĕ темиçе хут кинона кайрĕç; алла-аллăн тытăнса, ката вăрмана çитсе курчĕç. Çакна асăрхаса тăруçăн Матвеева тĕп бухгалтер тутине мăкăртрĕ хучĕ. Тĕлĕнмелли çук: çуллана пуçланă хĕр Борис Ларионович çине хăй куç хыватчĕ, пĕррехинче хăюлланса хăй патне хăнана та чĕннĕччĕ.

Ку вăхăтра икĕ çамрăкăн юратăвĕ хĕр ашшĕ-амăшне - Косолаповсене - пăшăрхантармарĕ.

- Борис Лукианович - пултаруллă та пуçаруллă çамрăк. Шанчăк паракан инженер. Унран хамăр çын тума пулать, - шантарчĕ мăшăрне Сидор Ксенофонтович.

Часах вăхăтлăх пуçлăх - врио текенни - çирĕплетнĕ директор пулса тăчĕ.

Студенткăна практикăра пулăшма институтран Хурăнкаса яп-яка тумланнă доцент килчĕ. Практикăна ертсе пыраканĕпе пĕрле Косолапова заводăн кварталти финанс отчетне туса çитерессипе айланчĕ. Пĕр каçхине доцент Косолаповсен çемйинче хăнара пулчĕ. Рига бальзамĕпе хутăштарнă шурă эрех черккисене ӳплентернĕ хыççăн вăл кил хуçисене хăйĕн вăрттăн ĕмĕтне пĕлтерчĕ.

- Сирĕн хĕр питĕ пултаруллă. Кунсăр пуçне, вăл ытармалла мар илемлĕ. Института вĕренме кĕме ăна эпĕ пулăшрăм. Чипер вĕренсе тухсан ăна хамăрăн институтрах аспирантурăра вĕренме хăварăпăр. Каçарăр та, пытармасăрах калам:

пĕрмай ăслăлăхпа кĕрмешме тивнĕренех çаплах авланаймарăм--ха. Эсир хирĕçлемесен сирĕн пата евчĕ яма шухăш пур...

Хăна кайсан Нонна Ардалионовна шарт тутарчĕ аллипе пĕççинчен.

- Акă кам пулмалла пирĕн хĕр упăшки!

Кĕр енне кайсан Хурăнкас тĕлĕнче тачка хура пĕлĕтсем капланса тăма пуçларĕç. Çав вăхăталлах Кирпичев шăпи тĕлне те синкер пĕлĕтсем шуса тухрĕç. Заводăн тĕп бухгалтерĕ Марина Матвеева хăйĕнчен пилĕк çул кĕçĕнрех Урттем Урмакова качча тухрĕ. Питĕ шеп туй турĕç. Туй хыççăн вăхăт нумаях иртмерĕ, парти райкомĕн икĕ инструкторĕ кирпĕч завочĕн директорĕ çинчен такам çырнă пӳрне хулăнăш çăхава тĕрĕслеме тытăнчĕç.

Вĕсем чăн малтанах Кирпичев хысна укçине хăйĕннипе пăтраштара пуçланине палăртрĕç. Акă пĕр тĕслĕх. Завод кассинчен илнĕ виççĕр тенкĕрен çĕр аллăшне çывăх пĕлĕшĕсемпе ĕçсе янă, ыттине хăйĕн кĕсйине чикнĕ. Хут çине вара çав суммăна пĕтĕмпех завод территорийĕ тавра йывăçсем лартнă кун усă курнă пек кăтартнă. Çакăн пирки тĕп бухгалтер ăнлантару хучĕ çырса панă.

Тĕрĕслевçĕсем Нонна Ардалионовна Косолаповăна та ăнлантару хучĕ çыртарнă. Унăн усрав хĕрне хăйĕн аллине çавăрса илес шутпа Кирпичев ултав çулĕ çине тăнă: пулипулми инженер, куç кĕретех суйса, хăйне тухтăр-гинеколог пек кăтартнă, çакна пула хĕре сиплесси вăраха тăсăлнă. Вăл çавнашкал хăтланнине Павел Павлович Павлов тухтăрăн та йышăнма тивнĕ. Инструкторсем ăна партбилетне сĕтел çине кăларса хумалла тăвассипе хăтратнă. Кирпĕч завочĕн директорĕ “Улăп” колхоза та пысăк сăтăр кӳнĕ-мĕн: утă çулас тата тырă вырас колхозниксене, тĕп ĕçрен уйăрса, хăйĕн предприятийĕнче хăшкăлтарнă.

Икĕ эрне чакаланчĕç инструкторсем: пиччĕне тӳнтер май çавăрчĕç, çуккине пур турĕç. Вĕсем хатăрленĕ справкăна райком бюровĕн ларăвĕнче пĕр сăмах сиктерми вуласа пачĕç. Ун хыççăн райкомăн пĕрремĕш секретарĕ сăмах илчĕ:

- Куратпăр ĕнтĕ, Кирпичев коммунист сăн-питне уçăмлăн кăтартакан фактсем чăп тулли. Райком хушăвĕсене тăнланă пул-

сан, вăл халăха хирĕçле ĕçсем тăвасси патне пырса тухмастчех...

Агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕ Фомкин, çутăлса тăракан çамкалласкер, уйрăмах хаярланчĕ:

- ВКП(б) уставĕ тăрăх кашни коммунист хăйĕн киревсĕр ĕçĕсемшĕн явап тытма тивĕçлĕ. Кирпичев хăтланăвĕсем вара киревсĕр çеç мар, хуп-хура пылчăк кăна мар, халăха хирĕç тăни пулса тăраççĕ. Иккĕленме çук, вăл халăх тушманĕ. Эппин ăна парти уставĕпе килĕшӳллĕн явап тыттарни çителĕксĕр, унăн вараланчăк ĕçне-хĕлне патшалăх хăрушсăрлăхĕн виçипе хак пани кирлĕ.

Бюро ларăвĕнче тухса калакансем татах та пулчĕç. Вĕсем те айăпланакан çын ĕçĕ-хĕлĕ парти çулĕ-йĕрĕпе, райком кăтартăвĕсемпе килĕшменнине палăртрĕç, унăн хăлхине "халăх тăшманĕ" сăмахсемпе йӳçĕхтерчĕç. Кĕскен каласан, тӳрĕ кăмăллă айăпсăр çын çине мăшкăлтăк шывĕ тăкрĕç.

Бюро членĕ, "Улăп" колхоз председателĕ Яснов, симĕс пустав çивитиллĕ вăрăм сĕтел хушшинче чăтăмсăррăн та хăюллăн ура çине тăчĕ.

- Çиле хирĕç сурма хушман ваттисем. Сурчăк хăвăн çине сирпĕнме пултарать. Çапах чĕлхе вĕçĕнчи сăмаха каламаллах. Пушар хыççăн лашасем валли çĕнĕ стандартлă кирпĕч вите тума пире Кирпичев пулăшрĕ. Малтанхинчен те пысăкрах туса лартрăмăр. Çапла вара кирпĕч завочĕн директорĕ "Улăпа" сиен мар, усă кӳчĕ. Колхозниксем ун заводĕнче икĕ ен тунă официаллă килĕшӳ тăрăх ĕçлерĕç. Факта апла та, капла та çавăркалама пулать. Унашкал хăтланупа килĕшессĕм çук...

- Тăхтăр-ха, - пӳлчĕ Яснова бюро ларăвне ертсе пыраканĕ. - Тырă вырса пуçтарассине эсир мĕн пирки вăрах тăсса ятăр? Хатĕрлев пунктне тырă леçес вырăнне мĕншĕн кирпĕч турттартăр?

Ыйту хыççăн ыйту. Яснова хăвăрт пăккин турĕç. Айăпланакана хӳтĕлесе калакан урăх тупăнмарĕ. Ун хутне кĕме май çук, парти райкомне хирĕç пырать тесе айăплаççĕ. Халăх тăшманне пулăшаканĕ туса хума та пултараççĕ.

Кирпичева юлашки сăмах калама та чарасшăнччĕ, çакна Яснов татăклăн хирĕçлерĕ. Айăпланакана сăмах памах тиврĕ.

- Кунта ман пирки хăшĕ-пĕри кăлăхах шăл йĕрчĕ. Ĕненĕр,

шанăр: парти çул-йĕрĕ тĕрĕсех тесе шутлатăп. Эпĕ халиччен халăх тăшманĕ пулман, пулассăм та çук. Пытармасăр калам: партие шанатăп, анчах райкомри уйрăм пуçлăхсене шанма пăрахрăм. Çавсем мана хăйсен урапи çине ларманшăн, вĕсен юррине юрламаншăн тапăнаççĕ...

- Çитет... çитет... Йăлăхтарчĕ пире Кирпичев хăйне тӳрре кăларасшăн тапăçни! - кăшкăрса ячĕ пĕри.

Борис Ларионович ун çинелле хаяррăн пăхса илчĕ те сăмахне çапла вĕçлерĕ:

- Çирĕм тăвата çула çитрĕм. Пĕртен-пĕр ĕмĕтĕм - таса чунлă чăн-чăн коммунист пуласси. Бюро членĕсене тархаслатăп, тилмĕретĕп: мана парти ретĕнче юлма ирĕк парăр. Эхер кăларатăрах пулсан, райком ертӳçисем, парти билетне сирĕн таса мар аллăра памастăп, ăна хамрах хăваратăп.

Райком бюровĕ Кирпичева партирен кăларма, директор ĕçĕнчен хăтарма йышăнчĕ. Бюро членĕсенчен пĕри сасăламасăр тытăнса юлчĕ. Ку вăл Яснов пулчĕ.

Борисран райком бюровĕ ларăвĕн постановленийĕ çинчен пĕлсен, Лариса йĕкĕт шăпи пирки тăван мар ашшĕпе хĕрсе кайсах тавлашрĕ, унпа хирĕçсе кайрĕ. Усрав хĕр Кирпичева кăлăхах айăплани пирки пĕртте иккĕленмест иккен.

- Мана нимĕнле доцент та кирлĕ мар. Борис Ларионовичсăр пуçне эпĕ никама та качча каймастăп! - алăка шалт хупса тухрĕ хĕр ашшĕн пӳлĕмĕнчен.

Ĕç мĕн тери шала кĕрессе Лариса ун чухне чухлайман-ха. "Халăх тăшманне", Кирпичева, тепĕр кунах тĕрмене хупрĕç.

НКВД çыннисем Борис Ларионович килне çĕрле пырса кĕчĕç. Пĕтĕм çурта кутăн-пуçăн çаврăнчĕç, ухтарман кĕтес хăвармарĕç. Амăшĕ упракан Библие, ашшĕ юратса вуланă Есенинпа Бунин кĕнекисене хăйсемпе пĕрле илсе кайрĕç. Тĕрмере йĕкĕте икĕ хут нарлă камерăна тĕртсе кĕртрĕç. Нар хăмисене саваламан. Вĕсем çинче тусан вĕçтерекен улăм тӳшексем. Усал сывлăш кăкăра пӳлет. Нар çинче вырăн çитменрен йĕкĕт хăйĕн пек телейсĕррисемпе пĕрле урайĕнчех сĕнксе çĕр каçрĕ.

- Ара, ку кирпĕч завочĕн директорĕ-çке. Халех ăна камерăри Ыр кăмăллăх эртелĕн членне илес. Кĕмелли тӳлев - икĕ çур литрлăх! - хăлаçланса пырса тăчĕ ирех ун умне урлă

уралла пĕр услап. Унпа юнашар çавра янахлă тепĕр кĕрĕс-мерĕс тăсланчăк.

- Унăн джемперĕ хўхĕмскер. Ик пулштух хакне тăрать те пулĕ. Члена кĕме унпа тўлетĕр, - сĕнчĕ çакскер.

- Паха сĕнў, вырăнлă сĕнў. Директор юлташ, хăвăрах хывăр-ха джемперăра! - хушрĕ урлă уралли.

Камерăри çĕнĕ çыннăн ирĕксĕрех ура çине тăмалла пулчĕ. Çийĕнчи çăм джемпера ăна çуралнă кун ячĕпе чун çути Лариса парнеленĕ. Хĕр парнине ют алла париччен çуралса ўсес те мар.

- Эпĕ чăнах та Кирпичев пулатăп, - йышăнчĕ вăл хăй камне. - Мана ан тĕкĕнĕр, аякалла сирĕлĕр. Пуç сирĕнсĕрех çурăлса тухасла ыратать...

- Эхе, директор кунти йĕркесене хисепе хурасшăн мар апла... Эй, Мĕкĕте, тăрлавсăра вĕрентсе илер-ха. Антăр пĕлĕт ишĕлсе!

Кирпичев хăй вырăнне вырнаçса ларчĕ кăна - пуçĕ çине иккĕмĕш хутри нар хăмисем, улăм тўшексем йăтăнса анчĕç. Вăл хальхинче хăвăрт сиксе тăчĕ, урлă ураллине кăкăртан ярса илчĕ, стена çумне хĕстерсе хучĕ.

- Ыр кăмăллăх эртелне малтан сана хăвна явăçтарам-ха. Халех, йĕксĕк, пулштук туянмалăх кăларса хур!

Çавра янахлă кĕрĕс-мерĕс кĕçех камерăн тепĕр кĕтесси-не кайса йăпшăнчĕ. Шăлне шатăртаттарчĕ пулин те, урлă ура парăнчĕ.

Камерăра директор çумне çулăхакан урăх пулмарĕ, анчах çакăн хыççăн та ăна канăçлăх пўрмен. Допрос хыç-çăн допрос тума тапратрĕç. Виççĕмĕш хут допрос тунă хыççăн ăна камерăна сĕтĕрсе килсе пăрахрĕç. Допрос протоколĕ çине алă пусма хушса, следователь ăна тискеррĕн хĕнерĕ. Кăвакартман вырăн хăвармарĕ. Ара, аллисене çыхсан, çынна тем те тума пулать. Кирпичев пурпĕр хăй-не халăх тăшманĕ тесе йышăнмарĕ, допрос протоколĕ çине алă пусмарĕ.

Следстви самаях вăраха тăсăлчĕ. Ăна иккĕн тан допрос турĕç - пĕрин хыççăн тепри е иккĕшĕ пĕрле. Кашни вак-тĕ-векпе чăкăлташрĕç, айăпламалли йĕр шырарĕç. НКВД ку енĕпе аптрасах каймасть. Çынни кăна пултăр - ăна мĕншĕн айăпламалли тупăнать. Следовательсем "халăх тăшманĕ"

блокнотӗнче акă мӗнле йӗркесем асăрханă: “Пуçлăхшăн чи кирли - пуканӗ çинче çирӗп ларасси. Производство нуши, урăх çын шăпи уншăн пӗлтӗрхи юр тӗшне те тăмасть.”

- Эппин эсӗ партипе правительство пирки çапла шутлатăн? - тирӗнчӗç следовательсем хăйсен аллинчи çын çине.

- Тăхтăр-ха, ăнланăр: партипе правительство пуçӗнче çулпуççем тăраççӗ, кунта вырăнти пуçлăхсем çинчен калана. Вӗсем мана çӗнӗ полуторка туянма пулăшмарӗç... Тем ан çырăрах.

Следовательсем ӳкӗте кӗмеççӗ: допрос протоколӗнче “Кирпичев - партипе правительствăна хирӗçле шухăш çын” тесе çырса хучӗç. Айăпламалли сăлтавсем шырасси шалтан шала кӗме пуçларӗ. Кассан - турпас тухать, шырасан - суккăр та ура айӗнченех йӗп тупать. Следовательсен шучӗпе, Кирпичевăн коллектива ертсе пырас пултарулăх çук. Вăл директора ларсан кӗске хушăрах завод инкек хыççăн синкек курать: ӗç укçи парас сумма сейфран таçта хăямата çухалать, хӗрсене ирӗксӗрлеççӗ, коммунизмла ӗç ударникне çӗçӗпе чиксе вӗлереççӗ, сушилка çивӗттийӗн пӗр кӗтесси ишӗлсе анать... Паллă: çав инкексем предприяти çине пуçлăх тимсӗрлӗхне пула йăтăнса аннă. Тӗплӗнрех шутласан, вӗсене халăх хуçалăхне сиен кӳрес шутпа та тума пултарнă.

Тепӗр эрнерен “тройка” халăх тăшманне Кирпичева Çӗпӗре вунă çула ямалла тăвать. Çыру çӳретмелли правасăр. Нимӗн те тăваймăн. Юрать-ха персе пăрахмалла туман.

Лариса Косолапова хăй чунтан юратакан пӗртен-пӗр йӗкӗте инçе çула ăсатса яма та пултараймарӗ. Ăна тӗрмери çынпа çыхăнма чарчӗç. Çав вăхăтра хӗрӗн пӗр кун та куççульсӗр иртмерӗ. Вăл усрава илнӗ ашшӗ-амăшӗ патне Хусантан килсе çӳреме пăрахрӗ. Хăйсен институтӗнчех техничкăна кӗчӗ. Çӗрле ӗçлерӗ, кăнтăрла вӗренчӗ.

Тăван çӗршыв аслă вăрçи тапрансан, Борис Кирпичев аристан пуçлăхӗсенчен хăйне фронта яма ыйтрӗ. Çук, нимле хурав та пулмарӗ. Каярахпа та ыйту хучӗ хыççăн ыйту хучӗ çырчӗ. Нумай-нумай кӗтсен тин штрафбата çакланчӗ.

Çар чаçӗнчен кирек кам патне те çыру яма юрать-мӗн. Пӗрремӗш çыру Кирпичев кунтан Лариса Косолапова патне

ячĕ. Юратнă хĕр çаплах ун асĕнчен тухмасть, хитре сăнĕ куç умĕнчех мĕкĕлтетет. Хурав килменнипе Борис пусăрăнчăк çӳрерĕ. Иккĕмĕш çырăвĕ те хуравсăр юлчĕ, çавăнпа вăл сĕлкĕшленсех кайрĕ. Хуйхине штрафник замполита пĕлтерчĕ. Лешĕ ним каламасăр пуçне кăна сулчĕ. Унтанпа икĕ эрне иртрĕ. “Замполит ман çинчен манса кайнă пуль. Унăн шухăшламалли мансăрах пуç тулли...” - пăшăрханма пуçларĕ Борис.

Замполит взвода хăй килчĕ. Лариса Косолапова комсомолка çинчен Хурăнкас ВЛКСМ райкомĕ йĕкĕте тивĕçтерекен кĕске хурав ярса панă иккен. Унта хĕр ăçта ĕçленине пĕлтернĕ. Çав конвертрах Ларисăн хитре почеркĕпе çырнă çырăвĕ те пур иккен.

“Борис! Боря! Эсĕ мана манса кайманни çав тери тĕлĕнтерчĕ, çав тери савăнтарчĕ. Косолаповсен çемйипе çыхăну йăлтах татрăм. Сăлтавне хăв тавçăр.

Диплом илнĕ кун Хусана “Улăп” председателĕ Яснов пырса çитрĕ. Колхозра бухгалтерта ĕçлеме хăйпе пĕрле лартса таврăнчĕ. Вăл сана хĕрӳллĕ салам ярать.

Эпĕ урăххине юратас пирки ан иккĕлен. Пĕр енчен, авланас ар çынсем пурте вăрçăра халь. Тепĕр сăлтавне хăв тавçăр.

Санăн аннӳ мана кашни кĕмессерен çав тери савса кĕтсе илет. Сывлăхĕ чиперех, шкулта учительницăра ĕçлеме пăрахман-ха. Ывăлĕ хăçан та пулин таврăнасса, кин кĕртессе шанать.

Чуп тăватăп.

Салампа Лариса”.

Ку çырăва Кирпичев пĕр хут та, икĕ хут та вуларĕ. Замполита та вулаттарчĕ. Ăна чунтан тав турĕ, çав кунах Ларисăна хăй çинчен тĕплĕн çырса пĕлтерчĕ, эсрел çулса пăрахмасан иккĕшĕ курнăçасса та, пĕрлешессе те шантарчĕ.

Мĕн тери паха вăл пĕр-пĕрне асра тытни, чун-чĕрепе ăнланни! Унашкалли темле йывăрлăхра та çăмăллăх кӳрет. Кирпичев сержанта ун амăшĕ патне хĕр халиччен кĕрсе çӳрени уйрăмах килĕшрĕ. Тĕлĕнмелли те çук: шăпа пӳрнĕ-тĕк вата енне кайнă учительница ырă кăмăллă хĕрĕн пăянамĕ пулма пултарать вĕт.

Каларăм-иç, шăтнă курăк чул хушшинче те ӳсет. Чăн-чăн юрату та, мĕнпур чăрмавсене сирсе, хăй валли тивĕçлĕ çул уçать.

# ТУПМАЛЛИ

Юратусăр телей çук ........................................................3
Кашкăр вăрманаллах пăхать ...............................................41
Шăтнă курăк ӳсетех ..........................................................48

**Тенюшев**
**Иван Яковлевич**

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК
# БЕЗ ЛЮБВИ СЧАСТЬЯ НЕТ

***Выбранные главы из второй книги романа***
***"Их оставалось только трое"***

Редактор **А.П.Данилов**
Дизайн-верстка: **А.А.Данилов**
Иллюстрации **Дениса Речкина**

На чувашском языке

Изд. лиц. ЛР № 020279 от 14.01.97.

Книга подготовлена к печати на факультете журналистики
Чувашского государственного университета

Подписано в печать 15.06.2000 г.
Формат 60х84/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Journal CHV. Оперативная печать.
Уч.-изд.л.4.0. Усл. печ. л. 4,25.
Тираж 1000 экз. Заказ № 107.

Издательство Чувашского госуниверситета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15.

10=00